чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН

2014, çурла /август/

16

159-160 /26565-26566/ № №

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru

Тĕп хула ырлăхĕшĕн тăрăшакансене – чыс та мухтав!

cap.ru сайтĕнчи сăн укерчĕк

Шупашкарăн хаклă çыннисемпе хăнисем!

Сире Хула кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Чăваш Енĕн тĕп хули çулран çул ўсет, аталанать, çав вăхăтрах хăйне евĕрлĕхне упраса хăварма мехел çитерет. Паянхи Шупашкар – республика мухтавĕ, хăватлă индустри центрĕ, Раççейри чи хăтлă хуласенчен пĕри, пуян культурăллă, çирĕп йăла-йĕркеллĕ.

Хула çыннисен пурнăç шайне ўстерме пулăшакан программăсем ăнăçлă пурнăçланаççĕ. Юлашки виçĕ çулта нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсенчен çурри ытла пайне, вĕсен таврашĕнчи çул-йĕре тĕпрен юсанă, виçĕ çултан аслăрах ачасем садике вырнаçма черет кĕтмеççĕ, транспорт инфратытăмĕ улшăнса лайăхланчĕ, çурт-йĕр строительстви хăвăртланчĕ. Социаллă пĕлтерĕшлĕ объектсем хута каяççĕ, çак шутра нумай функциллĕ, çичĕ пин вырăнлă Пăр керменĕ. Кунта çавăн пекех спорт тата культура мероприятийĕсене ирттерме, маунтинбайк, биатлон тата ухăран перес енĕпе олимп чемпионĕсене хатĕрлекен центр йĕркелеме палăртнă.

Шупашкар çыннисем пĕтĕм çĕр-шыва тĕслĕх кăтартаççĕ: сывă пурнăç йĕркине тытса пыраççĕ, спортпа туслашаççĕ, пĕр-пĕрне сывлăха çирĕплетме хавхалантараççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ республикăн тĕп хулинче 2014 çулхи юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум ирттерме палăртнă. Шупашкар çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери ăмăртусене – çăмăл атлетика енĕпе Европăн команда чемпионатне тата хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокне – ирттерме ирĕк çĕнсе илчĕ.

Тăван Шупашкара чунтан юратакансене тата унăн аталанăвне тўпе хывакансене чĕререн тав тăватăп, çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, юрату сунатăп!

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкар хула кунĕ умĕн республикăн тĕп хулин пултаруллă ĕçченĕсене патшалăх градисемпе чысларĕ. Михаил Васильевич вĕсене пысăк ăсталăхĕшĕн, тухăçлă ĕçĕшĕн, хăйсем суйланă профессие, тăван çĕр-шыва юратнăшăн тав турĕ.

"Шупашкарăн мĕн пур çитĕнĕвĕнче сирĕн тўпе те пур. Паянхи уяв малашне те ĕçре пысăк ўсĕмсем тума хавхалантартăр. Пĕрлехи вăйпа Чăваш Республикин тĕп хулине тата та хитрелетĕпĕр, аталантарăпăр", – терĕ республика Пуçлăхĕ.

Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, 5-мĕш гимнази директорĕ Инна Исаева тав сăмахĕнче çак награда республика влаçĕн, хула администрацийĕн тата вĕрентў тытăмĕн ĕçченĕсен пĕрлехи тухăçлă ĕçĕн кăтартăвĕ пулнине палăртрĕ.

Пысăк чыса тивĕçнисем хăйсене шаннăшăн тата вĕсен ĕçне пысăка хунăшăн республика Пуçлăхне тав турĕç, Шупашкар тата тăван Чăваш Ен ырлăхĕшĕн малашне те тăрăшса ĕçлеме шантарчĕç.

И.СЕРГЕЕВА

Граждансене йышăнаççĕ

Роспотребнадзорăн Чăваш Енри управленийĕ РФ Президенчĕн Чăваш Республикинчи йышăну пўлĕмĕнче 2014 çулхи çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче Роскомнадзорăн Чăваш Енри управленийĕн представителĕсемпе тата операторĕсемпе пĕрле çыхăну пулăшăвĕ кўнĕ чухне граждансене потребитель прависен хўтĕлевĕпе тивĕçтерес ыйтусемпе йышăнать.

Граждансем хăйсен ыйтăвĕсемпе 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен çак адреспа пыма пултараççĕ: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 36 çурт /патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕ кўрекен нумай функциллĕ центр çурчĕ/.

Маларах çыхăнмалли телефон номерĕсем: /8352/ 62-22-33, 62-22-55.

Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен «Хыпар» Издательство çурчĕн хаçачĕсене 2015 çулăн I çурри валли республикăри почта уйрăмĕсенче йўнĕрех хакпа çырăнтараççĕ.

"Хыпар" – 732-66 тенкĕ, "Хыпар"-шăмат кун – 304-08 тенкĕ.

Лару

Вăрă явап тытма тивĕç

Ĕнер Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи коррупцие хирĕç тăрас енĕпе ĕçлекен координаци канашĕн ларăвне ирттерччĕ. Хальхинче пăхса тухнă тĕп ыйту пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче коррупци преступлениййĕсене тупса палăртас, çавăн йышшисенчен сыхланас тата айăплисене явап тыттарас тĕлĕшпе пурнăçлакан ĕç-хĕле сӳтсе явни пулчĕ.

сар.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕк

«Ку тытăмра утăм хыççăн утăм, тапхăрăн-тапхăрăн йĕрке туса пыратпăр, – палăртрĕ Михаил Васильевич ларăва уçнă май. – Анчах хăш-пĕр муниципалитетра, шел те, ыйтусем сиксе тухаççĕха. Управляющи компанисене сăнаса тăрассине вăйлатмалла. Укçа пухакан компани чылай, анчах унпа мĕнле усă курнине халăха пĕлтерекен сахал. «Çынсен çав нухрата хăйсен тытса тăмалла», – тесе час-часах калатпăр. Анчах хальлĕхе халăх çак ĕç-хĕле пурнăçлама хатĕр мар».

Вăл е ку тытăмра коррупци преступлениййĕсене тупса палăртасси – республикăри мĕн пур право хуралĕн тĕп тивĕçĕсенчен пĕри. ШЕМ ертӳçи Сергей Семенов калана тăрăх – министерство тĕпрен илсен бюджет укçине вăрланă е тĕллевсĕр усă курнă тĕслĕхсене, авари хăрушсăрлăхĕ кăларса тăратакан çурт-ран куçарнă чухне йĕркене пăснине, управляющи компанисен, ЖКХ тытăмĕнчи ытти организаци ĕçченĕсен киревсĕр ĕçĕсене тупса палăртас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кăçалхи çичĕ уйăхра çакăн йышши 47 преступление шута илнĕ. Саккуна пăсакансен айăпĕпе пулнă пĕтĕмĕшле тăкак – 11 млн тенкĕ ытла.

ЧР прокурорĕ Владимир Метелин калана тăрăх – мĕн пур предприяти-организацире коррупцие хирĕçле мероприятисем ирттереççĕ. Патшалăха пăхăнса тăраканнисенче çак ĕç-хĕле уйрăмах вăйлатмаллине палăртрĕ.

ЧР Строймин ертӳçи Олег Марков Патшалăхăн çурт-йĕр программисене пурнăçланă чухне саккуна пăсас хăрушлăх ытларахчине шута илсе антикоррупци мероприятийĕсене ытларах йĕркелеме тăрăшнине пĕлтерчĕ. «Программăсене пурнăçа кĕртессишĕн явапла орган пулнине шута хурса вырăна тухса тĕрĕслевсем ирттеретпĕр, – терĕ вăл. – Прокуратурăпа, ШЕМпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр, бюджет-ран уйăрнă укçа-тенкĕпе çыхăннă информаци, пысăк парăмлă организацисем пирки вĕсене пĕлтерсех тăратпăр».

ЖКХ тытăмĕнче кăткăс лару-тăрăва кĕрсе ӳкнисем те çук мар иккен республикăра. Акă, сăмахран, Коммуналлă технологисен парăмĕ 600 млн тенке яхăн. Малашне унпа мĕн пулассипе кăсăкланчĕ республика Пуçлăхĕ. Олег Марков министр компани финанс лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшакан план хатĕрленине пĕлтерчĕ. Çавна май хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков вĕсен ĕç-хĕлĕ лайăх енне улшăнассине шаннине палăртрĕ. ТКГ-5 йывăрлăхран тухмалли çул-йĕре «тӳрĕ тӳлев» системи çине куçнинче курать.

Тепĕр «çăпан» – Çĕнĕ Шупашкарти «Новэк» УК. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев спутник-хулара пулнă чухне халăх каллех çак компанипе çыхăннă йывăр каласăва пуçарнă. Михаил Васильевич унтанпа ку тĕлĕшпе мĕнле улшăну пулни пирки пĕлесшĕн пулчĕ. Хула администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Сироткин татăклă хурав параймарĕ пулин те «çитес ăшă сезонне «Новэксăр» кĕтсе илессе» шаннине пĕлтерчĕ.

Çĕмĕрле хулинче те республика Пуçлăхне çырлахтарман самант нумай. Кунта ЖКХ тытăмĕ вун-вун ыйту çуратать. «Хам куçпа хам куртăм: ăшă пăрăхĕсем çап-çара, вĕсене нимĕнпе те чĕркемен, нимĕнпе те хӳтĕлемен. Хула пысăк мар. Кунта темиçе уйăхра йĕрке тума пулать», – терĕ вăл. Администраци пуçлăхĕн пуканне нумаях пулмасть çĕнĕ çын йышăннине палăртса та çапла каларĕ ахăртнех. Çĕмĕрле хулин ЖКХ тытăмĕнче кăткăс лару-тăру пулнине хула пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Елена Туличева та пытармарĕ. Ку енĕпе ĕçлеме пуçланине палăртрĕ: «ТСЖсемпе управляющи компанисенче çирĕплетнĕ йĕркепе канашлусем ирттеретпĕр, халăх хушшинче ăнлантару ĕç-хĕлĕ пырать». Михаил Васильевич Çĕмĕрле хулинче çирĕпленнĕ япăх лару-тăрушăн явапла çын ятне те асăнчĕ, ăна мĕнле майпа явап тыттарнипе кăсăкланчĕ. «Дисциплина тĕлĕшĕнчен асăрхаттарнă» хурав ăна çырлахтарманни сисĕнчĕ. «Капла майпа ĕçлесен нихăçан та йĕрке тăваймăпăр. Вăрлама хăнăхнă çын татах та вăрлать. Асăрхăр: пĕлсе вăрлать», – тесе çирĕппĕн асăрхаттарчĕ.

Йĕрке хуралĕн органĕсем коррупционерсене тупса палăртас тĕлĕшпе çеç ĕçлемеççĕ. Халăх пурлăхне хапсăнакансене явап тыттарассине те асрах тытаççĕ. Александр Мигушов калана тăрăх – РФ Следстви комитечĕн ЧР следстви управлениййĕ кăçал çакăн йышши 207 преступлени çинчен пĕлтернине йышăннă. Вĕсенчен 167-шĕн тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Айăпланнисен 10 млн ытла тенкĕлĕх пурлăхне арестленĕ. Тĕп следователь ку хисепсем пĕлтĕрхинчен чылай сахалраххине пĕлтерет. Çакă следстви органĕсем япăх ĕçленипе çыхăннă пулăм мар. Профилактика мероприятийĕсен ырă витĕмĕ пуррине кăтартаканскер. Шалти ĕçсен министерстви те вăрланă пурлăха тупса палăртса арестлес енĕпе курăмлă ĕçлет. Сергей Семенов министр калана тăрăх – саккунсăр майпа хăйсен туса хунă 209 млн тенкĕрен 200 ытла млн тенкине каялла тавăрма пултарнă.

«Вăрланипе кăна мар çав, явап та тытма тивет, – палăртрĕ республика Пуçлăхĕ. – Çакă кăшт та пулин хăратма тивĕç».

Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕ Чăваш Еншĕн çĕнĕлĕх мар. Хăнăхнă пулăм темелле. Анчах ку тытăмра та коррупци «тымар яма пултарасси» хăратать. «Кăçал республикăра ППЭ тивĕçлĕ шайра иртрĕ, – палăртрĕ Михаил Васильевич ларăвăн виççĕмĕш ыйтăвне хускатнă май. – Ачасем никам пулăшмасăр, хăйсен пĕлĕвне, вăйне шанса экзамен тытрĕç. Унăн кăтартăвĕсем пĕлтĕрхинчен пĕчĕкрех пулчĕç. Апла пулин те Раççей Федерацийĕн чи лайăх регионĕсен йышне кĕме пултартăмăр».

ППЭ вăхăтĕнче коррупци ĕçхĕлĕ вăй илесрен сыхланса кăçал хушма мерăсем йышăннине палăртрĕ вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов. «Çак тапхăрта Шалти ĕçсен министерствипе пĕр чĕлхе тупса ăнăçлă ĕçлерĕмĕр, – терĕ вăл. – Чăваш Енре экзамен йышăнакан вырăнсенче иккĕмĕш çул видеосăнав системи ĕçлет. Ачасем шар ан курччăр тесе тăрăшатпăр. Кăçалхи çĕнĕлĕх – Чăваш Республикин экзамен ĕçĕсене урăх субъект представителĕсем тĕрĕслерĕç. Эпир – вĕсенне. Экзамен материалĕсем Интернета лекесрен сыхланма пултартăмăр».

Çапах та пĕтĕмпех пĕр тикĕс иртнĕ теме çук. ППЭ вăхăтĕнче саккуна пăснă темиçе тĕслĕхпе адмĕç пуçарнă. Карас телефонĕпе усă куракансем йышлине, çавна май экзаменсен вăхăтĕнче çыхăнăва татма мерăсем йышăнмаллине, патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене лăпкă, уçăмлă, кăлтăксăр ирттерме 9-мĕш класс экзаменĕсене тытнă самантранах хатĕрленме пуçламаллине палăртрĕ министр. Республика Пуçлăхĕ çак ыйтусене педагогсен çурла уйăхĕнчи конференциййĕнче çĕклеме сĕнчĕ. Республика шайĕнчине çурлан 21-мĕшĕнче ирттерме палăртнă. Ун хыççăн педагогсем хăйсен районĕсенче пухăнса канашлĕç.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

«Стрижсемпе» паллашрĕç

Çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарти аэропортра «Стрижи» пилотаж ушкăнĕпе тĕл пулу иртрĕ. Унта Шупашкарти ача-пăча кану лагерĕсенчен тата шкулсенчен ачасем пулчĕç. Вĕсем вĕçмелли аппаратсемпе паллашрĕç, МИГ-29 истребитель кабинине кĕрсе курчĕç. Тĕл пулăва ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç.

– Шупашкарăн 545 çулхи юбилейне «Стрижи» пилотаж ушкăнĕ килни – пысăк парне, истори пулăмĕ. Летчиксем республикăра пурăнакансене Раççейĕн хăватне кăтартĕç. Ку ушкăна курсан чăваш çамрăкĕсем тăван ене тата хытăрах хисеплеме вĕренĕç, вĕçев кашни çынра патриотлăх туйăмне вăйлатĕ. Андриян Николаев космонавт летчика çулсерен чыслатпăр. Паянхи мероприятие вара республикăн чи маттур ачисем хутшăнма пултарчĕç. Сирĕнтен нумайăшĕн хĕрӳллĕ кăмăл-туйăм пуласса пĕлсех тăратпăр, – терĕ Михаил Васильевич.

«Стрижсем» çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче 13 сехетре кăсăклă шоу кăтартĕç. Вĕсене илсе килме Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей оборона министрĕпе Сергей Шойгупа килĕшӳ тунă. Ушкăнра – пилĕк МИГ-29, пĕр ИЛ-76 самолет, 11 пилот тата 32 механик. Хăнасем Шупашкарта çурлан 19-мĕшĕчченех пулĕç. Аэропортра çамрăксем валли экскурси ирттерĕç.

– Шупашкара тулли кăмăлпа вĕçсе килтĕмĕр. Уявра 200-тен пуçласа 1600 метр çӳллĕшре чи кăткăс та çĕнĕ трюксем кăтартăпăр: спиральсем, «Нестеров йăлмакĕ», «тюльпан», «пичке» тата ытти, – каласа пачĕ пилотсен ушкăнĕн ертӳçи Сергей Осяйкин.

«Стрижсен» ушкăнĕ кăçал 23 çул тултарать. Çак вăхăтра вĕсем тĕнчери тĕрлĕ авиашоура пулнă. Тĕслĕхрен, çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Севастополь шоу кăтартнă.

■ **Алена АЛТУХОВА**

Чăваш хĕрĕн – «ылтăн»

Çăмăл атлетсен Цюрихра иртекен Европа чемпионатĕнче çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче çӳллĕшне шăчăпа сиксе ылтăн медаль çĕнсе илнĕ Анжелика Сидоровăна Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пысăк çĕнтерӳпе саламланă.

Мускавшăн тата Чăваш Еншĕн тупăшакан Анжелика Сидорова – шăчăпа сиксе 4,65 м çӳллĕшне парăнтарнă пĕртен-пĕр спортсменка. Иккĕмĕш вырăнта – Греци хĕрĕ /кăтартăвĕ 4,6 м/ Екатерини Стефаниди, виççĕмĕшĕнче – çак кăтартупах Раççей спортсменки Ангелина Жук-Краснова.

Ăмăртусен виççĕмĕш кунĕнче Раççей çăмăл атлечĕсен пĕрлештернĕ команди пĕтĕмĕшле зачетпа 3-мĕш вырăна тухнă. Çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче 50 çухрăма хăвăрт утса Чăваш Енĕн тепĕр спортсменĕ Александр Яргунькин тупăшнă.

■ **Ю.ПЕТРОВ**

Чăваш Ен – Кăркăс Республики: туслăх çирĕпленет

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Кăркăс Республикин Раççей Федерацийĕнчи Чрезвычайлă тата полномочиллĕ посолĕпе Болот Джунусовпа тĕл пулнă. Ĕçлĕ калаçăва Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов тата ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан Инна Антонова хутшăннă.

Михаил Игнатьев Чăваш Енпе Кăркăсстана тахçантанпах экономикăн çирĕп çыхăнăвĕ пĕтĕçтернине, республикăри предприятисен продукцине НППП тытăмĕнчи патшалăха нумай ăсатнипе тавар çаврăнăш çулсерен ӳссе пынине, малашне экономика çыхăнăвĕсем кăна мар, икĕ республика хушшинчи культура çыхăнăвĕ те аталанасса çирĕп шаннине пĕлтернĕ.

Болот Джунусов посол Кăркăсстан Раççейпе электроэнергетика, газ тата ытти отрасльти çыхăнăва анлăлатас тĕллевлине палăртнă. Вăл Шупашкарти икĕ предприятипе паллашнине каланă, вĕсен вăй-хăватне пысăк хак панă. Сăмахран, «Акконд» АУО продукцине Кăркăсстанра кăмăлласа туянаççĕ, «Чăвашкабель» АУО продукцийĕ кӳршĕ çĕр-шыври энергипе тивĕçтерекен организацисене кăсăклантарма пултарĕ. Б.Джунусов М.Игнатьева Кăркăс Республикин Президенчĕн А.Атамбаевăн Кăркăсстана чĕннĕ йыхравне панă. М.Игнатьев Чрезвычайлă тата полномочиллĕ посола юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕччен çăмлатмалла. Сăмах кунта пĕлтерĕшлĕ икĕ проекта пурнăçа кĕртесси пирки пырать. Пĕрремĕшĕ хевтесĕр ачасене юрăхлă хутлăхпа тивĕçтерессипе – кĕрсе тухмалли, усă курмалли вырăнсем туса панисĕр пуçне япăх куракан тата илтекен ачасем валли ыттисемпе тан пĕлӳ илме май паракан ятарлă оборудовани туянасси. Çакна валли 21 млн тенкĕ уйăрнă. Асăннă проектăн пĕрремĕш пайне – çурла уйăхĕнче, иккĕмĕшне çулталăк вĕçленичен пурнăçламалла. Тĕллевĕ пархатарлă – ялта çитĕнекен ăру пур енлĕн аталанма пултартăр, физкультурăпа спортра пиçĕхсе сывă та таса ӳстĕр. Ялти 26 шкулта спорт залĕсене çĕнетсе улăштарасси. Асăннă программăсене ĕçе кĕртмешкĕн вăхăт кирлĕ.

– Учебниксем çителĕклĕ-и?

– Иртнĕ çул ку ыйтăва татса панă. Кăçал вĕсене çĕнетмешкĕн 260 млн тенкĕ уйăрнă. Çав шутра наци культурипе, ӳнерĕпе çыхăннисене туянмалла.

– Тулайри йăхташсене, сăмахран, Тутар Республикинчи чăваш диаспорине, вĕсемпе тивĕçтерессине мĕнле йĕркеленĕ?

– Ку енĕпе правительство шайĕнче калаçса татăлнă: кӳршĕсем – пирĕн республикăри тутар шкулĕсем, эпир Тутар Республикинчи чăвашсем валли вĕренӳ пособийĕсем кăларатпăр. Пĕр-пĕринпе ылмаштаратпăр эппин. Ку енĕпе кăткăслăх пулмалла мар.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Хăрушлăх ан сехĕрлентертĕр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăри терроризмпа кĕрешекен комиссин тата оперативлă штабăн пĕрлехи ларăвне ирттернĕ. Унта вĕренӳ учрежденийĕсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессипе тата çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе ирттерекен мероприятисене терроризм ĕç-хĕлĕнчен хăтарассипе çыхăннă ыйтусене тишкернĕ.

Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов республикăри вĕренӳ учрежденийĕсене комплекслă хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме 80 млн тенкĕ /2013 çулта – 60 млн тенкĕ/, вăл шутран 16 миллионне – пушар хăрушсăрлăхĕн мероприятийĕсене ирттерме уйăрнине пĕлтернĕ.

Кăçал Чăваш Енри 75 вĕренӳ учрежденине юсама палăртнă. Вĕренӳ министерстви шкулсене тĕпрен юсама 143,8 млн тенкĕ уйăрнă, асăннă суммăран 35,1 млн тенки – ялти шкулсенчи спорт залĕсене хăтлăлатма, 59,5 млн тенки – сусăр ачасене чăрмавсăр кĕрсе çӳремелли вырăнсем тума, 49,2 млн тенки пушар сăнав органĕсен предписанийĕсен тăкакĕсене саплаштарма кайĕ.

2013-2014 вĕренӳ çулĕнче 209 видеосăнав /унченхи вĕренӳ тапхăрĕнче – 82/ тытăмне вырнаçтарнă, шкулсен 98,7% йĕрке хуралĕн ĕçченĕсене тӳрех чĕнсе илмелли пускăчсемпе тивĕçтернĕ.

Михаил Игнатьев çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен палăртнине тума, кăлтăксемпе çитменлĕхсене вăраха ямасăр пĕтерме хушнă.

■ **Юрий ПЕТРОВ**

Интервью

Пĕчĕккисене – садик, ялтисене – спорт залĕ...

Республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсемпе тĕл пулнă май ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов ача сачĕсемпе тата çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнипе çыхăннă ыйтусене уçăмлатрĕ.

– Владимир Николаевич, федераци бюджечĕ ача сачĕсен строительстви валли çак кунсенче уйăрнă транш планпа палăртни-и е хушма укçа-и?

– Чăн та, шкул умĕнхи вĕренĕве аталантармашкăн республикăра 2011 çулта вăй илнĕ программăпа килĕшӳллĕн иккĕмĕш транш килсе çитрĕ. Сăмах май, 2011-2013 çулсенче 23 ача сачĕ хута яма пултартăмăр. Çак тĕллевпе 2 млрд ытла тенкĕ тăкаклана. Асăннă проекта çитес çул вĕçлеме 3 çулти тата аслăрах ачасене садикпе тивĕçтерес ыйтăва татса паратпăр. Тĕллев – 1,5 çултан иртнисем валли вырăн тупасси.

Кăçал шкул умĕнхи учрежденисен строительствине 2 млрд тенке яхăн яма палăртнă. Çавна май федераци бюджетĕнчен пĕрремĕш ăстрăмпа 260 млн, иккĕмĕшпе 431 млн тенкĕ килнĕ, ытти – республика бюджетĕнчен.

Укçапа усă курас енĕпе чăрмав çук – строительсем пахалăхлă ĕçлеме хăнăхса çитрĕç темелле. Чăн та, хальлĕхе вĕçлеймен икĕ объект пур – Муркашра тата Кӳкеçре. Вĕсене кăçал хута ямалла.

Шупашкарта паян тата 5 садик çĕкленĕ, 2015 çулта объектсем татах йышланĕç. Пирĕн тĕллев – 4 пин ача валли вырăн йĕркелесси.

– Черетре 30 пин ытла ача тăрать вĕт...

– Аплах каламан пулăттăм. Вырăн кĕтекенсен пысăк пайĕ – 1,5-3 çултисем, 3 çултан иртнисем 2 пин ача кăна. Çывăх вăхăтрах çак çивĕчлĕхе сирме май килĕ, мĕншĕн тесен çĕнĕ учрежденисем туса лартнипе пĕрлех ытти мелпе усă курма тăрăшатпăр. Сăмахран, çемьери ача садне йĕркелени пĕчĕккисене тивĕçлĕ воспитани илме пулăшнипе пĕрлех ашшĕ-амăшне ĕçпе тивĕçтереççĕ. Хальхи садиксене малалла аталантармала. Вĕсенче хушма вырăнсем уçса черете чакарма май килĕ.

– Шкулсем пирки мĕн каланă пулăттăр? Çĕнĕ вĕренӳ çулĕччен шутлă кунсем юлчĕç...

– Шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлесе çитернине тĕрĕслес тапхăр вĕçленчĕ. 1077 учрежденирен чылайăшне – муниципалитет шайĕнчине, Вĕренӳ министерствине пăхăнаканнине – йышăннă.

Чăн та, татса паман ыйтусем те пур-ха. Вĕсене çурла уйăхĕн 29-мĕшĕччен уçăмлатмалла. Сăмах кунта пĕлтерĕшлĕ икĕ проекта пурнăçа кĕртесси пирки пырать. Пĕрремĕшĕ хевтесĕр ачасене юрăхлă хутлăхпа тивĕçтерессипе – кĕрсе тухмалли, усă курмалли вырăнсем туса панисĕр пуçне япăх куракан тата илтекен ачасем валли ыттисемпе тан пĕлӳ илме май паракан ятарлă оборудовани туянасси. Çакна валли 21 млн тенкĕ уйăрнă. Асăннă проектăн пĕрремĕш пайне – çурла уйăхĕнче, иккĕмĕшне çулталăк вĕçленичен пурнăçламалла. Тĕллевĕ пархатарлă – ялта çитĕнекен ăру пур енлĕн аталанма пултартăр, физкультурăпа спортра пиçĕхсе сывă та таса ӳстĕр. Ялти 26 шкулта спорт залĕсене çĕнетсе улăштарасси. Асăннă программăсене ĕçе кĕртмешкĕн вăхăт кирлĕ.

– Учебниксем çителĕклĕ-и?

– Иртнĕ çул ку ыйтăва татса панă. Кăçал вĕсене çĕнетмешкĕн 260 млн тенкĕ уйăрнă. Çав шутра наци культурипе, ӳнерĕпе çыхăннисене туянмалла.

– Тулайри йăхташсене, сăмахран, Тутар Республикинчи чăваш диаспорине, вĕсемпе тивĕçтерессине мĕнле йĕркеленĕ?

– Ку енĕпе правительство шайĕнче калаçса татăлнă: кӳршĕсем – пирĕн республикăри тутар шкулĕсем, эпир Тутар Республикинчи чăвашсем валли вĕренӳ пособийĕсем кăларатпăр. Пĕр-пĕринпе ылмаштаратпăр эппин. Ку енĕпе кăткăслăх пулмалла мар.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Куçса килнисене – гуманитари пулăшăвĕ

Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров Украинăран лару-тăру çивĕчленнĕрен пирĕн тăрăха куçса килнисем вăхăтлăха вырнаçнă пункта çитсе курнă. Вăл сусăр ачасен Шупашкарти реабилитаци центрĕнче вырнаçнă. Унта кӳршĕ патшалăхран тарса тухнă 28 çынпа 22 ача хӳтлĕх тупнă. Хальтерех МЧС самолечĕпе Ростов облаçĕнчен çитнĕ 49 çынпа 13 ачана «Чăвашкурорт» санаторине вырнаçтарнă.

Тĕл пулура Украина çыннисем Геннадий Семеновича хăйсем Чăваш Енре тĕпленме, кунта ĕçе вырнаçма йышăннине пĕлтернĕ, çак ыйтусене татса пама пулăшма ыйтнă. Çитменнине – куçса килнĕ пĕр ачана операци тумалла иккен. Тĕп инспектор делегаци йышĕнче пулнă ЧР Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин, РФ МЧСĕн Чăваш Енри тĕп управленийĕн, РФ УФМСĕн пирĕн республикăри ведомствин, Ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин представителĕсене асăннă ыйтусене вăраха ямасăр татма, ытти енĕпе пулăшу кӳме сĕннĕ.

Хальлĕхе Чăваш Енре 802 беженец, вăл шутра – 213 ача хӳтлĕх тупнă. Республика ертӳлĕхĕпе влаçăн вырăнти тытăмĕсем гуманитари пулăшăвĕпе тивĕçтерсех тăраççĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

* * *

Хăйсем пурăннă вырăнне пăрахса Чăваш Ене килнĕ Украина çыннисене пулăшас тĕллевпе памятка хатĕрленĕ. Унта статуса легализацилемелли, медицина пулăшăвĕ илмелли, ĕçе вырнаçмалли тата çивĕч ытти ыйтупа паллашма пулать.

Гуманитари пулăшăвне пухассине Шупашкарти халăха социаллă пулăшу паракан комплекслă центрта йĕркеленĕ. Вăл çак адреспа вырнаçнă: Стрелоксен 324-мĕш дивизийĕн урамĕ, 21-мĕш «а» çурт. Чăваш Ене килнĕ Украина çыннисем валли «хĕрӳ лини» ĕçлет: +7/8352/ 51-27-80.

ЧР Сывлăх сыхлав министерстви Украинăран килнисене политика лару-тăрăвĕ йĕркелениччен вырнаçтармашкăн республикăра пурăнакан çынсенчен заявкăсем йышăнать. Кун пирки +7/8352/ 26-13-26, 62-13-60 номерсемпе шăнкăравласа е soc12@cap.ru электрон почтăна хыпар ярса пĕлтерме пулать /çыхăнмалли мелсене тата пурăнмалли условисене кăтартмалла/.

Миграципе çыхăннă саккунсем пирки +7/8352/ 62-03-52 номерпе /РФ Миграци службин Чăваш Енри управленийĕн ыйтса пĕлмелли служби/ шăнкăравламалла. Ĕçе вырнаçассипе çыхăннă ыйтусене +7/8352/ 55-53-40 номерпе çыхăнса /ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби/ уçăмлатма май пур.

ЧР Сывлăх сыхлав министерствине Украинăран килнисене политика лару-тăрăвĕ йĕркелениччен вырнаçтарма пултаракан çынсенчен тата 2 организацирен /РФ Çăлавçăсен союзĕ тата «Заимка» турбаза/ 114 сĕнӳ килнĕ /хваттерсем, харпăрлăхри çуртсем, общежитири пӳлĕмсем/. ЧР Сывлăх сыхлав министерствин ведомствăри учрежденийĕсем те тарса килнисене вырнаçтарма хатĕр: социаллă реабилитаци центрĕсем, халăха социаллă пулăшу паракан, кану йĕркелекен, ачасен сывлăхне çирĕплетекен центрсен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмĕсем. Хальлĕхе ЧР Сывлăх сыхлав министерствине 28 çемье тĕрлĕ ыйтупа пынă. Вĕсенчен 5-ĕшне /пĕтĕмпе 21 çын, вĕсенчен 9-ăшĕ – ачасем/ Шупашкарта вырнаçтарнă.

ЧР Хĕрарăмсен канашĕн ырă кăмăллăх фончĕ Украинăран Чăваш Ене килнĕ çынсене пулăшас тĕллевпе укçа-тенкĕ пухать.

Укçа куçармалли реквизитсем:

ЧР Хĕрарăмсен канашĕн ырă кăмăллăх фончĕ

428000, Шупашкар хули, Республика тӳремĕ, 2-мĕш çурт, 119-мĕш офис.

ИНН 2130999669,

КПП 213001001

р/с 40703810875000000039

«Перекет банкĕ» АУОн Чăвашри 8613-мĕш уйрăмĕ

к/с 30101810300000000609

БИК 049706609

Тӳлев тĕллевĕ: «Украинăран килнисене пулăшма»

Пире шанаççĕ, пирĕн çитĕнӳсене хаклаççĕ!

Чăваш Енре «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне хатĕрленме пуçланнă. Аса илтеретпĕр: Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Хушăвĕпе килĕшӳллĕн асăннă форум Шупашкарта юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче иртет. Çав кунах Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантармалли Канашĕн анлă ларăвĕ иртĕ. Унта «2016-2020 çулсенче физкультурăпа спортăн техника базине аталантарасси. Раççей Федерацийĕнче официаллă физкультурăпа спорт мероприятисен тытăмне çĕнетсе улăштарасси» ыйтăва пăхса тухĕç.

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн хушăвĕпе республикăра Спорт форумне тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантармалли Канашĕн ларăвне йĕркелесе ирттерме йĕркелӳ комитетне туса хунă. Ăна ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ертсе пырать. Йĕркелӳ комитечĕ йышне министерствăсемпе ведомство ертӳçисене, спорт учрежденийĕсемпе общество организацийĕсен хастарĕсене, массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсене кĕртнĕ.

«Пулас форум – Раççейри чи пысăк тата сумлă спорт мероприятийĕ. Вăл спорт отрасльне малалла аталанма пулăшать, малашлăха çул уçать,– тет ЧР спорт министрĕ, республикăри йĕркелӳ комитечĕн председателĕн çумĕ Сергей Мельников. – Шупашкар Хусан /2009/, Мускав /2010/, Саранск /2011/ тата Якути /2012/ хыççăн форума ирттерме шаннă пиллĕкмĕш хула йышне кĕнĕ. Раççей Правительстви çакнашкал йышăнни пире шаннине, Чăваш Енре физкультурăпа спорт уйрăмах юлашки çулсенче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пулăшса пынипе лайăх аталаннине пĕлтерет. Ахальтен-им 2013 çул кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Республики спорт аталанăвĕн «Раççей регионĕ» номинацире наци премине пуçласа тивĕçрĕ. 2012 çул кăтартăвĕсем тăрăх вара Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Кунсăр пуçне Раççей Федерацийĕн Спорт министерстви Чăваш Ене спорт хатĕрленĕвĕн федераци стандарчĕсене пурнăçа кĕртмелли эксперимент вырăнĕ тесе палăртнă».

Сергей Мельников пĕлтернĕ тăрăх – форумра спортсменсене пысăк мероприятисене хатĕрлес, халăхсен «Спорт – пуриншĕн те» юхăмне аталантарас, çĕр-шывра пысăк шайри ăмăртусене йĕркелесе ирттерес /çав шутра футболла выляс енĕпе Тĕнче чемпионачĕ /2018/, Пĕтĕм тĕнчери хĕллехи Универсиада /2019/, Ĕпхӳри Пĕтĕм тĕнчери вăйăсем /2021/ ыйтусене сӳтсе явĕç. Раççейри тата тĕнче шайĕнчи специалистсем Спорт форумĕнче спорт гимнастики, çăмăл атлетика, сĕтел çи теннис, самбо, триатлон, парабадминтон, кĕрешӳ, хоккей, пăр çинче эрешлесе ярăнас енĕпе ăсталăх сехечĕсем йĕркелĕç. Чăваш Енре спортăн çак тĕсĕсем пурте аталаннă, çавăнпа занятисем чаплă спорт сооруженисенче иртĕç. Ăсталăх сехечĕсене хутшăнакансем пурте ятарлă сертификат-свидетельство илĕç.

Йăлана кĕнĕ тăрăх форумпа килĕшӳллĕн «Хальхи спорт. Çĕнĕлĕхсемпе малашлăх» спорт индустринчи çитĕнӳсен куравĕ уçăлĕ. Кăçал выставкăна спорт техникине, регионсен опытне, хальхи технологисене халаллĕç. ЧР спорт министрĕн Сергей Мельниковăн шухăшĕпе «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне ирттерни республикăшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унта патшалăх ертӳлĕхĕ, Раççейри паллă спортсменсемпе специалистсем хутшăнĕç. Чăваш Республикине 50 çĕр-шывран Пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕсен ертӳçисем, Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн членĕсем, ют-çĕршыв спортсменĕсем килмелле.

■ **А.ГРОМОВА**

Ыйтăм

«Эпир форума хатĕр!»

Пирĕн патăмăрта спорт форумĕ ирттерме йышăннине шăпине спортпа çыхăнтарнă паллă çынсем еплерех хаклаççĕ?

Николай Николаев, Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 2-мĕш спорт шкулĕн директорĕ:

– Çак хыпара савăнса кĕтсе илтĕмĕр, мĕншĕн тесен пирĕн пата тĕнчери паллă спортсменсем килеççĕ. Пурте пĕлекен специалистсем ăсталăх сехечĕсем ирттереççĕ. Форумра çавăн пекех «Хальхи спорт. Çĕнĕлĕхсемпе малашлăх» спорт индустрийĕн çитĕнĕвĕсен куравĕ те уçăлать. Спорт енĕпе Чăваш Ен яланах малтисен йышăнче пулнă. Çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче Тюменьте çуллахи биатлон енĕпе Тĕнче чемпионачĕ иртет. Унта Раççей Федерацийĕн пĕрлештернĕ команди йышĕнче пирĕн спортсменка Татьяна Семенова та хутшăнать. Мĕнех: «Эпир форума хатĕр!»– тесшĕн эпĕ.

Владимир Семенов, Шупашкар хулин ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен федерацийĕн президенчĕ:

– Пирĕн республика юлашки вăхăтра спорт енĕпе çӳллĕ шая çĕкленчĕ. Çăмăл атлетика, биатлон енĕпе, кĕрешӳçĕсен йышĕнче ăста спортсмен нумай. Надежда Федоровăна, Ольга Смирновăна, Екатерина Красновăна тата ытти нумай çынна асăнма пулать. Манăн шухăшăмпа, «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума Чăваш Енре ирттерсе питĕ тĕрĕс тăваççĕ. Эпир хамăр енчен асăннă форума ирттерме, пулăшма хатĕр.

Николай Алексеев, спорт ветеранĕ:

– «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне тата физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Канаш ларăвне Шупашкарта ирттересси çинчен пĕлсен питĕ хĕпĕртерĕм. Спорта аталантарассишĕн çине тăракан Чăваш Ене çак форум тахçанах кирлĕ. Çапах та хăш-пĕр çитменлĕхе те палăртса хăварас килет. Халĕ пире ĕлĕкхи пек спорт мероприятийĕсем çитмеççĕ. Сăмахран, «Ылтăн шайбăна» ачасемпе çамрăксем пуçаруллă, йышлă хутшăнатчĕç. Асăннă турнира чăтăмсăррăн кĕтеттĕмĕр. Çак ăнтăлăва ачасенче халĕ туймастăп. «Атте, анне тата эпĕ» ăмăрту та питĕ хаваслă та шавлă иртетчĕ. Пирĕн вăхăтри çемьесем унта йышлăн тупăшатчĕç. Халĕ ялан пĕр çынсем хутшăнаççĕ. Урампа урам, картишпе картиш те футболла выляс енĕпе ăмăртмаççĕ. Пахалăхлисене упраса хăварса çĕннисене шухăшласа кăлармалла. Спорт форумне курма Шупашкара çемйипех пырасшăн-ха.

Виталий Васильев, ЧНК çумĕнчи спорт комитечĕн председателĕ, «Кĕрешӳ» федераци президенчĕ:

– Форум – питĕ кирлĕ, пĕлтерĕшлĕ мероприяти. Эпĕ 2009 çулта Хусанта иртнĕ спорт форумне хутшăннăччĕ. Унта Раççейри мухтавлă спортсменсемпе тренерсем, сумлă çынсем пухăннăччĕ. РФ спорт министрĕ Виталий Мутко ун чухне 2009-2019 çулсенче Раççейри спорта аталантарма 75 миллион тенкĕ уйăрнине пĕлтернĕччĕ. Форумра спортăн тĕрлĕ енĕпе пысăк ăмăртусем иртрĕç, çĕнĕ стадион уçрĕç. Тĕрĕссипе, тупăшусем валли форумра нухрат нумай уйăраççĕ. Çакă та паха. Эпир унта пиçиххипе кĕрешсе кăтартрăмăр. Хамăр патăмăрта вара Олимп вăйăисен йышне кĕмен спорт тĕсĕсем пирки сăмах пуçарасшăн. Тен, Шупашкарта спортăн çакнашкал тĕсĕсене аталантаракан ятарлă спорт шкулĕ уçмалла? Сӳтсе явмалли ыйту чылай. Çавăнпа федерацисен, общество организацийĕсен форума тĕплĕн хатĕрленмелле.

Валерий Васильев, ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ:

– Çакнашкал пысăк пулăм шурă Шупашкарта иртни питĕ аван. Апла тăк – республикăна, унăн ертӳлĕхне, спортсменсене шанаççĕ. Чăваш Ен спорт енĕпе Раççейре малтисен йышăнче пулнăшăн хăпартланмалла çеç. Пирĕн виçĕ спортсмен фристайл енĕпе Раççейĕн пĕрлештернĕ команди йышне кĕнĕ. Елена Муратова вара Олимп вăйăисене те хутшăннă. Пысăк мероприяти çӳллĕ шайра ирттĕр тесе çине тăрсах хатĕрленетпĕр. Форумăн ырă пархатарĕсем малалла сулмаклă аталанма мехел парасса шанатăп, ĕненетĕп.

■ **Роза ВЛАСОВА**
ыйтса пĕлнĕ

Пысăк ăмăртусем республика чапне ӳстереççĕ

Пин çул ытларах каялла пурăннă сăвар-пăлхарсен йăхĕсем Европăри чи вăйлă халăхсен шутĕнче тăнине авалхи перссен, арабсен, узбексен, çавăн пекех славянсен ăсчахĕсемпе çыравçисемех палăртнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 1970-1990 çулĕсенче Болгарире тăватă хутчен пулма тӳр килчĕ. Эпĕ чăваш иккенне пĕлсен мана Софийăра, Пловдивра, Варна, Русе тата ытти хулари историе, халăх этнографине лайăх пĕлекенсем тăвансем пек йышăнатчĕç. Пăлхар халăхĕн мухтавлă атлечĕсемпе, Олимп вăйăисен тата тĕнче чемпионĕсемпе Нореир Нурикянпа, Младлен Кучевпа, Йордан Биковпа, Георгий Тодоровпа, Валентин Христовпа паллашма тата туслашма мана Тутар Республикинчи Пĕкĕлме тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ чăваш пăхаттирĕ, СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Николай Колесников нумай пулăшнă.

Пирĕн пысăках мар республикăран хĕрĕхе яхăн олимпиец, 300 ытла тĕнче тата Европа чемпионĕпе призерĕ тухнă. Вĕсен шучĕ уйрăмах çĕнĕ XXI ĕмĕр пуçланнăранпа хăвăрт ӳсет. Патăрьел районĕнчи чи пултаруллă велосипедистка, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Ирина Калентьева 2008 çулта Пекинра иртнĕ XXIX Олимп вăйăисенче виççĕмĕш вырăн йышăнса бронза медале тивĕçрĕ, иртнĕ уйăх варринче Раççей чемпионатĕнче 11-мĕш хут çĕнтерчĕ. Юлашки çулсенче тĕнче тата Европа шайĕнчи чи пысăк ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнса хăйсен вышкайсăр ăсталăхĕпе çавăн пекех Татьяна Петрова, Алена Прокопьева, Вера Соколова, Ирина Юманова, Кристина Савицкая, Андрей Андреев, Иван Пакин çăмăл атлетсем, Екатерина Красновăпа Надежда Федорова ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсем, Ирина Байммулкинăпа Александр Мышов штангистсем, Максим Иванов, Эдера Лаврентьева самбистсем, Елена Шелгунова гимнастка, Анна Дмитриева дзюдоистка тата ытти чăваш каччипе хĕрĕ тĕлĕнтерчĕç.

Сумлă çитĕнӳсем тума вĕсене хамăр тăван республикăра çитĕннĕ пултаруллă тренер йышĕ ӳсни, тĕрлĕ хулапа районта çĕнĕ спорт керменĕсемпе стадионсем тата ытти сооружени уçăлни тата, паллах, физкультурăпа спорта аталантарассине Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, чылай министерствăпа ведомство ертӳçисем хăйсем ырă тĕслĕх кăтартни пулăшаççĕ.

2013 çулхи кăтартусем тăрăх Раççей Физкультурăпа спорт министерстви ирттернĕ смотр-конкурс кăтартăвĕсем тăрăх пирĕн республика пĕрремĕш вырăн йышăннă. Виçĕм çулхипе танлаштарсан физкультурăпа тата спортпа кăсăкланакансен шучĕ 17700 çын ӳснĕ. Çапла майпа Чăваш Енре физкультурниксемпе спортсмен шучĕ пуçласа 35 процентран иртнĕ. Вĕсенчен хăшĕсем хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне кăçал тăван республикăра ирттерекен Раççей тата Европа чемпионачĕсенче е пĕтĕм тĕнчери турнирсенче кăтартаççĕ.

■ **Петр СИДОРОВ**

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Ятарлă кăларăм

«Саккуна пĕрле хатĕрлетпĕр»

Улшăнуллă тĕнчен улшăнми чăнлăхĕ: вăхăт чуппи – чараксăр. Хăйĕн таппине пăхăнса шав малаллах васкать. Киввине çĕнни улăштарать. Çак ылмашăнура япăххи, кивви, тивĕçтерменни вырăнне çĕнни, пĕлтерĕшли, усăлли йышăнать. Хальхи вăхăтра федерацин «Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен саккун кăларакан /представитель/ тата патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан органĕсене йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» федераци саккунĕн 26.3 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» 136-мĕш тата «Раççей Федерацийĕнчи вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» 131-мĕш саккунĕсене халăхпа сӳтсе яваççĕ. Тĕллевĕ – меллĕрех, усăллăрах, пĕлтерĕшлĕрех тата пĕр саккун теприпе хирĕçлемесĕр ĕçлеттермелле тăвасси. Саккунсене мĕнле çĕнĕлĕх кĕртесси, вăл мĕнлерех пуласси тата ытти çинчен Чăваш Республикин юстици министрĕ Надежда ПРОКОПЬЕВА каласа парать.

– Федерацин 136-мĕш саккунĕ 2014 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче вăя кĕнĕ. Асăннă саккун муниципалитет йĕркеленĕвĕсен çĕнĕ енĕсене йĕркелеме ирĕк парать: хула тытăмне административлă уйрăмсене пайласа хула округĕ е асăннă хула округĕн тытăмĕнче хула районĕсем тума. Урăхла каласан Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен муниципалитет йĕркеленĕвĕсем тума ирĕк пур.

Сĕнекен улшăнусен йышĕнче тепĕр çĕнĕлĕх пирки асăнмасăр иртеймĕпĕр. 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен хула тата ял тăрăхĕсене пырса тивекен пĕлтерĕшлĕ ыйтусен переченьне уйрăммăн палăртаççĕ. Хула тăрăхĕн тытăмĕ малтанхи пекех вырăнти пĕлтерĕшлĕ 39 ыйтупа ĕçлĕ, ял тăрăхĕсен полномочийĕсен йышĕнче 13 ыйту кăна юлĕ, унччензи ытти ыйтăва муниципалитет йĕркеленĕвĕн ертӳлĕхĕн татса памалли ыйтусен шайне куçарнă. Çавăнпа пĕрлех Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен вырăнти тата регион влаçĕн полномочийĕсене калаçса килĕшсе улăштармалли ирĕк пур. Манăн шухăшăмпа, чи пахи – федераци саккунĕ вырăнти влаç тытăмне икĕ майпа йĕркелеме май парать, е муниципалитет йĕркеленĕвĕн пуçлăхне халăх суйлавра палăртĕ, е саккун кăларакан /представитель/ орган ăна хăйĕн йышĕнчен çирĕплетĕ. Муниципалитет районĕн саккун кăларакан /представитель/ органĕ хальхи пек суйлавра çĕнтерсе е малашне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен йĕркеленме пултарать. Суйласа илнĕ йĕркене унччен субъект саккунĕпе çирĕплетсе хăвармалла.

– Федерацин çĕнĕ саккунне тĕплĕ хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе республикăри патшалăх влаç органĕсем паян мĕн тăваççĕ?

– Эпир тĕллевлĕ ĕçлекен ĕç ушкăнне туса хутăмăр, йышне çирĕплетрĕмĕр. Унта ĕç тăвакан тата саккун кăларакан влаç органĕсен, вырăнти хăй тытăмлăх, общество представителĕсем, федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ, политика партийĕсен регионти уйрăмĕсен ертӳçисем, Чăваш Енри Общество палатин, Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕсем, ТОС ертӳлĕхĕсем, ял старостисем, муниципалитет йĕркеленĕвĕсен тата ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем кĕнĕ.

Утă уйăхĕн пуçламăшĕнче иртнĕ ĕç ушкăнĕн пĕрремĕш ларăвĕнче саккун проектне халăхпа анлăн сӳтсе явма, çичĕ çум ушкăн йĕркелеме йышăннă, йышĕсене тата ертӳçисене çирĕплетнĕ. Вĕсем ĕçе тытăннă ĕнтĕ. Ĕç коллективĕсене, вĕренӳ учрежденийĕсене, ял тăрăхĕсен пухăвĕсене тăтăш тухса çӳреççĕ, халăх шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. Район активĕпе, тĕрлĕ шайри депутатсемпе, ТОС представителĕсемпе, ахаль çынсемпе, политика партийĕсен регион уйрăмĕн членĕсемпе тĕл пулнă чухне асăннă ыйтăва çĕклеççĕ, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелемелли принципсене сӳтсе яваççĕ. Кунсăр пуçне республикăри Общество палати, тĕп суйлав комиссийĕ çак ыйтупа хăйсем тĕллĕн тĕл пулусем, «Ыйту-хурав» форматпа ăнлантару каçĕсем йĕркелеççĕ. Шупашкарта ку уйрăмах аван пынине палăртнă пулăттăм.

– Халăх çĕнĕлĕх пирки мĕн шухăшлать, мĕн сĕнет? Çав сĕнӳсенчен хăшне уйăрма-палăртма пулать?

– Хальтерех кăна темиçе муниципалитет йĕркеленĕвĕнче – Улатăр хулипе районĕнче, Пăрачкав енĕпе Çĕмĕрле тăрăхĕнче – пултăм. Тĕрлĕ шухăш пулчĕ, сĕнӳ те сахал мар. Халăх асăннă саккуна сӳтсе явма хастар хутшăнни, шухăш-кăмăлне палăртма тăрăшни савăнтарать. Ара, пĕтĕмпех унăн пурнăçĕпе, малашлăхĕпе çыхăннă-çке. Тухса калакансенчен чылайăшĕ муниципалитет районĕн пуçлăхне халăх сасăлавĕпе суйласа палăрттмаллине, район пуçлăхĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕ пĕр çын пулмаллине каларĕ. Ун пек чухне вĕсен хушшинче хирĕçле самантсем текех сиксе тухмĕç. Пĕр çын пĕтĕм яваплăха хăй çине илсе ыйтăва татса парĕ, явап тытаканĕ те хăех пулĕ. Халăх суйласан, пуçлăх ĕçлеме пултарайманнине асăрхасан, халăхах унăн шăпине татса парассине сĕнекен те сахал мар.

– Надежда Викторовна, апла тăк икĕ влаç тытăмĕнчен, район пуçлăхĕпе сити-менеджер «хуçаланнинчен» хăтăлатпăр. Тĕрĕсрех – çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн пĕр пуçлăх кăна пулать?

– Çапла. Халăх сасăлавĕнче çĕнтернĕ кандидат пĕр вăхăтрах район администрацийĕн пуçлăхĕн тата район депутачĕсен Пухăвĕн председателĕн тивĕçĕсене пурнăçлама тытăнать. Халăх ку е вăл çынна ытларах шаннине тата унран çирĕпрех ыйтассине пĕлтерет. Пуçлăхăн яваплăхĕ те, çынсем умĕнчи обязательствăсем те ӳсеççĕ.

Ял тăрăхĕсен полномочийĕсен 2/3 пайне /39-тан – 26-шне/ район шайне панăран муниципалитет районĕн пуçлăхне халăхпа суйланин пĕлтерĕшĕ çĕкленет.

– Ял тăрăхĕн тытăмне, кăшт урăхларах каласан – вырăнти влаç органне епле йĕркелесси пирки çынсем мĕн калаççĕ?

– Хам пулнă районсемпе хулара пуçлăхсемпе депутатсене халăх хăй суйлатăр текен шухăш тĕпре пулчĕ. «Унсăрăн тепри «çӳлтисен» умĕнче ырă пулса влаç тилхепине алла илсен хăй кăна асапланмĕ, халăха та нушалантарĕ», – текен шухăша палăртакансем те пулчĕç. Суйлав – демократи палли, пурте çакна тĕпе хурасшăн.

Пур муниципалитетра та ял тăрăхĕсен пуçлăхне кунта суйланнă депутатсен йышĕнчен уйрăмах пуçаруллине, пултаруллине, ял-йышпа пĕр чĕлхе тупма пултараканнине суйласа илсе çирĕплетме сĕнеççĕ. «Вăл ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те, вырăнти депутатсен ертӳçи те пултăр», – теççĕ. Кунта тĕрĕслĕх пур. Пĕрремĕшĕнчен, ку ял тăрăхĕн депутачĕн статусне çĕклет. Хальлĕхе тӳнтерле ӳкерчĕк асăрхатăн: çынсене ял тăрăхĕн депутачĕ пулма ӳкĕтлеме тивет.

Пур çĕрте те влаç йĕркеллĕ пулмалла. Ку эпĕ каланă сăмахсем мар, вăл республикăри халăхăн ăнланăвĕпе йышăнăвĕ. Чылайăшĕ республика Пуçлăхĕ район пуçлăхне суйланă чухне хăйĕн витĕмне, район пуçлăхĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕн суйлавĕнче хăйĕн витĕмне «палăртма пултарассине» пытармасть. Манăн шухăшăмпа, кунта килпетсĕрри нимĕн те çук. Пуçлăхăн ĕçлеслĕх, çынлăх, ертсе пыраслăх енĕсене, яваплă ыйтусене татса параслăх тата ытти паха енсене шута илсен – уйрăмах. Вăрттăнлăх мар: кашни пуçлăх хăйĕн ĕçтешĕсене хăй суйлать, пĕр шухăшлисен коллективне пухать. Паллах, халăх та «пуш параппан çапакана» влаç тытăмне суйламĕ. Мĕншĕн тесен суйлав бюллетенĕнчи ку е тепĕр кандидат хушамачĕ тĕлне паллă лартиччен вун тĕрлĕ шухăшласа пăхать.

Паянхи пурнăç чăнлăхĕнче çирĕп влаç кирлĕ пирки калакан та нумайăн пулчĕ. Вăл халăх интересĕсене тĕпе хутăр, халăхшăн ĕçлетĕр, тĕп тĕллевĕ – ырă, тату пурнăç, ĕç, тăнăçлăх пултăр. Çак шухăша республика Пуçлăхĕ патне çитерме те сĕнчĕç.

– Çĕнĕ саккун проекчĕ мĕнле шайра, ăна хăçан хатĕрлесе çитерĕç?

– Районсенчи, хуласенчи халăхпа тĕл пулнисен пĕтĕмлетĕвне шута илсе эпир Чăваш Республикин «Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне хатĕрлесе çитертĕмĕр. Проектра çакна палăртнă: пĕрремĕшĕнчен муниципалитет йĕркеленĕвĕн саккун кăларакан /представитель/ органне /урăхла каласан – депутачĕсене. – **Авт.**/ хальхи пекех хăйсен округĕсем тăрăх суйламалла. Иккĕмĕшĕнчен, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле хулисен саккун кăларакан органĕн пуçлăхне суйланнă депутатсен йышĕнчен çирĕплетмелле. Виççĕмĕшĕнчен, муниципалитет районĕн пуçлăхне, вăлах – район депутачĕсен Пухăвĕн председателĕ, пĕтĕм халăх сасăлавĕпе суйламалла. Тăваттăмĕшĕнчен, ял тăрăхĕн пуçлăхне, малашне вăлах ял депутачĕсен Пухăвĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçласа пырĕ, суйланнă депутатсенчен хăйсем суйласа илсе çирĕплетĕç. Сăмах май, юлашки виçĕ çулта республикăри 284 ял тăрăхĕн пуçлăхĕнчен пĕрре-виççĕмĕш пайне суйлавсенче икĕ хут е ытларах пуçлăх тивĕçне пурнăçлама шаннă. Халĕ вĕсен полномочийĕсем, тепĕр хут калатăп, виçĕ хут пĕчĕкленеççĕ. Тепĕр саманта шута илме ыйтасшăн: çĕнĕ саккун ял тăрăхĕн пуçлăхне кăна пĕр вырăна виçĕ тапхăр йышăнма ирĕк парать. Ытти пуçлăхăн ун пек ирĕк çук.

Влаç тытăмне мĕнле йĕркелессин ыйтăвне хальлĕхе туллин татса парасси вĕçленмен-ха. Ăна йĕркелемелли саккун проектне халăхпа сӳтсе явасси малалла пырать. Асăннă саккун проекчĕпе кăсăкланакансем пирĕн министерство сайтĕнче паллашма, хăйсен шухăшĕсене уççăн калама, сĕнĕвĕсене хăварма пултараççĕ. Вăл антикоррупци экспертизи витĕр тухман. Проекта тĕплĕн тишкерме, сĕнӳсем хатĕрлеме вырăнти хăй тытăмлăх тата кăсăкланакан органсене, организацисене çитернĕ.

– Вырăнсенче саккун проектне тишкернисĕр пуçне урăх ыйтусем çĕкленмерĕç-и?

– Ун пеккисем те пулчĕç паллах. Акă Шупашкар хулине районсене пайлассине никам та ырламарĕ, апла тăк хула влаç тытăмĕ паянхи пекех юлать, унăн пĕр бюджет пулĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертӳлĕхĕпе депутатсене пĕр мандатлă округсемпе сасăлав ирттерсе палăртассине ырларĕç. Парти списокĕпе суйланакансенчен чылайăшне халăх пĕлмест, вăл мĕнле çын пулнине тата ĕç-хĕлне хаклама пултараймасть. Ял тăрăхĕсене пĕрлештерсе пысăклатас е пачах та уйăрса иккĕ тăвас ыйту та çĕкленнĕччĕ. Ку – район администрацийĕн ыйтăвĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**
хатĕрленĕ

• ➡ *6,11,12 стр.*

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Телей сывлăшра вĕçмест, ăна тар тăкса тупмалла

Етĕрне район администрацийĕн пуçлăхĕн Владимир Кузьминăн пĕр кунхи ĕç кунĕ мĕнле иртни çинчен

Владимир Кузьмин Етĕрне район администраци пуçлăхĕн лавне кӳленнĕренпе кăçалхи ака уйăхĕнче икĕ çул çитрĕ. Пĕр кунта пуçлăхăн миçе ыйту татса пама тивет – калама йывăр.

Акă ирхине ун патне Украинăри Луганск облаçĕнчен хӳтлĕх шыраса килнĕ çемье çитрĕ. Надежда Сергеевнăпа Сергей Николаевич Терещенкăсем Дмитрий ятлă ывăлĕпе пĕрле пурăнмалли вырăн шыраççĕ. Владимир Николаевич вĕсем çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлчĕ, мĕнпе пулăшма пултарассине тĕпчерĕ. Терещенкăсем питĕ ĕçчен çынсем иккен: упăшки 20 çул ытла шахтăра ĕçлесе пенсие тухнă, виноград ӳстерес ăсталăхлă, арăмĕ вара – библиотекарь, чечексемпе интересленет, аслашшĕ-асламăшĕ – Ачак тăрăхĕнчен. Вĕсем пĕлтĕр кăна çĕнĕ пӳрт лартса пурăнма кĕнĕ пулнă.

– Эпир кунта çын ĕнси çинче ларма килмен. Лере пӳрт лартрăмăр пулсан, кунта та лартăпăр. Раççей çĕр-шывне пире йышăннишĕн тав тăватпăр. Тĕнче ырă çынсемсĕр мар. Пире пурте ăнланма, пулăшма тăрăшни савăнтарать, – терĕç килнисем. Кунта çĕнĕ пурнăç пуçлама пулăшма ыйтрĕç. Пуçламăшĕнче, хăвăрах ăнланатăр, йывăрлăхсемсĕр мар. Район администраци пуçлăхĕ Етĕрнери агротехникум директорĕпе О.Паликинпа телефонпа çыхăнса калаçрĕ, Олег Валентинович Украинăран килнĕ çемьене общежитире пӳлĕмпе тивĕçтерме шантарчĕ. «Ядринжилремсервис» пĕрлĕхре Терещенкăсене ĕç тупса пама пулчĕç.

Ĕç кунĕ малалла пырать. Владимир Кузьмин хăйĕн строительство енĕпе ĕçлекен çумĕпе В.Еремеевпа тата район администрацин вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕпе А.Филимоновпа çула тухрĕ, ача сачĕсене çитсе курма шухăшларĕ. Етĕрнери «Пукане» ача сачĕн çурчĕ тавра асфальт сармалла – кун пирки Людмила Алексеева заведующи ыйтрĕ. Хулара кăçал 200 вырăнлă ача сачĕ хута каймалла. «Арка» пĕрлĕхри строительсем хальлĕхе ĕçĕн 75 процентне пурнăçланă. Кун çинчен асăннă пĕрлĕхĕн тĕп инженерĕ Р.Шарафутдинов пĕлтерчĕ. Çурт умĕнчи лаптăка хăйăр сарса хăтлăх кĕртме пуçланă. Газ кĕртессипе ыйтусем пур, В.Кузьмин пулăшма шантарчĕ. Юнашар вырнаçнă пуçламăш класс ачисем вĕренмелли шкулпа ача садне пĕр котельнăй ăшă парса тăмалла. Пуçлăхсем çĕнĕ котельнăйра та пулса курчĕç. Унтан вĕсем Вăтам Ирçери «Вăрман юмахĕ» ача садне çитрĕç. Унта пĕчĕккисем валли юмах тĕнчи тăвас тесе «Ника» пĕрлĕхри строительсем тимлеççĕ. В.Бахмисов прораб пĕлтернĕ тăрăх, авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ача садне тĕпрен юсаса хута яма палăртнă. Ача сачĕн заведующийĕ Е.Данилова пуçлăхран апат пĕçерме çĕнĕ плита туянма пулăшу ыйтрĕ. Ача пахчи уçăласса 24 ачапа вĕсен ашшĕ-амăшĕ чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

Кăнтăр хыççăн В.Кузьмин хăйĕн пĕрремĕш çумĕпе, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕпе В.Семеновпа Асламасри «СортСемОвощ» пĕрлĕхре пулса курчĕ. Асăннă пĕрлĕхе пĕлтĕр В.Матвеев йĕркеленĕ. Унти ĕç-хĕлпе Сергей Исаев юрисконсульт паллаштарчĕ. Асăннă пĕрлĕхре унччен ĕне ферми пулнă çуртра купăста, ытти пахча çимĕç управĕ тума палăртнă: тĕпрен çĕнетеççĕ. «Валентина» сортлă купăста 20 гектар йышăнать, çитес çул тата ытларах пулĕ. Çавăн пекех çитес çул 20 гектар ыхра ӳстерме палăртаççĕ, ăна кăçал кĕркунне лартса хăварма çĕр хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Люцерна 600 гектар çинче ӳсет, вăррине туса тупăш илесшĕн.

– Пирĕн енче чылайăшĕ тыр-пул ӳстерет, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Эпир вара пахча çимĕçпе ĕçлеме шухăшларăмăр, – кăмăллăн пĕлтерчĕ С.Исаев.

Асăннă пĕрлĕхре тăрăшакансене В.Кузьминпа В.Семенов ăнăçу сунчĕç. Тулли кăмăлпа район администрацине тавраннăçĕç. Пуçлăха савăнтарма нумай та кирлĕ мар, çав вăхăтрах питĕ нумай кирлĕ иккен. Шухăшласа ĕçе тăрăшса туни кирлĕ. Машина малаллах чупать.

– Кăкăр тулли савăнăçпа Етĕрнене таврăнатăп, – терĕ Владимир Кузьмин.

■ **Лилия ПЕТРОВА,**
Етĕрне районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Туслă çыхăну

«Хамăрăн самолетпа çитрĕмĕр...»

Волгоград облаçĕнчи Камышин хулипе районĕ пирĕн республикăри Йĕпреç районĕпе пилĕк çул каялла туслă çыхăну йĕркелесе яни çинчен «Вырăнти хăй тытăмлăх» кăларăмра эпир çырнăччĕ.

Унтанпа вĕсен делегацийĕсем пĕр-пĕрин патĕнче темиçе те пулма ĕлкĕрчĕç. Туслăх çулне пуçласа хываканĕ – ун чухне Йĕпреç район администрацине ертсе пынă Анатолий Петров. Вăл кăçал, тĕрĕсрех çырас тăк, утă уйăхĕн варринче Камышин хула администрацийĕпе вырăнти Дума чĕннипе асăннă хула кунне чысласа ирттернĕ савăнăçлă пухăва хутшăннă, унта сăмах тухса каланă, чăваш халăхĕн саламне сăваплă Волгоград çĕрне çитернĕ.

– Çул çӳреве иккĕн тухса кайрăмăр: эпĕ тата «Красный партизан» колхоз ертӳçи, район Пухăвĕн депутачĕ Николай Иванов, – хăйĕн каласăвне çакăнтан пуçларĕ Анатолий Иванович. – Пучинке ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Федоров та питĕ пырасшăнччĕ, анчах урăх çĕре каймаллипе пирĕн ушкăнра пулаймарĕ.

Пĕлетĕр-и, эпир инçе çула мĕнле транспортпа кĕскетнине? Вулакана вăрах хушă тĕмсĕлтермĕп, хуравне çийĕнчех уçса парăп: Камышина хамăрăн самолетпа вĕçрĕмĕр. Ан тĕлĕнтĕр вулакан «хамăрăн самолет» тенинчен. Пучинке ялĕ çывăхĕнче пирĕн колхозăн аэродром пур, вăл «пĕчĕк авиаци» йышне кĕрекен самолетсене йышăнма пултарать. Объект тĕрĕслеврен ăнăçлă тухса ятарлă лицензипе сертификат илнĕ. Шупашкар хулинчи пĕр вĕçевçĕ /хушаматне асăнни кирлĕ мар/ спорт ăмăртăвĕсене хутшăнакан хăйĕн самолетне пирĕн аэродромра тытать. Çавна май эпир те çав самолета «хамăрăн» тетпĕр...»

Çăмăл çунатсемлĕ «хурçă кайăкпа» вĕçсе кайнă та Камышин хулине пирĕн ентешсем. Хула кунĕ ячĕпе йĕркеленĕ савăнăçлă пухăва çитсен, ăна ертсе пыраканĕ культурăпа кану паркне пуçтарăннă пĕтĕм халăха Чăваш Республикинчи Йĕпреç районĕн делегацийĕ хăйĕн самолечĕпех килсе çитни çинчен пĕлтерсен, пуринчен ытларах тĕлĕнекенни Волгоград облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ пулнă-мĕн. Тĕлĕнмелли кунта акă мĕн: кĕпĕрнаттăрăн ку тарана çитсе те усă курма ятран уйăрса панă самолет çук иккен. Ку сăмах майăн пултăр-ха.

Икĕ кун хушшинче Йĕпреçсен элчисем Камышин хулинчи паллă вырăнсене çитсе курнă. Чи малтанах вĕсем Совет Союзĕн Геройне, легендăна кĕрсе юлнă Алексей Маресьева чысласа лартнă палăк умне чĕрĕ чечексем хунă. Камышинсемпе Йĕпреçсене тăванла тата туслă çыхăнусем йĕркелесе яма пулăшаканĕ шăпах çак паттăр-çке. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче икĕ урасăр тăрса юлнă вĕçевçĕ госпитальтен сипленсе тухсан ниçта та мар, Йĕпреçри вĕçев шкулĕнче «иккĕмĕш çунат» туяннă.

Чăвашран килнĕ хăнасем Камышинри историпе тавра пĕлӳ музейĕнче пулнă, кунти «Маресьев кĕтесĕнчи» экспонатсемпе кăмăлласах паллашнă. Хальлĕхе хăйсен мухтавлă ентешĕ вăрçă çулĕсенче Йĕпреçре вĕреннине çутатакан материал сахалрах пулнине кура Анатолий Петровпа Николай Иванов музей сотрудникĕсене пулăшма сăмах панă.

– Хулапа район администрацийĕнче те, хула Думинче те пултăмăр, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçне мĕнлерех йĕркелени çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр, – тет Анатолий Иванович. – Раççей Федерацийĕн «Вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» саккунне юлашки вăхăтра кĕртнĕ улшăнусем пирки кунти ĕçтешсем мĕн шухăшлани те кăсăклантарчĕ пире. Вĕсем те пирĕнпе пĕр шухăшлах: лава иккĕн мар, пĕччен туртса пымалла тата пуçлăх кам пулассине халăхăн татса памалла. Халăх йышлă пурăнакан вырăнсенче йĕркеленĕ ТОС тата ТСЖ ĕçĕхĕлĕ те интереслентерчĕ пире, общество йĕркипе ĕçлекен чылай юлташлăх ертӳçисемпе курса каласрăмăр. Камышинсенчен вĕренмелли сахал мар. Ку ыйтусене тĕпе хурса вĕсем тăтăшах хулапа район шайĕнче канашлупа семинар йĕркелеççĕ-мĕн.

Юлашкинчен эпир Камышин хулипе районĕн яваплă çыннисене, çавăн пекех культурăпа искусство ăстисене хамăр пата хăнана чĕнтĕмĕр. Кĕркунне Пучинке ялĕ çывăхĕнчи улăхра йăлана кĕнĕ «Камай уйĕн урхамахĕсем» спорт турнирĕ иртет. Виçĕ çул каялла пирĕн тупăшусене курма Камышинсен йышлă делегацийĕ килнĕччĕ. Кăçал та çăкăр-тăварпа кăмăлтан кĕтсе илĕпĕр вĕсене.

Киле килес умĕн Камышин хулипе районĕн эрнере пĕрре тухакан «Уезд» хаçат редакцийĕнче пултăмăр, журналистсене Чăваш Республикинче пурăнакансен паянхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кĕскен каласа патăмăр. Хăйсемпе тытакан çыхăну çирĕпленсех пырасса шанса, асăннă редакци пире çур çуллăха хăйсен хаçатне çырăнса пачĕ. Çапла вара, Камышинсен «Уезд» хаçачĕ Пучинкене 2 экземпляр килсе тăрать.

Нимĕн иккĕленмелли те çук: Атăл хĕрринче вырнаçнă Камышинпа Кĕтнепе Пăла, Кушлавăшпа Хум хутлăхĕнче тĕпленнĕ Йĕпреç ен хушшинчи тăванлăхпа туслăх çулĕ çултан-çулах такăрланса та анлăланса пырĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

• *Йĕпреç делегацийĕ – Камышинра.*

• ➡*11, 12 стр.*

ХЫПАР

Çемье

Тарпа çĕнсе илнĕ хисеп сумлă

Патăрьел районĕнчи Туçари Мордвиновсем – ялти хисеплĕ çемьесенчен пĕри. Венямин Григорьевичпа Валентина Николаевна – сăпайлă, ĕçлĕхлĕ, кăмăллă... Ачисене те хăйсем пек пулма вĕрентнĕ. «Икĕ алпа усса çӳреме юраман» ăнлав вĕсен йăхран-йăха куçса пырать.

● *Венямин Григорьевичпа Валентина Николаевна вĕлле хурчĕсене пăхма хатĕрленеççĕ.*

В. Мордвиновăн ашшĕпе амăшĕ – Григорий Петровичпа Федосия Петровна – 9 ача çуратнă. Анчах чир-чĕре пула хăшĕ-пĕри пĕчĕклех вилнĕ. 3 ывăлĕ Таван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă, иккĕшĕ – Александрпа Никандр – таврăнайман. Мефодий яппун вăрçинче пулнă. Ăна шăпа таван тăраха чĕрĕ-сывă килме пилленĕ.

Колхоз юхăмĕ пуçлансан Мордвиновсем пĕрлĕхлĕ хуçалăха кĕреççĕ. Ачисене те ĕç çумне ир çыпăçтараççĕ. Веня та ашшĕнчен шит юлмасăр çӳренĕ. Вăл пушăтран пăяв явнă, çăпата хуçнă, пушмак туса тĕлĕнтернĕ. 10-11 çул тултарсан вăкăрпа, лашапа хирсене çӳрелеме кайнă, кĕлте, утă-улăм турттарнă.

1958 çулта Венямин Григорьевичăн салтак ячĕ тухать. Вăл Украинăри Коваль хулинчи çар часĕнче службăра тăрать. Çулталăк хĕсметре пулнă хыççăн ăна, пултаруллă та тимлĕ салтак пулнине кура, урăх полкран килнĕ Коваленко капитан хăйĕн патне илсе каять. Туça каччи çапла майпа уйрăм пая лекет. Кунта та вăл хăйне лайăх енчен кăна кăтартать, юлташĕсемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.

Çартан 1961 çулта таврăнсан В.Мордвинов Канашри механизаторсен шкулĕнче вĕренет. Документ илсенех тăван яла таврăнать, колхозра Т-40 тракторпа ĕçлеме пуçлать. Каярах шоферсен курсне пĕтерет. Çакăн хыççăн бензин турттаракан автомашина рулĕ умне ларать, техника паркĕнче аппаратчикра, аккумуляторщикра тăрăшать.

Мордвиновсем питĕ ĕçчен пулнине маларах та палăртнăччĕ. Вĕсене вĕлле хурчĕсемпе танлаштарас килет: тул çутăлинченех вăй хума тытăнаççĕ те каç пулсан тин пушанаççĕ. Картиш тулли вылăх усранăран канса ларма та вăхăт çук. Çаван пекех хурт-хăмăрпа та кăсăклана ççĕ. Вĕлле шучĕ чылай. Пушă чухне Венямин Григорьевич йывăçран тĕрлĕ япала касса ăсталать. Вăл Туçари чиркӳ валли мĕн кăна туса паман! Турăшсен рамисенчи ярешсем тӳрех тыткăнлаççĕ. Унăн ĕçĕсене Патăрьелĕнчи кĕлĕ çуртĕнче те курма пулать. Чăннипех унăн алли ылтăн!

Çӳпçине кура хупăлчи теççĕ. Венямин Григорьевичăн арăмĕ те, Валентина Николаевна, питĕ маттур хĕрарăм. Вăл ĕмĕр тăршшĕпе фермăра тăрăшнă. Хисеплĕ мăшăр пĕр-пĕринпе шăкăлтатса 51 çул пурăнать. 3 ача çуратса ӳстернĕ, пурне те тивĕçлĕ воспитани парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Асли, Саша, ял хуçалăх институтне пĕтернĕ. Вăл Сĕнтĕрвăрринче тĕпленнĕ. Надя çемйипе Мускавра пурăнать. Олег, ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе, тĕп килпе юнашар кермен пек çурт хăпартнă. Çак ял хĕрнех качча илнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Туçари чиркӳре вăй хураççĕ. Мордвиновсем мăнукесенчен те пуян.

Кашни çуркуннех килĕшӳллĕ çак мăшăр пурăнакан пӳрт айккине чĕкеçсем йăва çавăраççĕ. Пĕчĕк кайăк усал çынсем патĕнче хӳтлĕх шырамасть теççĕ. Вĕсем те ăш кăмăллисем ăçта пурăннине пĕлеççĕ.

■ **А.ФРОЛОВ.**
О. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ

Ял туризмĕ

«Людмила пур чухне...»

Пурăнса ирттернĕ кашни кун историре юлать. Çапла майпа çул хыççăн çул иртет. Çĕнĕ пулăмсем халĕ мĕн пуррине манăça кăлараççĕ, кивелнĕ япаласем кирлĕ мар пулса юлаççĕ. Эпир вĕсенчен хăтăлма тăрăшатпăр, çĕннисене çул паратпăр. Телее, «аваллăхпа» сыв пуллашма васкаманнисем те пур-ха. Унашкаллисен шутне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Нарат Чаккинче пурăнакан Людмила Даньковăна кĕртнĕ пулăттăм. Людмила Геннадьевна мăшăрĕн çывăх çыннисенчен юлнă еткерлĕхе – авалхи ĕç хатĕрĕсене, йăла-йĕркепе çыхăннă япаласене, куллен усă курнă савăт-сапана тата ыттине те – упраса хăварнă. 2007 çулхи ака уйăхĕн 5-мĕшĕнче – хăйĕн çуралнă кунĕнче – «Сире кĕтекен çурт» ятпа музей-çурт уçнă. Аваллăхран упранса юлнă япаласене, музейри пек каласан – экспонатсене, ученче вите, сарай пулнă хуралтăсенче, пĕчĕк пӳртре вырнаçтарнă. Паллах, вĕсене тĕпрен юсаса, тирпейлесе илемлетнĕ. Кашнин алăкĕ çине чăвашла, вырăсла, акăлчанла ăнлантарса çырса хуни пур. Даньковсен ырă пуçарăвĕ пирки хыпар хăвăрт саланнă, кĕçех туристсем, тавра пĕлӳçĕсем Нарат Чаккине çул хывма пуçланă. Вĕсем çеç мар, журналистсем те, чиновниксем те. Лайăх япала пурне те килĕшнĕ, çакă кил хуçисене тата та хавхалантарнă.

Людмила Геннадьевна – пултарулăх çынни. Асăннă районти Октябрьски салинче çуралса ӳснĕ. 1982 çулта Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищинчен вĕренсе тухсан ăна Нарат Чаккине ĕçлеме янă, кунти хорăн пултарулăх ертӳçи пулса тăнă. Çавăнтанпа – паянхи кунччен. Вăхăтлăха вăл – Хуракассинчи культура учрежденийĕн директорĕ. Хăйсен ертӳçи декрет канăвĕнчен тухсан каялла тăван ялĕнчи культурăпа кану центрне тавраннĕ. Шел, хальлĕхе центрăн хуçи çук-ха, Людмила Геннадьевна вырăнне юлнă методист утă уйăхĕнче ĕçлеме пăрахнă. Апла-и, капла-и – Даньковă тăван клубне манăça хăвармасть. Унта хальхи вăхăтра юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Ăна пурнăçлаканĕсем те – вăлах тата мăшăрĕпе ывăлĕ, Валерий Витальевичпа Даниил. Вĕсем тӳлевсĕрех ĕçлеççĕ. Маччана юсанăшăн çеç ятарласа тытнă строителе кăштах тӳлеме май тупнă. Малалла пурнăçламаллин вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть пек. Тĕрĕссипе, чи пĕлтерĕшлине – çурта газпа хутса ăшăтассине – иртнĕ çул хатĕрлесе çитернĕ. Çавăнпа та ытти ĕç Людмила Геннадьевнăшăн «шăл çемми» кăна-мĕн. Паллах, строймматериалпа, укçа-тенкĕпе вăхăтра тивĕçтерсен тенĕ пулăттăм. Даньковă вара, кирек мĕнле лару-тăрăва те çĕнтерме хăнăхăскер, кăçалхи раштав уйăхĕнче ялти хорăн 90 çулхи юбилейне тĕпрен çĕнетнĕ клубра паллă тума ĕмĕтленет. Уява пире халех йыхрав турĕ.

Музей патне таврăнар-ха. Уçнă çулах унта чикĕ леш енчи хăнасем те килсе курнă. Çакна картишри ятарлă стенд çинчи сăн ӳкерчĕксем те çирĕплетеççĕ. Унта Людмила Геннадьевнăна хура ӳтлĕ пикепе юнашар куратпăр. Пике «Россия сегодня» телеканалăн Англири ĕçченĕ-мĕн. **2007 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче Раççей телеканалĕн «Вокруг света» ятлă акăлчанла программин ушкăнĕ çапла çырса хăварнă: «Питĕ лайăх йышăннăшăн, сирĕн ырă кăмăлăршăн, тараватлăхшăн чун-чĕререн тав тăватпăр! Пире кунта пурте килĕшрĕ, уйрăмах – чăваш сăри. Телей, сывлăх, ăнăçу сунатпăр!»** СТС канал саккасĕпе 2009 çулта «YBW-group" компани нумай ярăмлă «Неоплачиваемый отпуск» телепрограмма ӳкернĕ, аван уйăхĕн вĕçĕнче Чăваш Енре пулса чăваш ялĕн паянхи пурнăçне, йăли-йĕркине туллин çутатса панă. Çакăншăн Даньковсен хăна çурчĕн хуçи ячĕпе тав сăмахĕллĕ телеграмма килнĕ.

2009 çулта Даньковсем ял туризмне аталантарма уйăракан гранта /148 пин тенкĕ/ тивĕçнĕ. Тĕрĕссипе, укçан мар, икĕ пура панă вĕсене. Унпа çуллахи пӳрт çĕкленĕ тата садра беседка туса лартнă. Паллах, çак хуралтăсене йĕркене кӳртсе çитерме çăмăл пулман. Ун пирки Людмила Геннадьевна хăй те пĕлтерчĕ:

– Пурасене саваласа икĕ мотор пĕтертĕмĕр. Çи витти валли строймматериал туянма кредит илтĕмĕр. Укçа нумай тухса кайрĕ. Упăшка маларах Мускава ĕçлеме çӳретчĕ, халĕ иртнĕ çулхи чӳк уйăхĕнчен килтех-ха.

Даньковсем патĕнче эпир те виçĕ çул каялла пулса курнăччĕ. Унтанпа улшăнусем пур-и? Çуллахи çурта туса пĕтернĕпе пĕрех. Беседка та капăрăн ларать. Йĕри-тавра чечек ешерет. Мĕн пурри пĕтĕмпех туристсем валли. 2011 çулта Патăрьел районĕнчи Турханта иртнĕ Кокель ячĕллĕ пленэра хутшăннă ӳнерçĕсем Нарат Чаккинче пилĕк кун этюдсем ӳкернĕ. Даньковсен хăна çуртĕнче пурăннă. Апат çитерекенĕ те, паллах, Людмила Геннадьевна пулнă. Ун чухне юрать-ха ăна туристсене йышăннăшăн ĕç укçи çумне тата икĕ пин тенкĕ хушса тӳленĕ. Кăшт вăхăт иртсен, укçа çук тесе, пулăшма чарăннă. Апла пулин те Даньковсен мăшăрĕ халăх йăтăнса килме чарăнман. Ун пирки кил хуçи хĕрарăмĕ акă мĕн шухăшлать:

– Хулара пăчă, сывлăшĕ уçă мар. Ялта ырлăх вĕт: пан улми мĕн чухлĕ сапаланса, çырла тăкăнса выртать. Килччĕр пирĕн пата, яланах хавас кăмăлпа кĕтсе илĕпĕр, мунча хутса кĕртĕпĕр, таса вырăн сарса парăпăр. Çут çанталăк панă ырлăхпа киленччĕр, çĕр улми кăларса, хăяр, помидор татса çиччĕр. Качака, ĕне сĕчĕ пур.

Пысăк хăнасем валли кил хуçи ятарласа наци апачĕ – шӳрпе, хуран кукли тата ыттине те – хатĕрлет. Акă иртнĕ уйăхра кунта Стамбултан «Путешественник» телеканал журналисчĕ Абдула Туркцой тата Савухи Ахмеров оператор тĕрĕк халăхĕсен авалхи йăли-йĕрки пирки фильм ӳкерес тĕллевпе килсе çитнĕ. Йăнăшман. Людмила Геннадьевна ертсе пыракан «Шăнкăрав» фольклор ушкăнĕн пикисем хăнасене хуран куклипе сăйланă, мăн асаннесемпе кукамайсем килти хуçалăхра услам çу мĕнле çуланине, кĕрпе, çăнăх авăртнине, çип арланине сăнласа кăтартнă. Вĕсемпе пĕрле Чăваш Енри паллă ăсчах Николай Егоров та пулнă. Профессор сĕнӳсен кĕнекине çапла çырса хăварнă: **«Нарат Чаккине ялĕ мĕнле ataланса кайни çиннчен пĕр вăтăр çул каяллах çырнăччĕ. Тахçан пĕрре кунта «Çитмĕл те çиччĕ» передача валли чăваш туйĕ те ӳкернĕччĕ. Халь ак татах çаврăнса çитрĕм. Ку хутĕнче Турци телекуравĕпе килтĕмĕр. Туй ӳкернĕ чухне музей Людмила пуçĕнче кăначчĕ. Паян вара Даньковсен пĕтĕм кил-çурчĕ, пĕтĕм хуçалăхĕ музей пулса тăнă. Ёмĕтĕмре тахçанах музее çаврăннă чăваш ялĕ – этнокультура заповеднике пурăнать. Тепре килнĕ çĕре Нарат Чаккине, талккишпех пулмасан та, музее çаврăнасса шанса тăратăп. Людмила пур чухне Нарат Чаккине чăваш пулсах пурăнасса, Тогаев традицийĕсене аталантарса пырасса шанатăп...»**

Эпир те çаплах шухăшлатпăр. Юлашки вăхăтра ял туризмне аталантарасси пирки питĕ нумай калаçатпăр. Нарат Чаккинче вара çак ĕçе 7-8 çул каяллах ăнăçлă йĕркелесе янă. Хăй вăхăтĕнче пуçаруçăсене хавхалантарнă та. Халĕ мĕншĕн пулăшас мар? Людмила Геннадьевна палăртнă тăрăх – вăл çак ĕçе укçа ĕçлесе илес тесе мар, чун валли йĕркеленĕ. Музее пынă пĕр туристран та укçа ыйтмасть. Парас текенни кĕмĕлне унсăрăнах «Хăна çуртне ataланта рма» тесе çырнă курупкана ярса хăварма пултарать.

Ял тăрăхĕн, район администрацийĕн ертӳлĕхĕ Нарат Чаккин, çак хутлăхăн сумне, чапне республикăра, çĕр-шывра, тĕнчере çĕклекен Людмила Даньковă пирки тепĕр хут аса илетех пулĕ тетĕп. Тĕрĕссипе, ăна кирлех те мар çакă, унсăрах пĕлеççĕ вĕри чĕреллĕ хĕрарăма. Ку яла, района, республикăна, пĕтĕм чăваш халăхне кирлĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем

Ёç выра́нĕ – Мускав Кремлĕ

Вăрмар районĕнчи йывăçсем ăшне путнă Çĕнĕ Вĕренер ялĕ пысăках мар. Апла пулин те куртан паллă çын сахал мар тухнă. 1937 çулта правительство йышăнăвĕпе ялта пысăк тухăç паракан тĕш тырă сорчĕсем çитĕнтерекен пункт уçнă. Патшалăхăн лайăх сортсем çитĕнтерекен фонд пуçлăхне рабочисемпе хресченсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă Григорий Кондратьевич Кондратьева çирĕплетнĕ. Сортлă тырă вăрлăхĕ туянма хамăр республикăри районсенчен кăна мар, ытти çĕртен те килсе çӳренĕ кунта.

Григорий Кондратьевичпа Анастасия Платоновна 9 ача пăхса çитĕнтернĕ. Вĕсен таваттăмĕш хĕрĕ Васса хăйĕн пурнăçне çамрăклах Мускаври Кремльпе çыхăнтарнă.

Çакна аса илтерни вырăнлă: Мускаври Кремль патшалăхăн чи пысăк крепоçĕсенчен пĕри кăна мар, çавăн пекех вырăс кнеçĕсемпе патшисен резиденцийĕ те пулнă.

Президент полкĕ – сайра тĕл пулакан çар часĕ. Вăл Мускаври Кремлĕн объекчĕсене – Раççей Федерацийĕн резиденцине, çавăн пекех патшалăхăн кирлĕ ытти объектне сыхлас енĕпе çар заданийĕсене пурнăçлать. Патшалăх çуллĕ шайра пурнăçлакан протокол мероприятийĕсене ирттернĕ çĕре, Кремль стени умĕнче хисеплĕ караул, Паллă мар салтакăн вил тăпри çинчи ĕмĕр çӳнми çулăм çуннă çĕрте службăра тăнă çĕре хутшăнать.

– 1954 çулта, 17 çул тултарсан, паспорт илтĕм те Мускава тухса кайрăм. Ун чухне çĕр-шывăн тĕп хулинче манăн çывăх тăван Николай Кондратьев ĕçлетчĕ. Вăл мана КПСС Тĕп Комитечĕн ĕçĕсен управлени пуçлăхĕ патне илсе кайрĕ. Ёçе кĕме тесе заявлени çырнă хыççăн мана кăштах тăхтама ыйтрĕç, хăйсемех пĕлтересси çинчен шантарчĕç. Яваплă вырăнта ĕçлемелле-çке. Мана пур енлĕн тĕрĕслеççĕ. Йăхтĕпрен, тăвансенчен кам та пулин судпа айăпланман-и е патшалăха хирĕçле ĕç туман-и?Телее, пирĕн йăхран киревсĕр ĕç тунисем пулман. Часах ĕçе вырнаçрăм, маляр профессине алла илтĕм те мĕн паян кунччеренех хам килĕштернĕ специальноçпа вăй хуратăн,– тет ентешĕмĕр.

Унтанпа 60 çул иртрĕ. Сахал вăхăт мар ку. 77 çулултарнă Васса Григорьевнăна çавăн чухлĕ çулта тееймĕн. Çамрăк курăнать, хăйне вăр-вар тытать. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна Кремльти пуçлăхсем ĕçрен ярасшăн мар. Çавăнпах пулĕ ăна çĕнĕ хваттер панă.

60 çул... Калама ансат, улшăнмасăр пĕр вырăнта çавăн чухлĕ тăрăш-ха. Никамăн та çавăн чухлĕ стаж çук пулĕ. Пулсассăн та ун пек çын питех те сайра. Çитменнине тата вăл яваплă вырăнта-çке – Кремльте. Кăна эпир ăмсанма кăна пултаратпăр.

Çĕр-шывăн темиçе пуçлăхĕпе те ĕçлесе курнă вăл. Вĕсем çинчен ырăпа кăна аса илет: «1964 çулта Н.Хрущева ĕçрен хăтарчĕç те ун вырăнне Л.Брежнева лартрĕç. 1966 çулта Леонид Ильич КПСС Тĕп Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ пулса тăчĕ. Ахаль çыннччĕ вăл, пирĕн патăмăрта, рабочисен хушшинче час-часах пулатчĕ, алă тытса сывлăх сунатчĕ. 18 çул çĕр-шыва йĕркеллĕ тытса пычĕ. 1982 çулхи чӳк уйăхĕнче пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Ăна Кремль стени çумне пытарчĕç», – тет вăл.

● *В.Спиридонова.*

ФЧЕРНОВ хăлăхĕ.

1985-1990 çулсенче КПСС Тĕп Комитечĕн Политбюро членĕ, СССР ют çĕр-шыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Э.Шеварнадзе пирки те лайăххине кăна калать.

«Эдуард Амвросиевич Кремльте ĕçлекен рабочисен ĕçри хастарлăхне ӳстерес тĕллевпе пире музыка ярса паратчĕ, кофе ĕçтеретчĕ», – калаçава малалла тăсать Васса Григорьевна.

Хальхи Раççей Президенчĕне В.Путинпа Правительство пуçлăхĕ Д.Медведев çинчен те ырăпа кăна каласа парать. Кунти рабочисемпе тăтăшах тĕл пулнисĕр пуçне, вĕсен ĕç тата пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшаççĕ иккен. Çакă вĕсене савăнтарать, ĕçлес кăмăлне çĕклет. «Кремле пропускпа кĕретпĕр. Ёçе вара тулли кăмăлпа, савăнса çӳретпĕр. Çĕр-шыв пуçлăхĕсене сăнран чылайăшне лайăх пĕлетпĕр, сывлăх сунатпăр», – пĕлтерет ĕç ветеранĕ.

Строительсен тивĕçĕ – Кремльти кашни кĕтесрех тивĕçлĕ илемхăтлăх тăвасси. Пĕр-пĕр министр ĕçрен тухать-и е ăна урăх вырăна куçараççĕ-и – унăн кабинечĕ пĕр вăхăт пушă тăрать. Çавăн чухне строительсем унта юсав ирттереççĕ, çĕнетсе улăштараççĕ.

Ёçре пысăк ӳсĕмсем тунăшăн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн Васса Григорьевна Спиридоновăна нумай медальпе тата Хисеп хучĕпе наградăланă.

Ёçленипе пĕрлех унăн кил çинчен те шухăшламалла-çке. Мăшăрĕ çамрăклах пурнăçран уйрăлать. Хĕрне Ольăна вăл пĕччен пăхса ӳстерет, вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларать. Мăнукĕ Олег колледжран вĕренсе тухнă, Кремльте офицерсен столовăйĕнче поварта ĕçлет. Тăванĕн Николай Кондратьевăн мăнукĕсем Алексейпа Дмитрий та Кремльти полкра службăра пулнă.

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ.**
Вăрмар районĕ

ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА çурла, 18-24

18 тунти кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15, 4.10 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.05 «Добрый день»
15.20 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЛИЧНАЯ ЖИЗНЬ СЛЕДОВАТЕЛЯ САВЕЛЬЕВА» 16+
23.30 «Городские пижоны» «Викинги» 18+
1.15, 3.05 Х/ф «ХИЩНИК 2» 18+
3.15 «В наше время» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Карточные фокусы» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «БОЛЬШИЕ НАДЕЖДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПЛЮС ЛЮБОВЬ» 12+
0.40 «Когда наступит голод» 12+
1.45 Х/ф «ПРОСТО САША» 3.10 «Карточные фокусы» 4.10 Комната смеха

ЧТВ

14.30-14.50 Вести-Чаваш ен
17.45-18.05 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «СТАРОМОДНАЯ КОМЕДИЯ»
11.55 «Линия жизни»
12.50, 19.45 «Острова»
13.30, 23.20 Х/ф «ДВА КАПИТАНА»
14.40, 2.40 «Мировые сокровища культуры»
15.10 Театр им. Вл. Маяковского. Спектакль «КИН IV»
18.10 Мастер-класс. Мирелла Френи
19.15 Живая вселенная. «Луна. Возвращение»
20.25 «Спокойной ночи, малыши!»
20.40 «Я пришел к вам со стихами...»
21.35 Д/ф «Противоречивая история Жанны д'Арк»
22.25 Д/ф «Камиль Писсарро»
22.30 Д/с «Вселенная Вячеслава Иванова»
1.40 Х/ф «ЗОВИТЕ ПОВИТУХУ. ГЛАВА 2» 16+

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Спасатели 16+
8.35 «До суда» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Прокурорская проверка» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА-7» 16+
19.55 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
21.50 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.35 «Сегодня. Итоги»
0.00 Т/с «ГЛУХАРЬ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
1.55 Главная дорога 16+
2.35 Дикий мир 0+
3.10 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
5.00 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.15, 11.50 Х/ф «ПОКУШЕНИЕ НА ГОЭЛРО» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
12.55, 15.10, 21.45 Петровка, 38 16+
13.10 Х/ф «СЕРЖАНТ МИЛИЦИИ» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.25 Д/ф «Контрразведчики. Убойный бизнес» 16+
16.15, 17.50 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЧИСТАЯ ПРОБА» 16+
22.30 «Человек Сверхсособный» 12+
23.05 Без обмана. «Яичный шок» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 «Футбольный центр»
1.05 «Мозговой штурм. «Просвечивающие» технологии» 12+
1.45 Х/ф «ВЕРА» 16+
3.35 Д/ф «Большие деньги. Соблазн и проклятье» 16+
5.10 Д/ф «В саду подводных камней» 12+

РЕН

5.00 Т/с «НАСТОЯЩЕЕ ПРАВОСУДИЕ; ПРИЗРАК» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 20.00, 22.30, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 Д/ф «Бессмертие против смерти» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.30, 0.30 Х/ф «БРАТ» 16+
2.30 Х/ф «ПРО УРОДОВ И ЛЮДЕЙ» 16+
4.15 «СЛЕДАКИ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00 Д/ф "Посвящается Марису Лиепе" 16+
7.00, 17.00 М/ф
"Приключения Рекса" 0+
7.30, 17.30 Т/с "СЕСТРЫ ПО КРОВИ" 16+
8.30 "Сто вопросов к взрослому" 12+
9.30, 21.00 Х/ф "ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОБАКА БАСКЕРВИЛЕЙ" 12+
11.00 "Дело вкуса" Кулинарная программа 6+
11.30 Д/ф "Скажи, что не так" 16+
12.30 "Час суда" 16+
13.30 М/с "Симба. Король-лев" 12+
14.00 Д/ф "Было, но прошло. В. Матецкий" 16+
15.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
16.00 Д/ф "Самолет для Генсека" 16+
18.30, 23.00 "Республика" хыпарсен кăларăмĕ
18.45 "Ылтăн çÿçперен" 0+
19.00 «Эх, юрăм, янăра» 12+
19.30, 23.15 "Республика"
19.45, 23.30 "По существу" 12+
20.00 "Акилбупсер" 6+
20.30, 23.45 "Открытый регион" 12+
22.30 "Утомленный славой" 16+

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр Сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Симфони вăхăчĕ. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕрере тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Радиовула. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕллĕ калаç. (12+) 20.30-21.00 Библи калаçĕвĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хитпарад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Тунти кун, ытлари кун, юн кун, кĕçнерни кун, эрне кун 6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 — Хыпарсем. (12)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 — Новости. (12)

Чăваш радиовĕ

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă саврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Мамино право
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы - вместе
7.58-8.00 Погода
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 О чувашском
18.39 Кăсях юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

19 ытлари кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.30 Т/с «ЛИЧНАЯ ЖИЗНЬ СЛЕДОВАТЕЛЯ САВЕЛЬЕВА» 16+
14.25 «Добрый день»
15.20 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 Х/ф «ФАРГО» 18+
1.40, 3.05 Х/ф «ПРЕЛЮДИЯ К ПОЦЕЛУЮ» 16+
3.50 «В наше время» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.20 «От Петра до Николая. Традиции русских полков» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «БОЛЬШИЕ НАДЕЖДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПЛЮС ЛЮБОВЬ» 12+
0.40 «Икона»
1.55 Т/ф «АДВОКАТ»
4.15 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость /на чувашском языке/
9.40-9.55 Сельская жизнь /на чувашском языке/
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.45-18.05 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «ХОЛОДНАЯ ЛАВКА ВСЯКОЙ ВСЯЧИНЫ»
11.20, 0.45 «Лето Господне» Преображение
11.50 Д/ф «Ускорение. Пулковская обсерватория»
12.15 «Уроки рисования с Сергеем Андрияко». «Хризантемы»
12.40, 21.35 Д/ф «Противоречивая история Жанны д'Арк»
13.30, 23.20 Х/ф «ДВА КАПИТАНА»
14.45 Важные вещи. «Пушечки Павла I»
15.10 Театр им. Вл. Маяковского. Спектакль «МЕРТВЫЕ ДУШИ»
17.55 «Мировые сокровища культуры»
18.10 Мастер-класс. Ван Клиберн
18.50 Д/ф «Герард Меркатор»
19.15 Живая вселенная. «Поиски жизни»
19.45 «Больше, чем любовь»
20.25 «Спокойной ночи, малыши!»
20.40 Большая семья
22.25 Д/ф «Петр Первый»
22.30 Д/с «Вселенная Вячеслава Иванова»
1.15 Оркестровые миниатюры С. Прокофьева и Ж. Бизе
1.55 Х/ф «ЗОВИТЕ ПОВИТУХУ. ГЛАВА 2» 16+

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Спасатели 16+
8.35 «До суда» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Прокурорская проверка» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА-7» 16+
19.55 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
21.50 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.35 «Сегодня. Итоги»
0.00 Т/с «ГЛУХАРЬ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
2.00 Квартирный вопрос 0+
3.00 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
5.00 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.20 Д/ф «Великие праздники. Преображение Господне» 12+
8.45 Х/ф «ЕВДОКИЯ»
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «СЕРЖАНТ МИЛИЦИИ» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10, 21.45 Петровка, 38 16+
15.25 Без обмана. «Яичный шок» 16+
16.15, 17.50 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЧИСТАЯ ПРОБА» 16+
22.30 «Осторожно, мошенники!» 16+
23.05 Без обмана. «Заварка для чайников» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 Х/ф «СТРАШНАЯ КРАСАВИЦА» 12+
2.35 Т/с «ИСЦЕЛЕНИЕ ЛЮБОВЬЮ» 12+
3.35 Д/ф «Контрацептивы. Убойный бизнес» 16+
4.20 Д/ф «Земля и небо резидента» 12+
5.15 Т/с «ДИКИМИ ТРОПАМИ» 12+

РЕН

5.00, 4.40 «СЛЕДАКИ» 16+
5.40, 7.30, 20.00, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Территория заблуждений» 16+
11.00 Д/ф «Мужчина против женщины» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.30, 0.30 Х/ф «БРАТ-2» 16+
3.00 Х/ф «СЕСТРЫ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00, 18.30, 23.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
6.15 «Ылтăн çÿçперен» 0+
6.30, 19.30, 23.30 "Республика"
6.45 "По существу" 12+
7.00, 17.00 М/ф
"Приключения Рекса" 0+
7.30, 17.30 Т/с "СЕСТРЫ ПО КРОВИ" 16+
8.30 "Сто вопросов к взрослому" 12+
9.30 Х/ф "ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОБАКА БАСКЕРВИЛЕЙ" 12+
11.00 "Дело вкуса" Кулинарная программа 12+
11.30 Д/ф "Скажи, что не так" 16+
12.30 Д/ф "Час суда" 16+
13.30 М/с "Симба. Король-лев" 12+
14.00 Д/ф "Самолет для Генсека" 16+
15.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
16.00 Д/ф "Белла Ахмадулина" 12+
18.45, 23.15 "Тĕплĕ каласу" 12+
19.00 "Турăăх йывăçĕ" 12+
20.00, 0.00 "Комфортный город" 12+
20.30 "Модная свадьба" 12+
21.00 Х/ф "РОЖДЕННАЯ СВОБОДНОЙ" 12+

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Семье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хитпарад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.10-18.30 Вырма дневникĕ. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 «Хыпар» хаçат тата чăваш интеллигенцийĕ. (12+) 20.30-21.00 Библи калаçĕвĕсем. (6+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Мир образования
6.40 Столичный курьер
6.54 Пĕр сăвă
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.27 Будьте здоровы
7.37 Тусăм
7.47 Олимпийские горизонты
7.55-8.00 Юрă саврăмĕ
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Остров молодых
18.39 Кăсях юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

20 юн кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.30 Т/с «ЛИЧНАЯ ЖИЗНЬ СЛЕДОВАТЕЛЯ САВЕЛЬЕВА» 16+
14.25 «Добрый день»
15.20 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 Х/ф «ФАРГО» 18+
1.20 Х/ф «ЦЕЗАРЬ ДОЛЖЕН УМЕРЕТЬ» 16+
2.45, 3.05 Х/ф «ДЕЛЬГО»

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.55 Т/ф «На пороге вечности. Код доступа» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «БОЛЬШИЕ НАДЕЖДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПЛЮС ЛЮБОВЬ» 12+
0.40 «Карибский кризис. Непонятая история» 16+
1.50 Т/ф «АДВОКАТ»
3.20 «Честный детектив» 16+

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.45-18.05 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «ХОЛОДНАЯ ЛАВКА ВСЯКОЙ ВСЯЧИНЫ»
11.55, 21.20 «Мировые сокровища культуры»
12.10 «Уроки рисования с Сергеем Андрияко». «Розы на фоне»
12.40 Д/ф «Противоречивая история Жанны д'Арк»
13.30, 23.20 Х/ф «ДВА КАПИТАНА»
15.10 Театр им. Вл. Маяковского. Спектакль «ЧУМА НА ОБА ВАШИ ДОМА»
18.10 Мастер-класс. Максим Венгеров
18.50 Д/ф «Данте Алигьери»
19.15 Живая вселенная. «Солнце и Венера. Соседки»
19.45 «Острова»
20.25 «Спокойной ночи, малыши!»
20.40 Творческий вечер Алексея Баталова в Доме актера
21.35 Д/ф «Рим. Тайны, скрытые под землей»
22.30 Д/с «Вселенная Вячеслава Иванова»
0.35 «Шекспир и Верди» «Отелло» Опера в концертном исполнении. Дирижер В.Федосеев
1.25 «Ускорение. Пулковская обсерватория»
1.55 Х/ф «ЗОВИТЕ ПОВИТУХУ. ГЛАВА 2» 16+

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Спасатели 16+
8.35 «До суда» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Прокурорская проверка» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА-8» 16+
19.45 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
21.35, 0.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.30 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Стандарт» (Бельгия) - «Зенит» (Россия)
1.40 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор» 16+
2.10 «Дачный ответ» 0+
3.10 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
5.00 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.15 Х/ф «ОЖИДАНИЕ ПОЛКОВНИКА ШАЛЫГИНА»
9.55 Д/ф «Ольга Волкова. Не хочу быть звездой» 12+
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ВЫСТРЕЛ В ТУМАНЕ» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10, 21.45 Петровка, 38 16+
15.25 Без обмана. «Заварка для чайников» 16+
16.10, 17.50 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЧИСТАЯ ПРОБА» 16+
22.30 Линия защиты 16+
23.05 «Хроники московского быта. Двоеженцы» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 Х/ф «ОХРАННИК ДЛЯ ДОЧЕРИ» 16+
2.50 Т/с «ИСЦЕЛЕНИЕ ЛЮБОВЬЮ» 12+
3.50 «Осторожно, мошенники!» 16+
4.20 Д/ф «Каторжанка» 12+
5.15 Т/ф «Атлас Дискавери. Открывая Индию» 12+

РЕН

5.00, 4.15 «СЛЕДАКИ» 16+
5.30, 7.30, 20.00, 22.40, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Территория заблуждений» 16+
11.00 Д/ф «Еда против человека» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.30, 0.30 Х/ф «ЖМУРКИ» 16+
2.30 Х/ф «СЕРЕБРЯНЫЕ ГОЛОВЫ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00, 18.30, 23.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
6.15 "Тĕплĕ каласу" 12+
6.30, 19.30, 23.15 "Республика"
7.00, 17.00 М/ф
"Приключения Рекса" 0+
7.30, 17.30 Т/с "СЕСТРЫ ПО КРОВИ" 16+
8.30 Д/ф "Белла Ахмадулина" 12+
9.30 Х/ф "ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОБАКА БАСКЕРВИЛЕЙ" 12+
11.00 "Еда с Зиминым" Кулинарная программа 6+
11.30 Д/ф "Скажи, что не так" 16+
12.30 Д/ф "Час суда" 16+
13.30 М/с "Симба. Король-лев" 12+
14.00 Д/ф "Территория любви. Никита Михалков" 16+
15.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
16.00 Д/ф "Пришельцы" 16+
18.45 "Ялан янра, чăваш сăмахĕ" 0+
19.00 "Кăçхи тĕл пулу" 12+
19.45, 23.30 "По существу" 12+
20.00, 23.45 "Правительственная связь" 12+
20.30 "Один день с профессионалом" 12+
21.00 Х/ф "ТАЙНА ЕГОРА, ИЛИ НЕОБЫКНОВЕННЫЕ ПРИКЛЮЧЕНИЯ ОБЫКНОВЕННЫМ ЛЕТОМ" 12+

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 8.30-9.00 Вырма дневникĕ. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕчĕк мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Открытый регион. (12+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Хамăр ял
6.34 Имею право
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă саврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.26 Диалоги о школе
7.37 Права потребителя
7.43-8.00 Ирхи концерт
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Юрă саврăмĕ
18.29 Будни ЖКХ
18.49 -19.00 Вести-Чувашия

21 кĕçнерни кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.30 Т/с «ЛИЧНАЯ ЖИЗНЬ СЛЕДОВАТЕЛЯ САВЕЛЬЕВА» 16+
14.25 «Добрый день»
15.20 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 Х/ф «ФАРГО» 18+
1.20, 3.05 Х/ф «ОСЛЕПЛЕННЫЙ ЖЕЛАНИЯМИ» 12+
3.25 «В наше время» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.20 Т/ф «На пороге вечности. Код доступа» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «БОЛЬШИЕ НАДЕЖДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ПЛЮС ЛЮБОВЬ» 12+
0.40 «Планета Вавилон. Хроники великой рецессии» 16+
2.00 Т/ф «АДВОКАТ»
4.15 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Активная молодежь
9.15 Мир искусства. Чувашский государственный ансамбль в Америке
9.40-9.55 Вспомни, солдат /на чувашском языке/
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.45-18.05 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «КАК ВАМ ЭТО ПОНРАВИТСЯ»
12.00, 17.40, 1.40 «Мировые сокровища культуры»
12.15 «Уроки рисования с Сергеем Андрияко». «Фиалки»
12.40, 21.35 Д/ф «Рим. Тайны, скрытые под землей»
13.30, 23.20 Х/ф «ДВА КАПИТАНА»
14.45 Важные вещи. «Одеяло Екатерины Первой»
15.10 Спектакль «НАПОЛЕОН I»
18.00 Мастер-класс. Тамара Синявская
19.15 Живая вселенная. «Солнце и Земля. Вспышка»
19.45 Д/ф «Полярный гамбит. Драма в тени легенды»
20.25 «Спокойной ночи, малыши!»
20.40 «Острова»
22.30 Д/с «85 лет академику. «Вселенная Вячеслава Иванова»
1.55 Х/ф «ЗОВИТЕ ПОВИТУХУ. ГЛАВА 2» 16+

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Спасатели 16+
8.35 «До суда» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Прокурорская проверка» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА-8» 16+
19.55 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
21.50 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.35 «Сегодня. Итоги»
0.00 Т/с «ГЛУХАРЬ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
2.55 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
5.00 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.20 Х/ф «РОДНАЯ КРОВЬ» 12+
10.05 Д/ф «Леонид Каневский. Безнадежный счастливчик» 12+
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ВЫГОДНЫЙ КОНТРАКТ» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10, 21.45 Петровка, 38 16+
15.25 «Хроники московского быта. Двоеженцы» 16+
16.10, 17.50 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ЧИСТАЯ ПРОБА» 16+
22.30 «Истории спасения» 16+
23.05 Т/ф «Маршал Жуков. Первая победа» 12+
0.00 События. 25-й час
0.35 Х/ф «ПРИШЕЛЬЦЫ» 6+
2.45 Т/с «ИСЦЕЛЕНИЕ ЛЮБОВЬЮ» 12+
3.40 Линия защиты 16+
4.15 Д/ф «Марсель и Марьяна» 12+
5.10 Т/ф «Атлас Дискавери. Открывая Индию» 12+

РЕН

5.00, 4.30 «СЛЕДАКИ» 16+
5.45, 7.30, 20.00, 22.15, 23.30 «Смотреть всем!» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Нам и не снилось»: «Доктор Фрейд против Господа Бога» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.30, 0.30 Х/ф «РУССКИЙ СПЕЦНАЗ» 16+
2.15 «Чистая работа» 12+
3.15 Х/ф «УБИЙЦЫ МОЛНИЕЙ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00, 18.30, 23.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
6.15 "Ялан янра, чăваш сăмахĕ" 0+
6.30, 19.30, 23.30 "Республика"
6.45 "По существу" 12+
7.00, 17.00 М/ф
"Приключения Рекса" 0+
7.30, 17.30 Т/с "СЕСТРЫ ПО КРОВИ" 16+
8.30 Д/ф "Пришельцы" 16+
9.30 Х/ф "ТАЙНА ЕГОРА, ИЛИ НЕОБЫКНОВЕННЫЕ ПРИКЛЮЧЕНИЯ ОБЫКНОВЕННЫМ ЛЕТОМ" 12+
11.00 "Еда с Зиминым" Кулинарная программа 12+
11.30 Д/ф "Скажи, что не так" 16+
12.30 "Час суда" 16+
13.30 М/с "Симба. Король-лев" 12+
14.00 Д/ф "Любовь вопреки" 16+
15.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
16.00 Д/ф "Боль" 16+
18.45 "Чун çулăхĕ" Г. Айхи пирки йăмăхĕн аса илĕвĕсем 12+
20.00, 0.00 "Круглый стол" 12+
20.45 "Местное самоуправление" 12+
21.00 Х/ф "ЗАКАЗ" 18+
23.15 "Тĕплĕ каласу" 12+

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 7.10-8.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 9.10-10.00 «Хыпар» хаçат тата чăваш интеллигенцийĕ. (12+) 10.10-11.00, 19.10-20.00 Пĕчĕк мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.10-18.30 Вырма дневникĕ. (12+) 18.30-19.00 Çăваш ен: çулсем тата сынсем. (12+) 20.30-22.00 Çĕнĕ юрă. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Юхма енĕм – Патăрьел
6.31 Спорт площадки
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă саврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.22 Паянхи кун
7.27 Открытая студия
7.56-8.00 Юрă саврăмĕ
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Ырă-çке çу хыпарсем
18.49-19.00 Вести-Чувашия

22 эрне кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15, 4.35 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 Т/с «ЛИЧНАЯ ЖИЗНЬ СЛЕДОВАТЕЛЯ САВЕЛЬЕВА» 16+
14.25 «Добрый день»
15.20 Т/с «ЯСМИН» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.50 «Поле чудес» 16+
19.50, 21.30 «Точь-в-точь» 16+
21.00 «Время»
23.25 «Городские пижоны» «Агнета: АББА и далее...»
0.30 Х/ф «ТОНКАЯ КРАСНАЯ ЛИНИЯ» 16+
3.40 «В наше время» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Тайны секретных протоколов» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «БОЛЬШИЕ НАДЕЖДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
21.00 Х/ф «ИДЕАЛЬНЫЙ МУЖЧИНА» 12+
0.40 «Живой звук»
2.35 Горячая десятка 12+
3.45 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Айхи. Видеофильм
9.25-9.55 Мехел. Республиканский конкурс детской чувашской песни. Гала-концерт. 1 часть
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.45-18.05 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «Рим. Тайны, скрытые под землей»
12.40 Х/ф «ДВА КАПИТАНА»
15.10 Спектакль «ТАЛАНТЫ И ПОКЛОННИКИ»
18.15 Мастер-класс. Владимир Крайнев
19.15 «Искатели». «Трагедия в стиле барокко»
20.00 К 85-летию со дня рождения Вии Артмане. «Эпизоды»
20.40 Х/ф «ТЕАТР»
23.20 Большой джаз
1.30 Д/ф «Дом искусств»
1.55 Х/ф «ЗОВИТЕ ПОВИТУХУ. ГЛАВА 2» 16+

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Спасатели 16+
8.35 «До суда» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Прокурорская проверка» 16+
15.35, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА-8» 16+
19.55 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
23.50 Т/с «ГЛУХАРЬ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
2.50 Дикий мир 0+
3.20 Т/с «ГРЯЗНАЯ РАБОТА» 16+
5.05 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.10 Х/ф «ИСКАТЕЛИ»
10.05 Д/ф «Наталья Селезнева. Секрет пани Катарины» 12+
10.55 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ИГРА БЕЗ КОЗЫРЕЙ» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10, 21.45 Петровка, 38 16+
15.25 Т/ф «Маршал Жуков. Первая победа» 12+
16.15, 17.50 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «СЫЩИК ПУТИЛИН» 12+
22.30 Х/ф «ДЖИВС И ВУСТЕР» «СУПРУГИ ВУСТЕР» 12+
23.40 Х/ф «НЕИДЕАЛЬНАЯ ЖЕНЩИНА» 12+
1.35 Д/ф «Капабланка. Шахматный король и его королева» 12+
2.30 Д/ф «Живешь только дважды» 12+
4.00 Д/ф «Служебный брак» 12+
4.55 Т/ф «Атлас Дискавери. Открывая Бразилию» 12+

РЕН

5.00 «СЛЕДАКИ» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 22.50 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 19.30 «24» 16+
9.00 «Нам и не снилось»: «Магия власти» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 Д/ф «Битва славянских богов» 16+
21.00 Д/ф «Битва затерянных миров» 16+
22.00 Д/ф «Заговор против России» 16+
23.50, 3.45 Х/ф «АПОКАЛИПСИС» 16+
2.30 Х/ф «КОНТАКТ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00, 18.30, 23.00 "Республика" хыпарсен кăларăмĕ
6.15 "Тĕплĕ каласу" 12+
6.30, 19.30, 23.15 "Республика"
7.00, 17.00 М/ф
"Приключения Рекса" 0+
7.30, 17.30 Т/с "СЕСТРЫ ПО КРОВИ" 16+
8.30 Д/ф "Боль" 16+
9.30 Х/ф "РОЖДЕННАЯ СВОБОДНОЙ" 12+
11.30 Д/ф "Скажи, что не так" 16+
12.30 "Час суда" 16+
13.30 М/с "Симба. Король-лев" 12+
14.00 "Утомленный славой" 16+
15.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
16.00 Д/ф "Волны убийцы" 16+
18.45 "Чăваш халăх юмахĕсем" 0+
19.00 "Эх, юрăм, янăра" 12+
19.45, 23.30 "По существу" 12+
20.00 "Бухты бархаты" 6+
20.30, 0.00 "След в истории" 6+
21.00 "Пошептушки" 0+
21.15 Х/ф "АВГУСТ" 18+

Чăваш радиовĕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Паянхи кун
6.35 Юрă саврăмĕ
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă саврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.28 Из сводок МВД
7.38 Ĕмĕр сакки сарлака
7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.25 Аразкал
18.49-19.00 Вести-Чувашия

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.30-11.00 . (12+) 11.10-12.00 Пĕчĕк мар. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çĕр Сум. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере сурăнăл сăвăсем. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине (12+) 20.10-24.00 Кăçал микс. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

23 шăмат кун

1 КАНАЛ

5.00, 6.10 Х/ф «УБИЙСТВО В САНШАЙН-МЕНОР» 16+
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.45 Х/ф «ЛУЧШЕЕ ЛЕТО НАШЕЙ ЖИЗНИ» 16+
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Играй, гармонь любимая!»
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Игорь Ливанов. С чистого листа» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 Х/ф «КАНИКУЛЫ СТРОГОГО РЕЖИМА» 12+
16.00 Фестиваль бардовской песни
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.20 «Две звезды»
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.10 «КВН» Премьер-лига 16+
0.40 Х/ф «ПОСЛЕДСТВИЯ ЛЮБВИ» 16+
2.40 Х/ф «ИСТОРИЯ АНТУАНА ФИШЕРА» 12+
4.50 «В наше время» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Х/ф «ЦЕЛУЮТСЯ ЗОРИ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00, 20.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50, 3.00 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Мышкин» «Париж без Эйфелевой башни»
11.20, 4.30 Вести. Дежурная часть
11.55 «Танковый биатлон»
12.55, 14.30 Х/ф «НЕ БЫЛО БЫ СЧАСТЬЯ...» 12+
17.00 Субботний вечер
18.55 «Клетка»
21.00 Х/ф «НЕ БЫЛО БЫ СЧАСТЬЯ - 2» 12+
0.50 Х/ф «СПАСИБО ЗА ЛЮБОВЬ» 12+
3.35 Комната смеха

ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш ен
10.05-11.00 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
14.20-14.30 Вести-Чувашия

РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «ТЕАТР»
12.55 Д/ф «Миротворец. Святой Даниил Московский»
13.30 Большая семья. Игорь Золотовицкий
14.25, 1.55 Д/с «Из жизни животных»
15.20 Д/с «Нефронтовые заметки»
15.45 «Признание в любви»
17.25 Д/ф «Вавилонская башня. Сокровище Меконга»
18.15 «Больше, чем любовь»
18.55 Х/ф «УЧЕНИК ЛЕКАРЯ»
20.10 Евгений Дятлов. Любимые романсы
21.20 По следам тайны. «НЛО. Пришельцы или соседи?»
22.10 Х/ф «ДЖЕЙН ЭЙР»
23.50 Гала-концерт в австрийском замке Графенег
1.10 Д/ф «Тайна белого беглеца»
2.50 Д/ф «Томас Кук»

НТВ

6.00 Т/с «ПОРОХ И ДРОБЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.25 Своя игра 0+
14.10 Х/ф «МОЯ ПОСЛЕДНЯЯ ПЕРВАЯ ЛЮБОВЬ» 16+
16.15 Следствие вели...16+
17.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
19.55 «Самые громкие русские сенсации» 16+
21.50 Ты не поверишь! 16+
22.30 Т/с «ГРАЖДАНКА НАЧАЛЬНИЦА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» 16+
0.30 «Жизнь как песня. Татьяна Буланова» 16+
1.35 «Как на духу» 16+
2.40 Авиаторы 12+
3.15 Т/с «ГРЯЗНАЯ РАБОТА» 16+
5.00 Т/с «ТРИ ЗВЕЗДЫ» 16+

ТВЦ

5.35 Марш-бросок 12+
6.05 М/ф «Бременские музыканты», «Ну, погоди!», «Ивашка из Дворца пионеров»
6.55 Х/ф «ПРИЕЗЖАЙТЕ НА БАЙКАЛ» 12+
8.25 Православная энциклопедия
8.50 Х/ф «ОГОНЬ, ВОДА И... МЕДНЫЕ ТРУБЫ»
10.15, 11.45 Х/ф «ГАРАЖ»
11.30, 14.30, 21.00 События
12.30 Х/ф «НЕИДЕАЛЬНАЯ ЖЕНЩИНА» 12+
14.45, 4.05 Петровка, 38 16+
14.55 Х/ф «БАРХАТНЫЕ РУЧКИ» 12+
16.55 Х/ф «ПОДРУГА ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 12+
21.20 Х/ф «ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. ДВАДЦАТЫЙ ВЕК НАЧИНАЕТСЯ»
0.25 Х/ф «МИСС ФИШЕР» 16+
1.35 Д/ф «Корчной. Шахматы без пощады» 12+
2.20 Д/ф «Вся наша жизнь - еда!» 12+
4.20 Т/ф «Атлас Дискавери. Открывая Бразилию» 12+

РЕН

5.00 Х/ф «АПОКАЛИПСИС» 16+
6.10 Т/с «ТУЛЬСКИЙ ТОКАРЕВ» 16+
9.40 «Чистая работа» 12+
10.30 «Смотреть всем!» 16+
12.30 «24» 16+
13.00 Премьеры «Военная тайна» 16+
17.00 «Территория заблуждений» 16+
19.00 Х/ф «ИВАН ЦАРЕВИЧ И СЕРЫЙ ВОЛК-2» 6+
20.30 Х/ф «ИСПАНСКИЙ ВОЯЖ СТЕПАНЫЧА» 16+
22.00 Х/ф «МЕКСИКАНСКИЙ ВОЯЖ СТЕПАНЫЧА» 16+
23.40 Х/ф «ХОЧУ В ТЮРЬМУ» 16+
1.30 Х/ф «НОЧНОЙ ПРОДАВЕЦ» 16+
3.15 Т/с «УМНОЖАЮЩИЙ ПЕЧАЛЬ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00 "Республика" хыпарсен кăларăмĕ
6.15 "Чăваш халăх юмахĕсем" 0+
6.30 "Республика"
6.45 "По существу" 12+
7.00 М/ф "Волшебник Изумрудного города" 0+
7.30 "Сто вопросов к взрослому" 12+
8.30 "Дело вкуса" Кулинарная программа 6+
9.00 "Один день с профессионалом" 6+
10.00 "ПРИКАЗ, ЧИКĔ УРЛĂ КАÇМАЛЛА" Чăваша куçарнă фильм 12+
12.00 Х/ф "ДВА КАПИТАНА" 12+
13.30 "В мире домашних животных" 12+
14.00 "Утомленный славой" 16+
15.00 Д/ф "Я остаюсь. Андрей Краско" 16+
15.30 Х/ф "ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОКРОВИЩА АГРЫ" 12+
17.00 "Открытый регион" 12+
17.30 "Комфортный город" 12+
18.00 "Правительственная связь" 12+
19.00 "Праздничный концерт, посвященный дню города Чебоксары" Телеверсия 6+
21.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
23.30 Т/с "ДВОЕ ДЕТЕЙ, ЖЕНА И ДОЧЬ" 16+

Чăваш Наци радиовĕ

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 8.30-9.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх сути. (12+) 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.00-12.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 16.30-17.00 Симфон вăхăчĕ. (12+) 17.30-18.00 Тема дня. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Пушкин Уйăхĕн юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Кăçал микс. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

7.10 Вести-Чувашия
7.23 Анонс передач
7.25 Паянхи кун
7.31 Столичный курьер
7.42 С нами Бог
7.57-8.00 Юрă саврăмĕ
* * *
12.10 Мамино право
12.33 Килте пĕсерер-ха
12.39-13.00 Эсир юратнă юрăсем
* * *
18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тÿрĕ эфир

24 вырсарни кун

1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ЛУЧШЕЕ ЛЕТО НАШЕЙ ЖИЗНИ» 16+
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «Среда обитания» 12+
14.10 «Что? Где? Когда?»
15.15 «Молодые миллионеры» 16+
16.20 «Минута славы» 12+
17.45 «Куб» 12+
18.50 «Достояние Республики». Лучшее
21.00 «Время»
22.30 «Повтори!» Пародийное шоу 16+
0.40 Х/ф «ЖЕМЧУЖИНА НИЛА» 16+
2.40 Х/ф «ПРИКЛЮЧЕНИЯ ХИТРОУМНОГО БРАТА ШЕРЛОКА ХОЛМСА» 16+
4.25 «Контрольная закупка»

РОССИЯ 1

5.15 Х/ф «ВОЗВРАТА НЕТ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00, 20.00 Вести
11.10 «Про декор»
12.10, 14.30 Т/с «Я БОЛЬШЕ НЕ БОЮСЬ» 12+
14.20 Местное время. Вести-Москва
21.00 Х/ф «МУЖ СЧАСТЛИВОЙ ЖЕНЩИНЫ» 12+
22.55 Х/ф «ВАСИЛЬКИ ДЛЯ ВАСИЛИСЫ» 12+
0.55 Х/ф «БОГ ПЕЧАЛИ И РАДОСТИ» 12+
2.45 «Моя планета» представляет. «Мышкин» «Париж без Эйфелевой башни»
3.45 Комната смеха

ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «УЧЕНИК ЛЕКАРЯ»
11.45 «Легенды мирового кино». Шарль Азнавур
12.15 «Цирк Массимо»
13.10 Звездные портреты. «Павел Попович. Космический хулиган»
13.40, 1.55 Д/с «Из жизни животных»
14.35 «Пешком...» Москва железнодорожная
15.05 Гала-концерт в австрийском замке Графенег
16.30 «Православие в Америке»
17.15 Д/ф «Тайна белого беглеца»
18.05, 1.10 «Искатели» «Затерянный город шелкового пути»
18.50 «Те, с которыми я...» Голубиный мир»
19.40 Х/ф «ЧУЖАЯ БЕЛАЯ И РЯБОЙ»
21.15 Хрустальный бал «Хрустальной Турандот» в честь Светланы Немоляевой
22.35 Х/ф «БРАТЬЯ»
0.05 «Take 6» Концерт в Москве
2.50 Д/ф «Харун-аль-Рашид»

НТВ

6.00 Т/с «ПОРОХ И ДРОБЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Чудо техники» 12+
11.05 Поедем, поедим! 0+
12.00 Дачный ответ 0+
13.20 СОГАЗ - Чемпионат России по футболу 2014/2015. «Кубань» - «Локомотив»
15.30 «Бывает же такое!» 16+
16.15 Следствие вели...16+
17.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
19.55 Т/с «МЕНТ В ЗАКОНЕ-8» 16+
1.50 Х/ф «ЕЛЬЦИН. ТРИ ДНЯ В АВГУСТЕ» 16+
3.45 Авиаторы 12+
4.10 Т/с «ГРЯЗНАЯ РАБОТА» 16+

ТВЦ

5.15 «Алиса в Зазеркалье» Спектакль Московского театра «Мастерская Петра Фоменко» 12+
7.50 «Фактор жизни» 6+
8.25 Х/ф «ОНА ВАС ЛЮБИТ!»
10.05 «Барышня и кулинар» 12+
10.40 Д/ф «Игорь Тальков. Я точно знаю, что вернусь» 12+
11.30, 14.30, 21.00 События
11.45 Х/ф «ЛАРЕЦ МАРИИ МЕДИЧИ» 12+
13.35 «Смех с доставкой на дом» 12+
14.00 Роман Карцев в программе«Приглашает Борис Ноткин» 12+
14.45 Х/ф «САМАЯ КРАСИВАЯ» 12+
18.15, 21.20 Х/ф «САМАЯ КРАСИВАЯ-2» 16+
22.15 Х/ф «ВЕРА» 16+
0.05 Х/ф «БАРХАТНЫЕ РУЧКИ» 12+
2.05 Д/ф «Анатолий Карпов. Ход конем» 12+
2.55 Д/ф «Гражданская война. Забытые сражения» 12+
4.35 «Осторожно, мошенники!» 16+
5.10 Т/ф «Атлас Дискавери. Открывая Австралию» 12+

РЕН

5.00 Т/с «УМНОЖАЮЩИЙ ПЕЧАЛЬ» 16+
15.00 Х/ф «ИВАН ЦАРЕВИЧ И СЕРЫЙ ВОЛК-2» 6+
16.30 Х/ф «ИСПАНСКИЙ ВОЯЖ СТЕПАНЫЧА» 16+
18.00 Х/ф «МЕКСИКАНСКИЙ ВОЯЖ СТЕПАНЫЧА» 16+
19.45 Х/ф «Я - ЛЕГЕНДА» 16+
21.40 Х/ф «ПАРОЛЬ «РЫБА-МЕЧ» 16+
23.30 Х/ф «ОТЧАЯННЫЙ МСТИТЕЛЬ» 16+
1.20 Т/с «НАСТОЯЩЕЕ ПРАВОСУДИЕ: ПРИЗРАК» 16+
3.00 Х/ф «ЖИЗНЬ КАК ОНА ЕСТЬ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

6.00 Д/ф "Я остаюсь. Андрей Краско" 16+
7.00 М/ф "Волшебник Изумрудного города" 0+
7.30 "Сто вопросов к взрослому" 12+
8.30 "Дело вкуса" Кулинарная программа 12+
9.00 "След в истории" 6+
9.30 "Утренняя зарядка со звездой" Телеверсия 6+
10.00 "ЮРАТУПА КĂВАКАРЧĂНСЕМ" Чăваша куçарнă фильм 12+
12.00 Х/ф "ДВА КАПИТАНА" 12+
13.30 "В мире домашних животных" 12+
14.00 "За все благодарю" Концерт Сергея Захарова 12+
15.30 Х/ф "ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. КОРОЛЬ ШАНТАЖА" 12+
17.00 "Бухты бархаты" 6+
17.30 "Модная свадьба" 12+
18.00 "Яш чух, çамрăк чух" 12+
18.30 "Бегом на шпильках" 12+
19.00 "Чебоксары - город славы трудовой" Гала - концерт участников творческого фестиваля. Телеверсия 6+
21.00 Т/с "ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА" 16+
23.00 Т/с "ДВОЕ ДЕТЕЙ, ЖЕНА И ДОЧЬ" 16+

Чăваш Наци радиовĕ

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăхăчĕ. (12+) 6.30-7.00 Юрату аврăмĕ. (6+) 7.30-8.00 Символ веры. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.05-11.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Чĕрере сурăнăл сăвăсем. (12+) 17.30-18.00 «Хыпар» хаçат тата чăваш интеллигенцийĕ. (12+) 18.10-19.00 Искăлин çăлкуçĕсем. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хитпарад). (12+) 20.05-24.00 Кăçал микс. (12+)

Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

7.10 Анонс передач
7.17 Паянхи кун
7.21 Столичный курьер
7.34 Здоровье
7.44 Сан яту-вĕрентекен
7.55-8.00 Юрă саврăмĕ
* * *
12.10-13.00 Кайри - мала. Хит-парад
* * *
18.10 Ылтăн çÿçперен
18.48-19.00 Приглашение к диалогу

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Çивĕч ыйту

Кам вăл – паянхи фермер?

Пысăк çĕр-шыв саланса кайнă хыççăн Раççейре ял хуçалăхне çĕнĕлле йĕркелесси, çĕре харпăрлăха куçарасси вăй илнĕччĕ. Демократи ирĕклĕхĕпе хавхаланса фермер, тĕпрен илсен – çемье хуçалăхĕсем аталанма пуçланă вăхăта манса кайман-ха эпир.

Вăрманлă Йĕпреç тăрăхĕнче малтанах вĕсен йышĕ ик çĕр патнех çитнĕччĕ. Пĕр 5-6 çул иртрĕ-ши, иртмерĕ-ши, Америкăри Рокфеллер пек фермер пулас ĕмĕтпе хавхаланнă çынсенчен ытларахăшĕн аллисем лăштăрах усăнчĕç. Ара, шăлаварĕ çинчен саплăк та кайма ĕлкĕреймен ĕнерхи хресчен кĕреçе-сенĕк пулăшнипе мĕнех тума пултарайĕ-ха?Çавăн йышшисене хăйсем суйласа илнĕ çул-йĕртен ирĕксĕрех пăрăнма тиврĕ. Юмахри пек сарăлса ÿсекен тыр-пул çитĕнтерме палăртса хунă пусăсене кĕçех мăян, анра çарăк, кукша пуç сырса илчĕ мар-и? Чылай çĕрте паян та çум курăк «вăрманĕ» кашлать. «Çĕр илнипе çĕрме пуян пулаймăн», – тет Йĕпреç хула тăрăхĕнче пуринчен малтан фермер пулса тăнă Болислав Иванов. Темиçе çул ăнăçлах ĕçлесе пынă-ха вăл. Каярахпа вара унăн «пăкки» шаннă. Пĕр вăхăтра хăйне Йĕпреç районĕнчи фермерсен пĕрлĕхне ертсе пыма та çирĕплетнĕччĕ ăна.

Иртнĕ кунсенчен пĕринче Болислав Васильевич «Хыпар» хаçатăн вырăнти корпунктне кĕрсе тухрĕ. Чылайранпа курманскерĕн манпа сăмахламалли самаях пуçтарăнса кайнă иккен. Фермер ĕçĕ-хĕлĕпе сыв пуллашнăранпа та Кушлавăш шывĕ вунă хутчен пăртан тасалнă-мĕн. «Халĕ районта миçе фермер?» – ыйтрăм та хуравне кĕтсе илеймерĕм унран. Çитменнине тата, район администрацийĕ те вĕсене явăçтарса канашлу-семинар ирттерме пăрахнă-мĕн. Болислав Иванов строительство материалĕсем хатĕрлекен фирма йĕркеленĕ. Çĕнĕ тытăмра начар мар утăмсем туни çинчен хавхаланса пĕлтерчĕ.

Болислав Иванов – агроном. Анчах фермершăн вăл кăна пулни çителĕксĕр. Пурне те пĕлмелле унăн: туса илекен продукцие вырнаçтармалли йĕркене те, агробизнесри партнерсен хушшинчи çыхăнăва тытса пыма та, малашлăх валли комплекслă план хатĕрлеме те. Акă мĕншĕн чикĕ леш енче фермерсене вĕрентесси, çĕнĕлĕхсене алла илме хăнăхтарасси – тĕп вырăнта. Раççейре çĕнни тин кăна çул хывма тытăннă тапхăрта ячĕшĕн тенĕ пек вĕренткеленçи турĕç-ха. Анчах ишме лайăх вĕренсе çитичченех «шыва» пăрахрĕç вĕсене: пултараканни, вăйли çыран хĕррине пур пĕрех тухать тесе шухăшларĕç пулас. Хăшĕсем, чăн та, ишсе тухрĕç, анчах тепĕр хут çак ĕçпе аппаланас темерĕç. Фермер хуçалăхĕ, колхоз пекех, çĕртен пистерчĕ вĕсене.

Тен, лару-тăру апла мар? Республикăри чылай районта ăнăçлă аталанса пыракан ХФХ пурри çак ыйтăва пама хистет. Тата çĕр-шывра «Ĕçе пуçăнакан фермер» тĕллевлĕ программа та ĕçлет-çке. Унăн пулăшăвĕпе усă курса, йывăрлăх-чăрмавсене хăюллăн парăнтарма вăй-хал çитерекенсем патшалăхран грантсем те илеççĕ мар-и? Апла пулсан фермерсен пуласлăхĕ çук мар. Болислав Иванов йышшисем çăмăлтарах йĕрпе каяссине ытларах кăмăлласçĕ пулас. Хăйне çакăн пирки каласан вăл кÿренчĕ.

Фермерсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăкланса вăрман варринче вырнаçнă Киров ял тăрăхне çитсе килтĕм. Асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Егоров шухăшĕ вара манăн иккĕленĕве сирме пулăшрĕ. «Хура çĕр çинче çирĕппĕн тăракан, тăпра пулăхне ÿстерсе пырассине тĕпе хуракан çын кăна ÿсĕм-çитĕнÿ çулĕпе утма пултарать, – терĕ вăл. – Çавăн пек çын пурăнать те пирĕн тăрăхра: Николай Николаев хирте тыр-пул ÿстерет, килти хушма хуçалăхĕнче йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Çĕр ĕçĕпе ферма ĕçне пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса пырать вăл. Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствине лайăх бизнес-план хатĕрлесе парса, Николай Степанович 1 млн та 100 пин тенкĕлĕх грант илчĕ».

Пултаруллă тепĕр фермерпа вара Каçал тăрăхĕнче паллашма тÿр килчĕ. Николай Васильев юхăнса панкрута тухнă «Гигант» колхозăн сысна фермине туяннă та унта качака ĕрчетме тĕллев тытнă. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса илнĕ çăмăллăхлă кредитпа Краснодар крайĕнчен ăратлă качакасем кÿрсе килнĕ. Витене тĕпрен юсанă.

Николай Иванович кунпа çеç çырлахса ларас темен. Халĕ ăна çирĕплетсе панă çĕр 400 гектартан та иртет. Вăл унта тĕш тырă, çĕр улми, нумай çул ÿсекен курăк акса-лартса тăвать. «Николай Васильевичăн пархатарлă тĕслĕхĕ паянхи яшкĕрĕме тăван çĕр-аннемĕрпе тачă туслашма кирли çинчен ас тутарса тăрать», – çапла хак пачĕ канăçсăр чун-чĕреллĕ çыннăн шанчăклă утăмĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Михаил Афанасьев.

Çапах та Йĕпреç тăрăхĕнче фермерсем çинчен аса илмеççĕ тесе калама чĕлхем çаврăнмасть. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕ Олег Новиков пуçарнипе вĕсен пĕр ушкăнне хамăр кăшт малăрах кăна асăнса иртнĕ Николай Васильевăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарас тĕллевпе кÿршĕ района кайса килнĕ. Çул çÿреврен тавраннă хыççăн хăшĕ-пĕри хăйсене уйăрса панă çĕр лаптăкĕ çинче ÿлĕмрен малашлăхлă сортсене акса тăвас тĕллевпе хавхаланни пирки пĕлтернĕ. Тен, Болислав Иванов та хăйĕн шухăшне улăштарĕ?

■ **Геннадий ВАСИЛЬЕВ**

Депутат тата унăн ĕç-хĕлĕ

Мăнукĕсем тĕслĕх илĕç

«Пĕрремĕш пучах» паллăна тата район администрацийĕн Дипломне кăçалхи вырмара Владимир Филиппов экипажĕ çĕнсе илнĕ. Иртнĕ çул та Герасим Цветков пулăшаканпа вĕсем темиçе хутчен малтисен ретĕнче пулчĕç. Район уявĕнче Владимир Валентинович «Ял хуçалăхĕн чи хастар ĕçченĕ» медале тата хаклă парнене тивĕçрĕ.

● *В.Филипповпа Г.Цветков комбайнерсем.*

Чутей ялĕнче çуралса ÿснĕ каччă механизатор пулма хатĕрленнĕ. Тĕмерти вăтам шкултан вĕренсе тухсан Канашра трактарист-машинист, автомобиль водителĕн удостоверенийĕсене илнĕ, квалификациллĕ специалист пулса тăнă.

2 çул Чехословакире çар хĕсметĕнче тăнă отделени командирĕ çамрăк салтаксене вĕрентнĕ. 1976 çултанпа вара тăван ялĕнчи ял хуçалăх кооперативĕнче вăй хурать. Водитель, комбайнер, кирлĕ чухне хуçалăхри хăма çуракан цехра ĕçлет Владимир Валентинович. Хуçалăх валли те, уйрăм çынсене тивĕçтерме те строительство материалĕ хатĕрлесе парать. Пĕр вăхăт вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ хыççăн тăван хуçалăх уй-хирне таврăнать. Пур çĕрте те тăрăшулăх кăтартать В.Филиппов, район хăй тытăмлăхĕн, ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн Хисеп хучĕсене тивĕçет. 1980 çулта Владимир Валентинович «Районта малта пыракан водитель» конкурсра çĕнтерсе мала тухать. Ăна «Пилĕк çуллăх çамрăк гвардеецĕ» кĕмĕл паллăпа чысласçĕ.

Хастар çынна 1984 çулта Чутей ял Канашĕн депутатне суйласçĕ. Унтанпа кашни суйлаврах Владимир Валентиновича халăх «тарçи» пулма шанаççĕ. Ларусене йĕркеллĕ çÿрет вăл, хăйĕн округĕнчи суйлавçăсемпе тăтăш тĕл пулать.

Ÿсĕме пĕччен тума май çуккине аван чухлать ял çынни. Герасим Цветков, Анатолий Яклашкин, Родион Филиппов, Альберт Васильев, Владимир Михайлов хастарлăхне ырăпа палăртать ял депутачĕ. «Хуçалăха ертсе пыракансен тăрăшулăхĕ кооперативăн çитĕнĕвĕсенче палăрать», – тет хастар механизатор.

Юлашки вăхăтра выльăх-чĕрлĕх фермисене тĕпрен юсанипе, машина-трактор паркне çĕнĕ техникăпа пуянлатнипе, хуçалăх малашлăха туртăннипе кăмăллă.

Ял çинче ырă ятпа пурăнать Филипповсен çемйи. Мăшăрĕпе, Галина Андриановнăпа, ялти шкул директорĕн çумĕпе, 34 çул килĕштерсе пурăнса пĕр ывăлпа икĕ хĕр ÿстерсе çитĕнтернĕ, пурнăçăн анлă çулĕ çине кăларнă. 4 мăнук халĕ вĕсен. Камран тĕслĕх илсе çитĕнесси вĕсемшĕн халех ĕнтĕ паллă.

■ **Валерий ЧАЙКИН,**

Тăвай районĕ.

Автор сăн ÿкерчĕкĕ

Пулăм

Çĕнĕ çурт хуçисене йышăнчĕ

Красноармейскинчи Ленин урамĕнче пилĕк хутлă 59 хваттерлĕ çурт хута кайрĕ. Ăна Шупашкарти «Доверие плюс» строителĕсем çĕнĕ технологипе усă курса кĕске вăхăтра çĕклерĕç, 105 млн ытла тенкĕлĕх ĕç турĕç. Сăмах май, ку çурта çĕкленĕ чухне строительство керамикин Красноармейскинчи «КЕТРА» завочĕ кăларакан паха кирпĕчпе усă курчĕç. Хваттерсене кашни çемье уйрăммăн хутса ăшăтĕ. Картишĕнче ача-пăча лапамĕ тата автомашинăсем валли ятарлă вырăн пур.

Хваттер хуçисем уçăсем илнĕ чухнехи савăнăçлă митингра район администрацийĕн пуçлăхĕ А.Шестаков пĕрлешÿн техника директорне О.Кондратьева, А.Сергеев каменщика, С.Тимофеева штукатур-маляра Тав хучĕ пачĕ.

Авариллĕ çуртри 10 тата нумай ачаллă 2 çемье те кунта хваттер илчĕç. Вĕсен ячĕпе Елена Антонова тав сăмахĕ каларĕ.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**

Ольга МАКАРОВА сăн ÿкерчĕкĕ

● ➡ 12 стр.

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Ял тăрăхĕн историйĕ

Арапуçсем хăйсен хутлăхне юратаççĕ

Пурăннă тăк Семен Гурьев тавра пĕлӳçĕ, РСФСР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Вăрмар районĕн Хисеплĕ гражданинĕ Иван Михайлов «История деревни Арабоси» кĕнеке пичетленсе тухнишĕн чунтанах савăннă пулĕччĕç. Халăхăн ырă ĕмĕтне Семен Гурьевичăн хĕрĕ Галина Рубашникова тата Иван Михайловичăн хĕрĕ Надежда Петрова пурнăçлама пултарчĕç.

«Арапуç ялĕн историне çырма эпĕ 1967 çулта Г.Васильев хистенипе пуçăнтăм. Çак ĕç еплерех йывăррине те кăткăссине малтанах чухламан. Тĕпчеве 3-4 çул хушшинчех çырса пĕтерĕп тенĕччĕ. Апла пулмарĕ. Архивсенчи хутсене тишкернĕ май ĕçе пурнăçлама 7-10 çул кирлине ăнланса илтĕм. Паллах, ятарлă вĕреннĕ тата сывлăхлă çын кĕске вăхăтрах çырса пĕтерĕччĕ. Мана, пĕрремĕш ушкăн инвалидне, 10 çула яхăнах кирлĕ пулчĕ. Çапла тăрмашса 13 пайне хатĕрлесе машинкăпа çаптарса хуплашкапа çĕлеттертĕм. Пурĕ 5 кĕнеке пулчĕ.

Тепĕр кĕнекинче Арапуç ялĕн хальхи историне çырасшăннăччĕ, шел, пултараймастăп. Сывлăх сасартăк хавшанипе тĕпчеве малалла тăсаймастăп. Килес ăрусем çак ĕçе вĕçлеччĕр...», – çапла çырнă С.Гурьев тавра пĕлӳçĕ «История деревни Арабоси» ятлă тĕпчевĕн ум сăмахĕнче. Семен Гурьевич историк та, филолог та пулман. Вăл ĕмĕрне банк тытăмĕнче ĕçлесе ирттернĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă, тыткăнра асапланнă. Тен, шăпах ют çĕрте тертленни çуралса ӳснĕ тăван ене чунтан юратса пурăнма хистенĕ пулĕ. Хуть мĕн тесен те С.Гурьев Арапуçсемшĕн питĕ чаплă ĕç хатĕрлесе хăварнă. Типографире кĕнекелесе кăларма та ĕмĕтленнĕ ăна, анчах ун чухне ал çырусене пичетлесси чăрмавлă килсе тухнă. Çавăнпа пичет машинкипе çаптарса çĕленĕ самаях хулăн пилĕк кĕнеке Шупашкарти архивсенче, музейсенче вырăн тупнă. Юрать-ха, вĕсем тирпейлĕ упранаççĕ. Шкулта вĕренекенсемшĕн, учительсемшĕн, библиотекарьсемшĕн, студентсемшĕн, тавра пĕлӳçĕсемшĕн тĕпчев ĕçĕ çырнă чухне усă курма юрăхлă, кирлĕ мул. Çапах та Арапуçсем вĕсене типографире пичетлеттерсе халăх умне кăларма ĕмĕтленетчĕç. Тинех çакă пурнăçланчĕ: «История деревни Арабоси» кĕнеке ял çыннисен аллинче ĕнтĕ.

С.Гурьевăн ĕçне «Тавра пĕлӳ очеркĕсем» тесе палăртнă. Кашни темăнах документсемпе, ветерансен аса илĕвĕсемпе çирĕплетнĕ. Кунта, тĕрĕссипе, пĕр пушă сăмах та çук. Архив материалĕ питĕ пуяннине те палăртмалла. Акă Арапуç ялĕнче 1712 çулта пурăннă çынсен списокĕ. Тĕне кĕрицченхи ятсем – Савгач, Тойдеряк, Биксалтанка, Кульмей, Байдул, Ентебей ... Интереслĕ мар-и-ха? Ку списока Мускаври архивран ыйтса илнĕ. Христос тĕнне йышăнтарсан – вырăсла ятсем кăна. Вĕсем тăрăх йăх тураттине йĕркелеме пулать. Е тата шкул кун-çулне çутатнине илер. Вĕрентӳ аталанăвне пуçламăшĕнченех тĕплĕн кăтартнă. Уйрăмах Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ А.Никифоров аса илĕвĕ асра юлать. 1917 çулхи пăлхав хыççăн ял еплерех пурăннăха? Ку темăна та тĕплĕн çырса кăтартнă. 1921 çулхи выçлăх вăхăтне илер тата. Автор ун чухне ача çеç пулнă. Выçăпа асапланакан çĕр-çĕр чăваш ачине, çав шутра Арапуçсене те, Мускава, Петербурга илсе кайнă, çапла майпа вилĕмрен, ыйткаласа е çапкаланса çӳреспен хăтарнă. Автор хăй мĕн курнине, мĕн тӳснине ăшри сăмахсемпе çырса кăтартать.

Арапуçĕнчен 15-16-мĕш ĕмĕрсенче 8 хуçалăх «Тискер хире» куçса кайса Аслă Арапуç ялне никĕслени çинчен вулама интереслĕ. Вăрмарсемпе Патăрьелсем халĕ те пĕр-пĕрне манмаççĕ, пĕр-пĕрин патне çӳресех тăраççĕ. Акă Аслă Арапуçсем «История деревни Арабоси» кĕнеке хăтлавне сумлă ушкăнпа килсе хутшăнчĕç, Арапуçсем Пăла тăрăхне кайса курчĕç.

Кĕнеке тăрăх районти чылай ял пирки пĕлме пулать. Мĕншĕн тесен 1861 çулта Арапуç вулăсĕ йĕркеленнĕ. Унта Сĕнтĕр, Чулкаç, Патти, Чупай, Мăнтăр, Çĕнĕ Кавал, Кĕçĕн Вăрмар, Кивĕ Вăрмар ялĕсем кĕнĕ. Интересленекен тупать тенĕ пекех килсе тухрĕ: 1870 çулсенче асăннă ялсенче миçе арçын пурăннине пĕлес тенĕччĕ. Кĕнекере миçе арçын пурăннине, арçыннине пăхса миçе теçеттин çĕр уйăрнине тĕплĕн кăтартнă. Çапла 1920 çулчченех.

Аслăрах ăрури çынсене хăйсен ачалăхĕпе çамрăклăхне таврăнса аса илӳ авăрне путмалăх пионерсем, комсомолецсем çинчен çырни интереслĕ пулассăн туйăнать. Суту-илӳ тытăмĕ, ялти чиркӳ, налуксемпе ссудăсем, промышленноçăн пирвайхи предприятийĕсем, больница кун-çулĕ, вулăс правленийĕ йĕркеленни, вулав çурчĕн ĕçĕ-хĕлĕ тата ытти тĕрлĕ ыйтăва хускатнă. Сахал сăмахпа кирлине çеç каланă.

С.Гурьева тĕпчев ĕçне пурнăçлама «Путь Ильича» колхоз председателĕ И.Михайлов нумай пулăшнă. Укçа-тенкĕ уйăрнă, ырă сăмахпа хавхалантарнă. Автор машинкăпа пичетлеттерсе кĕнекелетнĕ пĕрремĕш тĕслĕхе Иван Михайловича тав сăмахĕ çырса парнеленĕ. Ырри ырăпах таврăнать. «История деревни Арабоси» кĕнекене пичете хатĕрлекен Н.Петрова, Э.Романова, И.Михайлова Вăрмар районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, РСФСР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ И.Михайлов пирки пысăках мар тĕрленчĕк, сăн ӳкерчĕксем кĕртнĕ. Тĕрĕс тунă.

«История деревни Арабоси» кĕнекене станпа çаптарса халăх патне çитерме ниме йăлипе халăх хăй хутшăннă. Çак ĕçе йĕркелесе пыракане – вĕрентӳ ветеранĕ, тавра пĕлӳçĕ Н.Петрова.

– Ял çыннисем мана шаннăран çакăн пек пысăк ĕçе ăнăçлă пурнăçлама пултартăмăр, – тет Надежда Ивановна.

Вăрмар районĕнчи ялсен кун-çулне çутатакан кĕнеке сахал мар тухнă. Архив материалĕсемпе туллин усă курнисенчен Арапуçсен кĕнекине палăртмалла: унта 410 страница, 100 ытла сăн ӳкерчĕк. Тавра пĕлӳçĕсем ăна тĕслĕх вырăнне хумалла пек туйăнать.

■ **Василий ЦЫФАРКИН.**
Вăрмар районĕ

Кӳршĕ районсенче

Харăсах – икĕ уяв

Вăрнар. Çĕрпел тăрăхĕ кăçал нихăçанхинчен капăртарах та хитререх пек туйăнать. Чăннипех те çапла. Çынсем хăйсем пурăнакан тавралăх çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те таса, тирпейлĕ пултăр тесе питĕ нумай ĕçлеççĕ. Çакна ку тăрăха пуçласа килекенсем уйрăмах палăртаççĕ. «Халĕччен хăнасен умĕнче сăн-пите хĕретсе курман, – савăк кăмăлпа пĕлтерет Çĕрпел ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Инна Шашкова. – Пĕр-пĕр ĕç тума хуш кăна – ял-йыш кар тăрса çĕкленет нимене. Пĕрлĕх туйăмне чи малти вырăна хураççĕ пирĕн çынсем».

Чăн сăмахăн суйи çук. Ем-ешĕл йывăçсен килĕшӳллĕ шавне тăнласа çултан-çул çамрăкланса пыракан ялсен илемĕпе тата хăтлăхĕпе киленсе утма мĕн тери кăмăлла! Ял тăрăхĕн администрацийĕпе «Янгорчино» хуçалăх правленийĕ пĕрпĕринпе килĕштерсе, çирĕп çыхăну тытса ĕçленин кăтартăвĕсем куç кĕрет. Çак палăрăм нумай пулмасть Çĕрпел пуçланса кайнăранпа 410 çул çитнине паллă тунă тапхăрта уйрăмах уççăн сисĕнсе тăчĕ. Çĕрпелсен савăнăç-телейне вĕсемпе пĕрле пайлама хăнасем йышлăн килчĕç. Шел, хăйсем тахçанах тăванла çыхăну тытса тăнă Украинăри тусĕсем килсе çитеймерĕç уява. Кун сăлтавĕ ăçта «пытаннине» лайăх ăнланакан çынсем аякри тăванĕсене чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕхе упрама чĕнсе тата вĕсем патĕнче те вăрçă вутçулăмĕ путланасса шанса тăнине палăртса телеграмма ячĕç...

Ял тăрăхне кĕрекен Хурăнсур Çармăс ялĕ те хĕрӳ ĕççие тухиччен уяв ирттерес шухăшпа хавхаланчĕ. Сăлтавсăртан мар. Вырăнти тавра пĕлӳçĕсем тупса палăртнă документсене тĕпе хурсан – яла никĕсленĕренпе Культура çулталăкĕнче шăпах 335 çул çитнĕ иккен. Савăнăçлă пухăва пуçтарăннă халăх уяв кĕрекинче ял-йыш мĕн паянхи куна çитиччен утса тухнă çул-йĕре тепĕр хут куç умне кăларчĕ...

«Уяв тесен, ял-йыш – пĕр пĕтĕм, ĕçре те çавă – пикенсен», – тесе çырнăччĕ пĕр сăвăç. Тĕрĕсех иккен. Уявсем шавласакĕрлесе иртсе кайнă хыççăнах Çĕрпелсем те, Хурăнсурсем те, кар тăрса, пĕр çын пек пулса, вырмана кӳлĕнчĕç. Халĕ ку тăрăхра та, ытти çĕрти пекех, хĕрӳ ĕççи пырать.

Çĕнĕ сооружени çĕкленет

Йĕпреç. Çурла уйăхне кĕрсен Йĕпреç поселокĕн кунĕ иртрĕ. Культурăпа кану паркне килнĕ çынсемпе хăнасене поселок администрацийĕн пуçлăхĕ Вячеслав Анисимов ырă хыпар пĕлтерчĕ: район центрĕнче, «Таса шыв» тĕллевлĕ программăна пурнăçласа, каяшсене биологи мелĕпе тасатакан сооружени тăваççĕ. Вăл ĕçе кĕрсен талăкра 1000 кубла метр таран шыв каяшне «иккĕмĕш пурнăç» пама тытăнмалла. «Союзстройинвест» ООО строителĕсем, объекта кăçалхи раштав вĕçĕнче туса пĕтерес тесе хăвăртлăха кунран-кун ӳстерсе пыраççĕ. Сооруженин пĕтĕмĕшле хакĕ – 160 миллион тенкĕ. Паянхи кун Раççей бюджетĕнчен уйăрнă укçан çуррипе, 80 миллионĕпе – усă курма ĕлкĕрнĕ. Халĕччен рабочисем мĕн пур ĕçе графикпа килĕшӳллĕн пурнăçласа пынă.

«Таса шыв» программăпа тăвакан çĕнĕ объекта çĕклеме тивĕçлĕ пулнă подряд организацийĕ хăйĕн ĕçĕнче строительствăри малтисен технологийĕсемпе вырăнлă усă курнипе сооружение маларах та хута ярас тĕллевлĕ.

Артист ентешĕсене парне кӳнĕ

Канаш. Янкăлч ял тăрăхне кĕрекен Анаткас Татмăш çыннисем Пыл сăпасне ял-йышпа пĕрле паллă тăвасси тахçанах йăлана кĕнĕ. Акă мĕн пĕлтерет кун пирки асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Анатолий Кротов: «Çавăншăн «айăпли» – çак ялта çуралса ӳснĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш çамрăкĕсен театрĕнчи Виталий Сергеев артист. Вăл ентешĕсене уява пуçтарса хăйĕн утарĕнчи пылпа сăйласси 15 çул каяллах пуçланнă. Мĕн çавăнтанпах çак йăлана çирĕп тытса пырать халăх юратакан артист. Пĕрремĕш сăпас кунĕнче Анаткас Татмăшсем уяв ирттермелли лапама пуçтарăнаççĕ те хăйсем ку таранччен тунă ĕçсене пĕтĕмлетеççĕ, çĕнĕ тĕллевсем палăртаççĕ. Виталий Сергеев тата унпа пĕрле Шупашкартан килнĕ артистсем вара ялйыша хăйсен пултарулăхĕпе савăнтараççĕ. Тӳлевсĕр концертпа киленме кӳршĕ ялсенче пурăнакансем те кăмăл тăваççĕ».

■ **Геннадий ВАСИЛЬЕВ**

Хула хыпарĕ

Парăма кĕнисене чĕнсе каласнă

Хула администрацийĕн пуçлăхĕ Л.Иванова бюджет тупăшне ӳстерес, ĕç укçине вăхăтра тата пĕтĕмпех парас ыйтусемпе ĕçлекен комиссин ларăвне ирттернĕ. Унăн ĕçне республикăн финанс министрĕн пĕрремĕш çумĕ Ф.Муратова, налук политикин тата тупăшсене палăртакан пайĕн пуçлăхĕн çумĕ М.Краснова, налук службин ертӳçин çумĕ С.Аристова тата пай пуçлăхĕ Т.Архипова хутшăннă.

Комисси парăма кĕнĕ предприятисен ертӳçисене, предпринимательсене итленĕ. Çак йыша «Промтрактор-Вакун» акционерсен уçă пĕрлĕхĕ те лекнĕ. Предприяти директорĕ В.Муханов пĕлтернĕ тăрăх заводра ĕç кĕç-вĕç чарăнас пек тăрать, ĕçченсене шалăвăн иккĕ виççĕмĕш пайне тӳлеççĕ, туса кăларакан продукцин хакĕ палăрмаллах чакнă. Саккас килесси уçăмлă мар: уйăхра 650 вакун юсама пултараççĕ, анчах та 50-шне кăна туса кăлараççĕ. Коллектива сыхласа хăварма, ĕç ӳсĕмне лайăхлатма тăрăшаççĕ. Халхи вăхăтра малтанхи тĕрĕслевсем ăнăçлă иртеççĕ, çĕнĕлĕхе сертификаци процедури витĕр кăларма хатĕрленеççĕ.

■ **Виталий АЧЧА.**
Канаш хули

«Вырăнти хăй тытăмлăх» проект ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.
Юрий СТЕПАНОВ хатĕрленĕ.● Çырăр: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». ● **Шăнкăравлăр:** /8352/ 28-85-01.

ЫЙТУ ХУРАВ

Хăвăн ирĕкӳпе, анчах тӳлевсĕр

Шкулта вĕреннĕ чухнехи асрах: кашни çуркунне ватти-вĕтти, ялти мĕн пур халăх тавралăха тасатма кĕпĕрленсе тухатчĕç. Хальхи вăхăтра кунашкалли сайра тĕл пулать. Субботник ирттерес йăла хăçан пуçланнине пĕлес килет.

Ю.ТАРАСОВ.
Вăрмар районĕ.

Субботник – çын хăйĕн ирĕкĕпе обществăшăн тӳлевсĕр ĕçлени. Пĕрремĕш хут Мускав деповĕн рабочийĕсен пуçарăвĕпе 1919 çулхи акан 12-мĕшĕнче шăмат каç ирттернĕ. 15 çын ĕç хыççăн тата 10 сехет ĕçлесе виçĕ пăравус юсанă. Çу уйăхĕн 10-мĕшĕнче Мускав-Хусан чукун çул çинче коммунистсен пĕрремĕш /205 çын хутшăннă/ субботникĕ иртнĕ.

Чăваш Енре Мускавсен пуçарăвне чи малтан Етĕрнери çу уçлакан завод рабочийĕсемпе служащийĕсем «ярса илнĕ». Вĕсем çу уйăхĕн 28-мĕшĕнчи митингра кашни кун пĕр сехет тӳлевсĕр ĕçлеме каласса татăлнă. 1919 çулхи çулла чукун çулăн Улатăрти сыпăкĕ çинче пĕрремĕш субботниксем иртеççĕ. Çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче Шупашкарта коммунистсемпе служащисен субботникне йĕркеленĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 19-мĕш çулĕсен вĕçĕнче субботниксен бюровĕсене никĕслеме пуçланă. Вĕсем объектсене, ĕç калăпăшне тата мĕн чухлĕ вăхăт ĕçлемеллине палăртнă. Субботниксене профсоюз организацийĕсем, хĕрарăмсен уйрăмĕсем, комсомол ячейкисем хастар хутшăннă. 1920 çулсенче çак мероприятие тĕллевлĕн тата нумай халăха хутшăнтарса ирттерме пуçланă. Çак мероприяти ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, социализм ăмăртăвне аталантармалли никĕс тата совет халăхĕн пурнăçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнă.

1930 çулсенче субботник ирĕклĕ, çав вăхăтрах хистесе тутарнă ĕçсен шутне кĕнĕ. 1970 çултан çĕр-шывра кашни çул В.И.Ленин çуралнă кунĕ тĕлне /ака уйăхĕн 22-мĕшĕ/ субботниксем ирттерме пуçланă. Акă 1985 çулхи акан 20-мĕшĕнче Чăваш Енри 760 пин çын, çав шутран 400 пин рабочи хăйсен яланхи ĕç вырăнĕнче, Ленинăн 115-мĕш çуралнă кунне халаллана субботнике хутшăннă.

Коммунистсен субботникĕсене 1990 çулчченех ирттернĕ. Раççейре ырă çак йăла хăш-пĕр çĕрте паян та тĕл пулать. Çав шутра – Шупашкарта та.

Чăваш Енри «стахановецсем»

Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче çĕр-шывра сарăлнă Стаханов юхăмĕ Чăваш Ене çитнĕ-и? Пĕрремĕш «стахановецсен» шутне камсем лекнĕ?

А.АЛЕКСАНДРОВ.
Канаш хули.

Стаханов юхăмĕ – социализм ăмăртăвĕн пĕр тĕсĕ, производствăн çĕнĕлĕхĕсемпе усă курса плана А.Г.Стаханов пек ирттерсе ĕçлекенсен юхăмĕ. Вăл 1935 çул вĕçĕнче йăл илнĕ. Чӳк уйăхĕнче Чăваш Енри «стахановецсен» пĕрремĕш слетне пухнă. Ун хыççăн республикăри мĕн пур предприятире канашлусем иртнĕ.

«Стахановецсен» ăмăртăвне Чăваш Енри производствăн технологи уйрăмлăхĕсене кура тĕрлĕ меслетпе йĕркеленĕ. 1936 çулхи юпа уйăхĕнче ĕç-хĕле пĕтĕмлетме тата малашнехи тĕллевсене палăртма республикăри «стахановецсен» 2-мĕш слетне ирттернĕ. Ку вăхăт тĕлне вĕсен йышĕ икĕ пинрен те /1935 çулта – 331 çын/ иртнĕ.

Чăваш Енри пĕрремĕш «стахановецсем» – Шупашкарти тирсăран заводĕнчи чĕр тавара касса хатĕрлекен Н.Морковкин тата И.Асафьев, Улатăр станцийĕн депо машинисчĕ А.Мишанин, Куславккари строительство материалĕсен комбиначĕн станочници Е.Цыганова.

1935 çул вĕçĕнче Стаханов юхăмĕ ял хуçалăхĕнче те сарăлнă. 1936 çулхи нарăс уйăхĕн 1-10-мĕшĕсенче Куславкка районĕнче çур акине хатĕрленес енĕпе вунă кунлăх ирттернĕ. Вăл колхозниксене социализм ăмăртăвне явăçтарас тĕлĕшпе тунă пĕрремĕш тĕслĕх пулнă. Стаханов юхăмĕ Чăваш Ен экономикине аталантарма чылай пулăшнă. 1937 çулта промышленноçăн мĕн пур продукцине туса кăларасси 1932 çулхипе танлаштарсан /рабочисен йышĕ 12 процент ӳснĕ/ 80,8 процент хăпарнă.

1950 çул пуçламăшĕнче Чăваш Енре 9068 «стахановец» тата 8938 ударник шутланнă. Çакă – республикăри рабочисен 56,7 проценчĕ чухлĕ. Стаханов юхăмĕн начар енĕсем те пулнă: ĕç вăйне эксплуатацилесси, производствăра суранланакансен шучĕ ӳсни, техника хăвăрт юрăхсăра тухни, шалу тăкакĕсем хăпарни т.ыт.те. Ĕçе ячĕшĕн пурнăçланă, хушса çырнă, ултталанă тата киревсĕр çавăн йышши тĕслĕх те час-часах тĕл пулкаланă. 50-мĕш çулсенче «стахановецсен» юхăмне социализм ăмăртăвĕн ытти тĕсĕ улăштарнă.

«Хĕрлĕ Çăлтăр» агитпăрахут

Иртнĕ ĕмĕрĕн 19-мĕш çулĕсенче «Хĕрлĕ Çăлтăр» агитпăрахут Шупашкара мĕн тĕллевпе килнĕ?

А.АЛЕКСЕЕВ.
Шупашкар районĕ.



Шупашкара «Хĕрлĕ Çăлтăр» агитпăрахут пĕрремĕш хут 1919 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче килсе çитнĕ. Унта халăх комиссариачĕсен, РКП/б/ ТК тата ВЦИК представителĕсем пулнă. Вĕсем Шупашкар уес Канашĕн ĕçтăвкомĕн тата парти комитечĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. В.Молотов тата Н.Крупская хула çыннисемпе, учрежденисен служащийĕсемпе тĕл пулса каласнă, пухусемпе митингсене хутшăннă. Каçхине пăрахут Сĕнтĕрвăрринче чарăннă.

Агитаторсемпе инструкторсен ушкăнĕ иккĕмĕш хут «Хĕрлĕ Çăлтăр» пăрахутпа Шупашкара 1920 çулхи утă уйăхĕн 9-мĕшĕнче килнĕ. Хальхинче вĕсем Чăваш автономи облаçĕн тин йĕркеленнĕ Ревкомне пулăшу панă, «Известия» хаçат кăларассине йĕркене кĕртнĕ. Хула çыннисене выставка, кино кăтартнă, кĕнекесем сутнă. Тепĕр кун агитпăрахут Сĕнтĕрвăррине çул тытнă.

Кĕпĕрне тытăмĕ мĕнле пулнă?

Юлашки вăхăтра территорие кĕпĕрнесемпе уессем çине пайласси пирки каласма пуçларĕç. Ёлĕкхи йĕркепе Раççей регионĕсене мĕнле уйăрнине пĕлес килет?

С.НЕСТЕРОВ.
Канаш районĕ.

Кĕпĕрне – 1708-1920 çулсенче Раççейри администраци-территори пайланăвĕн тĕп единици. Вăл темиçе уеса пĕрлештернĕ, унăн администраци центрĕ пулнă. Кĕпĕрнесене Пĕрремĕш Петĕр патшан 1708 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнчи хушăвĕпе йĕркеленĕ. Раççее сакăр кĕпĕрнене пайланă: Ингерманланди /1910 çултан – Питĕр/, Мускав, Архангелхула, Смоленск, Киев, Азов, Хусан, Чĕмпĕр. Кашнине 16-71 хулапа ун çумĕнчи территорисем, уессем кĕнĕ. Чăваш Енри мĕн пур уес Хусан кĕпĕрнине кĕнĕ. 1714 çулта унран Чул хула кĕпĕрни уйрăлса тухнă. Унта Улатăр, Етĕрне, Кăрмăш уесĕсем кĕнĕ.

Кĕпĕрнене патша е сенатор çирĕплетнĕ кĕпĕрнаттăрсем ертсе пынă. Унăн çывăх пулăшаканĕ – вице-кĕпĕрнаттăр. Ёç тăвакан тĕп орган – кĕпĕрне канцелярийĕ. Уес вайпучĕсемпе суд /ландрихтер/, çар /обер-комендант/ ĕçĕсемшĕн, укçа-тенкĕ тата апат-çимĕç пухассишĕн /обер-комиссар тата обер-провиантмейстр/ явапла чиновниксем кĕпĕрнаттăра пăхăнса тăнă.

1775-1780 çулсенче II Кĕтерне патша реформа туса ирттернĕ. 1775 çулхи чӳкĕн 7-мĕшĕнче йышăннă "Учреждение для правления губерний Всероссийской империи" хушупа килĕшӳллĕн 23 кĕпĕрнене пĕчĕклетнĕ, çĕнĕрен 50 йĕркеленĕ. Кашнинче 300-400 пин çын шутланнă. Уессене те урăхла мелпе пайланă. Провинцисене пĕтернĕ. 1780-1781 çулсенче Чăваш Ен территорийĕ Хусан тата Чĕмпĕр кĕпĕрнисене кĕнĕ. Çак тытăмра вăл 1920 çулчченех пулнă.

Реформа вăхăтĕнче кĕпĕрне тата вайпут канцелярийĕсене пĕтернĕ, çĕнĕ администраци учрежденийĕсене никĕсленĕ. Вĕсем кашни хăйĕн тивĕçне пурнăçланă. Кĕпĕрнери аслă влаç ĕç-хĕлне кĕпĕрне правленийĕ тытса пынă. Унăн йышне кĕпĕрнаттăр /пуçлăх/ тата икĕ канашçă кĕнĕ. Администраципе полици ĕç-хĕлне кĕпĕрне правленийĕ тӳрремĕн сăнаса тăнă. Финанс-хуçалăх ĕçĕсене тытса пыма кашни кĕпĕрнере хысна палати туса хунă. Саккуна пурнăçланине тĕрлĕ статуслă прокурорсем тĕрĕсленĕ.

XIX-XX ĕмĕрсенче çĕнĕ администраци органĕсем – комитетсем, комиссисем, палатăсем – йĕркеленнĕ. Управленин уйрăм отраслĕшĕн явапла çĕнĕ должноçсене /инспектор, попечитель/ кĕртнĕ. 1867 çулта жандарм управленине никĕсленĕ. Вăл халăхăн политика шухăшкăмăлне тĕрĕсленĕ, полицин ытти тивĕçне пурнăçланă. 1860 çулсенче Раççейĕн Европа пайĕнчи кĕпĕрнесенче социаллă тата хуçалăх ĕçĕн пысăк пайне земствăсене панă.

1917-1918 çулсенче Февраль тата Октябрь революцийĕсем пулса иртнĕ май кĕпĕрне администрацийĕн çӳлерех асăннă органĕсемпе должноçĕсене пĕтернĕ. Кĕпĕрне Канашĕсемпе вĕсен ĕç тăвакан органĕсем ертсе пыма пуçланă. 1920-1929 çулсенче РСФСР тата СССР территорийĕсене облаçсем, крайсем, республикăсем çине пайланă.

Ястран поэт

Максим Ястран поэт кун-çулĕ кăсăклантарать.

В.МАТВЕЕВА.
Муркаш районĕ.

Максим Григорьевич Ястран /Григорьев/ 1916 çулта Элĕк районĕнчи Вăрманкас Юнтапара çуралнă. 1942 çулхи авăнăн 11-мĕшĕнче Сталинградшăн пынă çапăçура пуç хунă.

Поэт, публицист, СССР Писательсен союзĕн членĕ. А.М.Горький ячĕллĕ Литература институтĕнче вĕреннĕ. «Пионер сасси», «Çамрăк большевик», «Чăваш коммуни» хаçатсен редакцийĕсенче, Халăх пултарулăхĕн çуртĕнче ĕçленĕ.

Поэт çут çанталăкăн илемне ăста сăнлама пĕлнĕ. Фронтра çырнă хайлавĕсенче совет салтакĕсен паттăрлăхĕ çинчен каласа кăтартнă. Çыравçăн «Хĕрлĕ çăлтăр» /1940/, «Лирика» /1964/, «Сăвăсем» /1986/ т.ыт. кĕнеки кун çути курнă.

Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.

Сыхлав

Вăрманта пурте пултăр

«Хыпар» ыйтăвĕсене ЧР Чĕр чун тĕнчин объекчĕсене, вăл пурăнакан вырăна сыхлас, тĕрĕслес, чĕрлĕхпе усă курассине йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлекен патшалăх службин Вăрнар районĕнчи инспекторĕ Юрий ГРИГОРЬЕВ хуравлать.

– Вăрнар агротехникумĕн преподавателĕ Николай Васильев пĕлтĕр хăнтăрсен пĕр çемйи 2011 çулта Кайри Тукай ялĕн çывăхĕнче, Сунар юхан шывĕ çинче, йăва çавăрнине «Хыпарта» хавхаланса çырса кăтартрĕ. Шел те, иртнĕ çуркунне Çĕрпел ял тăрăхĕнчен урăх вырăна куçнине пĕлтерчĕ. Халĕ урăх çĕрте-ши е ашĕ тахçанах браконьер хуранне лекнĕ-ши?

– Хăнтăра çуллен юпа-чӳк уйăхĕсенче шутлатпăр, – терĕ Юрий Прокопьевич. – Кайри Тукайри çемье Сунар юхан шывĕпе е çӳлелле хăпарнине, е аялалла аннине тĕпчесе пĕлĕпĕр. Ушкăн йăх тăснă лаптăка мĕншĕн улăштарнине калама йывăр. Тен, çывăхра апат пĕтнĕ. Хăнтăрсем таврари пур йывăça та тӳнтерсен урăх çĕре каяççĕ.

– Вĕсем районта чылай-и?

– Çуллен хушăнаççĕ. Иртнĕ çул – 73, кăçал 78 шута илнĕ. Йыш ӳснин пĕрремĕш сăлтавĕ – юлашки çулсенче кайăкçăсем вĕсене сахалрах тытнинче. Предпринимательсем тирне пуçтармаççĕ, сунарçăсем ăна сутса укçа тăваймаççĕ. Иккĕмĕшĕ – совет тапхăрĕнчипе танлаштарсан çырма-çатрара, айлăм-тайлăмра йывăç-тĕм /хăнтăр апачĕ/ ытларах çитĕнни.

– Вăрман, уй-хир, шыв-шур чĕр чунĕн хисепĕ улшăнать-и?

– Çулсем иртнĕçемĕн е ӳсет, е чакать. Ăна палăртасси – манăн тивĕççенчен пĕри. Ку ĕçе тума çут çанталăк тусĕсене явăçтаратăп. Кăçал ондатра – 237, сăвăр – 18, ахаль ăсан – 212, пăчăр – 95, симĕс йĕрлĕ шăркалчăпа шурă йĕрлĕ шăркалчă /кайăк кăвакалсем/ – 1015, кăвакал хăй 561 шутларăмăр. 2013 тата 2014 çулсем: пăши – 21 тата 19, хир сысни – 21 тата 32, ахаль тилĕ – 143 тата 51, ăтăр – 3 тата 0, шашкă – 9 тата 10, вăрман сăсарĕ – 43 тата 17, вăрман пăсари – 11 тата 2, шурă мулкач – 400 тата 63, хир мулкачĕ – 91 тата 66, пакша – 354 тата 120.

– Хăш тĕс лайăхрах хунать?

– Ахаль ăсан. Вăрман е вăрман тăрăхĕ çумĕнчи улăх-çаранра. Ăна чылай ял тăрăхĕнче куратăп. Хурăн папакĕпе тăранса хĕл каçать. Вĕсем валли апат çителĕклĕ. Юлашки çулсенче хурăн чылай уй хĕрринче шăтса çитĕнчĕ. Хир сыснисемшĕн çут çанталăкăн республика шайĕнчи уйрăмах сыхлакан Калинино саккаслăхĕ – сунар тапхăрĕ пынă вăхăтра та хӳтлĕх. Унта никамăн та пăшалпа кĕме, чĕр чуна хăвалама, суранлатма, вĕлерме юрамасть. Чăн та, шăрăх та типĕ 2010 çул хыççăн хир сыснисем хухрĕç. Мĕншĕн тесен типĕ çанталăка пула юман йĕкел тăваймарĕ. Пăши сахалрах тесе районта темиçе çул тытма чарнă.

– Халĕ кашкăр пур-и?

– Пĕлтĕр Вăрнартан виçĕ çухрăмра – 1, кăçал Калинино саккаслăхĕн çумĕнче 3 тытрăмăр. Районта вăл пĕрре те пулмасан сĕтпе тăрантаракан чĕр чуна ĕрчеме çăмăлрах. Вĕсене тукмак хӳре нумай пĕтерет. Çакна çирĕплетме – тĕслĕх. Иртнĕ çулхи раштав уйăхĕнче вăрманта кашкăр йĕрĕсене асăрхарăм. «Кунта мĕн шыраççĕши?» – тетĕп. Тупсăмне тӳрех ăнкартăм. Çав вăрманта 5 хир качакиччĕ. 6 кашаман вĕсене хăваласа тытассишĕн çĕрĕпех чăтлăхра кумнă. 3 качака Йĕпреç вăрманне кĕрсе тарнă, 2-шĕ пирĕн патра юлнă.

Тукмак хӳресем вĕсен йĕрĕ çине ӳксен тытичченех хăваласçĕ. Тарса хăтăлайрĕç-ши? Калаймастăп. Нумаях пулмасть мана вăрманта темиçе кашкăра курнине пĕлтерчĕç. Çак хыпар чăнлăхпа килĕшсе тăрать-ши? Ыйтăва çывăх вăхăтрах уçăмлатма тăрăшăпăр. Тен, темиçе çура çитĕнтереççĕ. Куллен аш йăтаççĕ. Кашкăрсене пĕтерсех тăмалла. Иртĕхме парсан чĕр чунсене пысăк сиен кӳреççĕ.

– Вĕсене тытма камсем пулăшаççĕ?

– Сунарçăсемпе пулăçсен Вăрнар районĕн обществин председателĕ Александр Иванов, поселокри тырă йышăнакан предприяти директорĕ Яков Григорьев, аш-какай завочĕн директорĕ Николай Аливанов тата ытти сунарçă. Вĕсем хир сыснисем валли фураж туянма, вăрмана турттарса çитерме пулăшаççĕ.

– 2009-2013 çулсенче çав обществăн районта тара илнĕ лаптăкĕ 33,7 пин гектар шутланнă. А.Иванов ертсе пынипе унта чĕр чуна браконьерсенчен хуралланă, тăрантарнă. Пăхнине пула йыш ӳснĕ. Общество хастарĕсем Санарпуç ялĕн пĕвине йĕркене кĕртсе пулă ĕрчетнĕ. Ял-йыш ăна вăлтапа тытса савăннă. ЧР Арбитраж сучĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн лаптăка обществăран туртса илнĕ. Вăл саккунпа килĕшӳллĕн ĕçлени пирки иккĕленместĕп. Анчах асăннă лаптăкри ырă ĕç путланни – куç умĕнче. Арендаторсен чĕр чун йышне ӳстерес ĕçри пĕлтерĕшне мĕнле хаклатăр?

– Саккунпа килĕшӳллĕн предпринимательсене чĕрлĕхе пăхма, ĕрчемешкĕн май тума, браконьерсенчен хӳтĕлеме, сунар объекчĕпе усă курма вăрман лаптăкĕ уйăрса панине ырлатăп çеç. Вĕсем шута ӳстерме пулăшаççĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
каласнă

Ю.П.Григорьев Çĕпĕрте çуралнă. Çичĕ уйăхра чух ашшĕ-амăшĕ ăна тăван яла, Вăрнар районĕнчи Кӳстӳмĕр ялне, илсе таврăннă. Кунта вăтам шкул пĕтернĕ. 1990 çулта Киров хулинчи ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. Биолог-охотовед. ЧР чĕр чун тĕнчине, вĕсем пурăнакан вырăна хӳтĕлекен патшалăх службинче нумай çул ĕçленĕ. 2010 çултанпа – Вăрнар тăрăхĕнчи инспектор.

Вĕсен тӳпи пысăк

Вăрмар районĕнчи Кивĕ Вăрмарти Юлия Николаевнăпа Михаил Клементьевич Клементьевсене аслăрах çулти çынсем лайăх ас тăваççĕ. Ятлă-сумлă çынсем пулнă вĕсем ял-йышра. Çемье пуçлăхĕ икĕ вăрçа хутшăннă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче тăшманпа паттăррăн çапăçнă. Чылай чухне вилĕмпе куçа-куçăн тăнă. Тан мар пĕр çапăçура вăл вăйлах аманать. Фронтран инвалид пулса таврăнать. Хаяр çапăçусенче пиçĕхнĕскер килте алла усса ларма шухăшламан, бухгалтер ĕçне кӳлĕннĕ. Мăшăрĕ – Юлия Николаевна – мĕн пенсие тухичченех уй-хир бригадирĕнче тăрăшса вăй хунă. Туслă та сăпайлă çемьере картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк усранă. Ашшĕ-амăшĕ ачисене çамрăклах ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ. Çавăнпах пулĕ вĕсен Галя ятлă хĕрĕ выльăх-чĕрлĕхе юратса çитĕннĕ.

Анчах Галина хăйĕн шăпине тӳрех ку отрасльпе çыхăнтарас темен-ха. Вăрмарти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Çĕнĕ Шупашкар хулине çул тытать. Хими комбинатĕнче аппаратчик профессине алла илет. 2 çул Саратовра практикăра пулать. «Нитрон» заводра тĕрĕслевпе виçев приборĕсемпе ĕçлет. Хула хăйĕн илемĕпе темĕн чухлĕ илĕртсен те тăван ен чăваш хĕрне хăй патнех чĕнет. 1980 çулта вăл çуралнă кĕтесе таврăнать. Вăрмар поселокĕнчи инкубатор станцийĕнче операторта ĕçлеме пуçлать. Пултаруллă та пуçаруллă хĕре хуçалăх ертӳçисем часах асăрхаççĕ. Ăна совхозри комсомол комитечĕн секретарьне суйлаççĕ. Общество ĕçне яваплăха туйса, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Хастарлăхне кура ăна комсомол райкомĕн, облаç комитечĕн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн Хисеп хучĕсемпе чыс тăваççĕ.

1985 çулта Кивĕ Вăрмарти çĕнĕ инкубаторта чăхсем пăхма тытăнать. Тепĕр çултан Галина Михайловнăпа Юрий Васильевич çемье çавăраççĕ. Юрий Войков вăл вăхăтра юнашарти чăх витинче слесарь-операторта ĕçленĕ. Халĕ те çав специальноçпах тăрăшать, çитĕнӳ тăвать.

Çак тапхăрта фабрикăра нумай улшăну пулса иртрĕ. Кунта çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă. Цехсене çĕнетсе пысăклатнă. Кайăк-кĕшĕк шучĕ палăрмаллах ӳснĕ. Çавна май производство калăпăшĕ те самай анлăланнă.

«Вăрмарти ăратлă кайăк-кĕшĕк фабрики» акционерсен уçă обществине вун икĕ çул пĕр улшăнмасăр Николай Петрович Петров пултаруллăн ертсе пырать. Фабрика кантурне пырса кĕрсенех производствăра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн панă нумай Хисеп грамотипе Диплом, Тав çырăвĕ тирпейлĕ çакăнса тăраççĕ.

– Çитĕнӳсен çăл куçĕ мĕнре-ши? – ыйтрăм Николай Петровичран.

– Кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли мĕн пур технологие çирĕп пурнăçласа пыни кăна çителĕксĕр. Ĕç ăнăçлăхне фермăра тӳрĕ кăмăлпа вăй хуракансем татса параççĕ. Вĕсем пирĕн сахал мар.

Хуçалăх ертӳçи фермăра 30 çула яхăн тӳрĕ кăмăлпа вăй хуракан Галина Михайловнăпа Юрий Васильевич Войковсене чи малтан асăнчĕ.

– Вĕсем хăйсем ĕçлекен витери читлĕх оборудованине йĕркеллĕ тытса тăраççĕ, вансан – юсаççĕ. Çав оборудованин ĕçлемелли вăхăчĕ 7-8 çултах тухнă пулин те ăна 22 çул йĕркеллĕ ĕçлеттереççĕ Войковсем, – тет Николай Петрович.

Эпĕ вĕсемпе тĕл пулма васкарăм. Фабрикăра 22 çул тĕп зоотехникра ĕçлекен Галина Ивановна Алексеева мана Войковсем ĕçлекен 7-мĕш витене илсе çитерчĕ. Эпир пынă чухне Галина Михайловна пĕрченехчĕ. Кунта вĕсем мăшăрĕпе – Юрий Васильевичпа пĕрле тăрăшаççĕ. Витере тирпейлĕх хуçаланать. Кану пӳлĕмĕнче йĕркеллĕ, кашни япала хăй вырăнĕнче.

Витере çăмарта тăвакан 10 пин чăх. Кăçалхи ултă уйăхра кашни чăхран 90 çăмарта илнĕ. Чăхсене зоотехника науки вĕрентнĕ пек тăрантараççĕ. Рацион тулăх. Урпа тата тулă авăртса, шăмă çăнăхĕпе, курăк çăнăхĕпе хутăш параççĕ.

Войковсене коллективра хисеплеççĕ. Пысăк çак чыса вĕсем ĕçе чунтан парăннипе çĕнсе илнĕ. Умра тăракан тĕллевсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçленĕшĕн Галина Михайловна Хисеп хучĕпе Тав çырăвне нумай тивĕçнĕ. Ăна районти Хисеп хăми çине те кĕртнĕ. Пултаруллă чăх-чĕп пăхакана Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин тата Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотисемпе наградăланă.

Фабрика коллективĕ кăçалхи çур çула лайăх кăтартусемпе вĕçленĕ. Пурĕ 1719 пин чăх çăмарти туса илнĕ. Хур çăмарти – 116 пин, кăркка çăмарти – 83 пин. Фермипе кашни чăхран 88 çăмарта илме пултарнă. Ултă уйăхра 1078 пин çăмарта, çав шутран 747 пин ăратлă çăмарта сутнă. Çамрăк чĕпсене вара 120 пин пуç. Çак çитĕнӳре хастар мăшăрăн – Войковсен – тӳпи те пысăк.

● Г.Войкова.

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ.**
Вăрмар районĕ

Пĕрешкел инкек – çине-çинех

Утă тата çĕртме уйăхĕн вунă кунĕнче мотоблоксем тăхăр хутчен аварие лекнĕ, икĕ çын вилнĕ, саккăрăшĕ аманнă.

Утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче Элĕк районĕнче 1968 çулта çуралнă водитель «Лада Приорăпа» хирĕç çул çине тухса «Агро» мотоблокпа çапăннă. Аварире мотоблок пассажирĕ шар курнă. «Лада» водителĕ инкек вырăнĕнчен пăрахса тарнă. Утă уйăхĕн 28-мĕшĕнче Патăрьел районĕнче «ВАЗ-2106» автомобиль водителĕ çул хĕррипе пыракан «Нева» мотоблок çине пырса кĕнĕ. Инкек вырăнĕнче чарăнса тăман, тарса çухалнă. Мотоблок хуçине медицина пулăшăвĕ пама тивнĕ.

Çурлан 4-мĕшĕнче каçхине федерацин М-7 трассин Шупашкар районĕнчи сыпăкĕ çинче «Тойота» водителĕ мотоблока пырса çапнă. Лешĕ сирпĕнсе кайса «Ниссана» пырса тăрăннă. Мотоблок водителĕ çавăнтах вилнĕ. Автомобильсенче пулнă икĕ пассажир аманнă. Çурлан 5-мĕшĕнче 22 сехет те 50 минутра Тăвай районĕнче «ВАЗ-2114» водителĕ каллех мотоблокпа çапăннă. Çăмăл техникăн хуçи вырăнтах вилнĕ.

Юлашки вăхăтра прицеп кăкарнă мотоблоксем çул çинче час-часах çӳрени ĕççипе çыхăннă. ШĔМ ÇÇХПИ Чăваш Республикинчи управленийĕ аса илтерет: мотоблоксене çулăн сылтăм хĕррипе кăна çӳреме юрать. Вĕсен транспорт юхăмне чăрмантармалла мар. Çулран аякри лапамсенче кăна чылай вăхăтлăха чарăнса тăма юрать. Уйрăмах каçхине асăрханулăх пирки манмалла мар. Аякри тата çывăхри çутă фарисем пулмалла. Правилăсене пăхăнман мотоблок водителĕсене РФ КоАП 12.29 тата 12.30 статйисемпе килĕшӳллĕн административлă майпа явап тыттараççĕ. Автомобиль водителĕсен те тимлĕхе çухатмалла мар.

Л.НИКИТИН.

ÇĂТАВĂК

	кăнтăрла	çĕрле
16.08	+28	+18
17.08	+23	+15
18.08	+23	+15
19.08	+25	+17
20.08	+23	+16
21.08	+24	+14
22.08	+26	+17

Реклама Пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлӗм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

БЕТОН
РАСТВОР
КОЛЬЦА
блоки ФБС
ДОСТАВКА
Тел.: 49-00-22
8-966-249-00-22
8-909-301-31-90

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2900 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
доставка
тел.: 29-25-34, 29-24-88

УСЛУГИ

51.Бурение колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

152.Бурение скважин на воду. Т. 8-960-302-12-93.

160.Бурение колодцев, углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

229.Кровля, обшивка домов. Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 8-903-322-04-79.

346.Бурение скважин на воду. Гарантия. Т. 364060.

359.Бурение колодцев. Продажа колодезных колец. Доставка и установка. Т. 8-903-379-09-01.

419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

456.Услуги КамАЗа-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 8-903-389-30-39.

459.Установка заборов, ворот, винтовых свай. Т. 8-917-650-06-40.

460.Обшивка домов сайдингом, **утепление.** Т. 8-902-287-27-77.

499.Бурение скважин на воду. Т.: 8-905-198-03-33, 8-987-674-00-30.

513.Чистка колодцев. Т. 89613429059.

539.Бурение скважин на воду. Т. 8-909-304-12-02.

564.Ремонт легковых авто. /Вурнарский р-н, с. Калинино/. Т.: 89877378194, 89373840572.

565.Поющая **тамада, диджей.** Т.: 8-987-671-27-95, 8-937-384-05-72.

РАБОТА

110.Монолитчики, плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

547.Требуются **ФОРМОВЩИКИ на пр-во керамблоков.** Проживание, з/п высокое. Т. 8-937-386-66-29.

П Р О Д А Ю

1.Качественную фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

5.Блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

6.Песок, гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 89033460713.

8.Гравмассу, песок, щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 44-30-21.

10.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

15.Кирпич – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

16.СЕТКУ-РАБИЦУ от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

19.Гравмассу, песок, керамзит, бой кирпича. Т. 8-903-322-57-66.

20.Сетку-рабицу, ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74, metalservis21.ru

21.Керамблоки, гравмассу, песок. Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

22.ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: **89176529694, 8-927-667-95-88.**

23.Гравмассу, песок, бой кирпича, щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

24.ГРАБЛИ, косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

28.ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

30.ОКНА от 4200 р.; **ДВЕРИ стальные** от 8900 р. Акция действует до конца месяца. Звоните по тел. **8-937-954-92-45.**

35.Блоки керамзитобетонные от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

38.Брусчатку, плиты тротуарные. Огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 89876664140, 89370100141.

47.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

48.Керамблоки, кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

53.Отруби, зерно, к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

55.ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

58.Гравмассу, щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

61.БЛОКИ керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

62.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 8-905-346-56-71.

71.ПИЛОМАТЕРИАЛ /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

75.Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

76.СРУБЫ с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 89379528467,** Владимир.

Ёçе илетпĕр

«Хыпар» Издательство çурчĕ ЭВМ калăплав операторне ёçе илмешкĕн конкурс ирттерет. Унта Adobe InDesign, Page Maker, Photoshop, Corel Draw программăсемпе ёçлеме ăста, чăвашла лайăх пĕлекен çынсем хутшăнма пултараççĕ.

Документсене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар, И.Яковлев проспекчĕ, 13, 3-мĕш хут, 312-мĕш пӳлӗм.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 56-00-67, 62-08-62.

СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всеми вопросам звонить по тел. 8-967-478-06-12, 28-83-64, 56-04-17.

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении предоставить в собственность (за плату) ранее арендованный земельный участок площадью 8,87 га с кадастровым номером 21:21:151801:0159. Участок находится примерно в 198 м. по направлению на северо-запад от ориентира ОМЗ 213, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Лапсарское сельское поселение, д.Лапсары (земли сельскохозяйственного назначения), для засева кормовыми культурами. Заявления и письменные возражения принимаются администрацией Чебоксарского района по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15 (каб. 20).Телефон для справок (8-83540) 2-40-82.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:340103:60 площадью 18155 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос., в т.ч. часть земельного участка с кадастровым номером 21:08:340103:60/чзу1 площадью 7430,23 кв.м. - сервитут, для прохода и проезда через земельный участок, в целях обеспечения доступа граждан к водному объекту общего пользования и его береговой полосе.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: 8 (83532)6-14-26.

П Р О Д А Ю

79. Прицеп мотоблока, мини-трактора. Т. 8-905-344-47-35.

117.ОКНА ЧУВАШИИ. Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

124.Песок, щебень, **гравмассу,** керамзит, **торф,** кирп. бой, **цемент.** Т. 89033220479, 480479.

128.Пластиковые ОКНА, деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

134.Кирпич любой, **кольца, блоки.** Д-ка манипул-ом. Т. 89033587353.

157.Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

249.БРУСЧАТКУ, плитку тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

294.Песок, гравмассу, щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 8-905-341-91-46.

308.Гравмассу, щебень, к/б блоки. Доставка. Т. 89278462410.

316.Гравмассу, песок, керамзит, щебень, бой кирпича, **навоз.** Доставка. Т. 89051974019.

317.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89278502821.

390.Блоки, кирпич красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит, кольца.** Т. 89278629166.

415.Кольца колодезные от производителя. Д-ка. Т. 89278416247.

464.Косилки, грабли, окучники, пресс-подборщики, картофелекопалки. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

476.Новые **дизельные мини-тракторы.** Тел. 8-927-667-97-98.

518.Гравмассу, щебень, песок речной, карьерный; **чернозём,** глину. Д-ка. Т. 89520269954.

540.Картофелекопалки на МБ "Каскад", "Нева"; **адаптеры** к мотоблокам, **грабли** по уборке сена. **Пчеловодам** – сеялки для зерновых. Принимаем заявки на изготовления сеноворошилок, картофелекопалок и микро-тракторов. Тел.: 58-62-38, 8-905-199-96-95, 37-20-03 /ООО "Средства Малой Механизации"/.

560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС". Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

562.ЗЦМ **сухое молоко для животных.** Пр-во – Голландия. Т. 89170677053.

КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

141.Коров, бычков и лошадей. Т.89603109878.

433.КОРОВ. Т. 8-927-850-85-64.

475.Спецтехнику б/у. Т. 41-38-16.

Иртни те кунтах, пуласлăх та...

Çурла уйăхĕн 10-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Аксаринсем ял кунне уявланă. Мероприяти культура центрĕ умĕнчи лапамра иртнĕ. Ăна ялти культура ĕçченĕсем йĕркелесе ертсе пынă.

Малтанах Аксарин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ О.Семенов, Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕ Э.Упракина тата ыттисем пухăннисене праçник ячĕпе саламланă, çĕнĕ çитĕнӳсем суннă. Уйрăмах пуçаруллисемпе хастаррисене Хисеп хучĕсемпе, Тав çырăвĕсемпе, асăнмалăх парнесемпе чыслана. Н.Чупраков вара Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн Хисеп хутне тивĕçнĕ. Аксаринри культура центрĕ çумĕнчи тата Октябрьскинчи пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен юрри-ташшипе савăнтарнă.

Кунтах нумай çул пĕрле пурăнакансене те чыслана. Юбилярсемпе ял çыннисем валли вырăнти артистсем юрату, ял пурнăçĕ, атте-анне пирки çырнă чăваш юррисене шăрантарнă. Уяв тĕлне культура ĕçченĕсем пултаруллă алă ăстисен декораципе хушма искусство куравне уçнă, сăн ӳкерчĕксен стендне йĕркеленĕ. Карапашри культура центрĕн ĕçченĕсем те хăйсен алă ĕçĕсемпе паллаштарнă. Ачасемшĕн те çак кун сĕре хĕпĕртӳллĕ пулнă. Вĕсем уявра юмахсенчи сăнарсемпе тĕл пулнă, ярăнчăксемпе ярăннă, тĕрлĕ вăйăконкурса хутшăннă. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем спорт ăмăртăвĕсенче вăй виçнĕ. Кĕрешӳçĕсем чи вăйлă пăхаттире палăртнă. Кайран пурте пĕрле шӳрпе ас тивнĕ. Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç та айккинче юлман. Вĕсем валли дискотека йĕркеленĕ. Аванах çав вăл Ял кунĕ! Хурăнташпа, ял-йышпа тĕл пулма, ачалăха, иртнине аса илме май пур. Çакăнтах тата çĕнĕ шухăшсем, çĕнĕ ĕмĕтсем çуралаççĕ.

■ **А.ГРОМОВА.**

Ю.ЕФИМОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Саламлатпăр

Юратнă та хисеплĕ çыннăмăра – Етĕрне районĕнчи Çĕнĕ Етĕрне ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан <u>Римма Стиридоновна АЛЕКСЕЕВĂНА</u> – сумлă юбилейпе саламлатпăр. 55 çул вăл – икĕ «5» кăна. Малашне те хальхи пек сăнупа та, чунупа та çамрăк юл. Йăлтăр кулă питре ан сӳнтĕр. Сывлăху нихăçан та ан иксĕлтĕр. <u>Юлташĕсем,</u> <u>ĕçтешĕсем.</u>

* * *

Хаклăран та хаклă аттепе аннене – Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Вячеслав <u>Ивановичпа Мелания Николаевна ИЛЛАРИОНОВСЕНЕ</u> – юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Вĕсем шăп 55 çул каялла Элĕк районĕнчи Вылпасар тата Яккушкăнь ялĕсенче çут тĕнчене килнĕ. 33 çул ĕнтĕ пурнăç çулĕпе пĕрле утаççĕ. Ялта та, хулара та ятлă-сумлă çынсем. Пĕр-пĕрне юратса, ăнланса икĕ хĕрпе пĕр ывăл çуратса ӳстернĕ. Аттепе анне! Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр. Тавах сире пире пурнăç парнеленĕшĕн, ӳстерсе çĕр-шыва юрăхлă çынсем тунăшăн. Тĕнчери мĕн пур ыррине сунатпăр сире – тулăх пурнăç, юман пек çирĕп сывлăх, çăл куç пек иксĕлми телей.

Ăшă сăмахпа – <u>Гуринсем, Руссаковсем, Илларионовсем.</u>

* * *

Патăрьел районĕнчи Шăхач ялĕнче пурăнакан <u>Александра Антоновна КУДРЯШОВĂНА</u> çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Сывлăху çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Сĕтелӳ – çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Тавах ырă кăмăлушăн.

<u>Хреснай хĕрӳ Надежда.</u>

Мĕншĕн çапла калатпăр

Açу-аннӳне хисепле

– Халĕ ĕнтĕ самани урмăшса кайрĕ те çынсем хăйсем те улшăнчĕç. Тĕл пулсан ĕлĕкхи пек çамрăкпа çамрăк пек, ваттипе ватă пек калаçнă май чăн малтан ырă сунасси, унпа ăшă кăмăллă пуласси манăça тухать. Çынсем чунпа кунран кун чурăсланса, пĕрпĕринчен сивĕнсе пынине хамăр курса тăратпăр мари-ха, – кăмăлсăр пуплет кинеми хăй шухăшне юлташне пĕлтернĕ май.

– Килĕшмелле санпа, – тет тантăшĕ. – Ача-пăчана мĕн сĕм авалтанах ваттисене хисеплеме, вĕсене ăс парса каланисене ăша хывма, ас туса юлма, ыттисемпе сапăр пулса, кӳрентермесĕр, туслă пурăнма вĕрентсе ӳстересси чи малтан мучисемпе кинемейсен, çемьере вара ашшĕпе амăшĕн чыслă тивĕçĕ шутланнă. Халĕ вара чылай çамрăкшăн ватти ватă мар, çамрăкки çамрăк мар. Питĕ шел, ватă лам сумран тухса пырать.

Ача-пăчана ашшĕ-амăшĕ мĕн пĕчĕкренех сума сума, хисепе хума вĕрентсе çитĕнтерес пирки православи тĕнĕ те çине тăрсах ĕçленине манмалла мар. Кун пирки Библире те ыр сунса ăс панине тупса вулама пулать: "Açупа аннӳне ĕçпе те, сăмахпа та хисепле, вара сана вĕсенчен пиллĕх пулĕ, ашшĕн пиллĕхĕ ачи-пăчипе кил-çуртне тĕреклетет, амăшĕн ылханĕ вара никĕсĕпех тĕп тăвать. Açуна хур туса ырă ята ан хапсăн. Açу намăсĕ саншăн ырă ят мар. Çыннăн ырă ячĕ ашшĕн чысĕнчен килет, амăшне мăшкăл туни ачисен ятне çĕртет. Ывăлăм! Ватăлăх кунсенче açуна ан пăрах, пурнăçĕнче ăна ан хурлантар. Вăл ăс-тăнран тайăлас пулсан та, ăна ан кӳрентер, ху вăй питти чухне пăхса усра ăна, ашшĕне ырă туни манăçмасть. Çавăн пек пулни çылăхусене пăрахăça кăларĕ» /Библи, «Сирах ывăлĕн Иисусăн ăслăлăх кĕнеки», 816 стр./.

Ăс парса çырăннă тĕлĕнмелле йĕркесем, çакăнтан ытла нимех те хушса калаймăн.

■ **Роман ЧЕПУНОВ**

Гороскоп

Çурла, 18-24

Сурăх. Ку эрнере сире çăлтăрсем хӳтĕлĕç. Çавăнпах ĕмĕтленнине пурнăça кĕртме çав тери çăмăл пулĕ. Мăшăрланманнисем эрне вĕçĕнче ырă кăмăллă каччăпа /хĕрпе/ паллашĕç. Çĕнĕ юлташа тимлĕ сăнăр: тен, вăл – шăпа пӳрни?

Вăкăр. Ĕçри кăткăс лару-тăрăва пула кăмăлăр хуçалĕ. Ан пăшăрханăр: пĕрле тăрăшакансемпе харкашмастăр – çăлтăрсем çапла шантараççĕ. Эрне вĕçĕнче енчĕкĕр хулăнланĕ, анчах хăвăр çине тăрсан çеç.

Йĕкĕреш. Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисен çанă тавăрса ĕçлеме тивĕ, çавăнпа канасси пирки вăхăтлăха манăр – кăнтăрла апатланма та вăхăт пулмĕ.

Рак. Ĕçре лăпкă. Унсăр пуçне савăнтаракан тепĕр хыпар та пур: преми парĕç. Пуçлăхăр çĕнĕ ĕç шанса пани те ывăнтармĕ – эрне вĕçĕнче те хăвăра лайăх туятăр, çывăх çыннăрсемпе пĕрле канатăр е вăрманти уçă сывлăшпа киленме май тупатăр.

Арăслан. Çывăх çыннăрсем, тусăрсем кĕтменлĕхпе, кăмăллă хыпарпа, парнепе савăнтарĕç. Хăшĕ-пĕри юрату туйăмĕпе çунатланĕ, анчах çăлтăрсем асăрхаттараççĕ: ĕçри тивĕçĕрсем пирки ан манăр, унсăрăн çитес эрнере пуçлăхăр пуçран шăлмĕ. Канмалли кунсенче вара хĕле хатĕрленме май тупăр.

Хĕр. Йывăрлăхсене парăнтармалла, çивĕч ыйтусене пĕр тăхтаса тăмасăр татса памалла... Апла пулин те ан пăшăрханăр. Эрнен иккĕмĕш çурринче кил-тĕрĕшре аппаланмалла пулĕ, çывăх çыннăрсемпе харкашасран сыхланăр.

Тараса. Кирек мĕнле ĕçе кӳлĕниччен те тĕплĕ шухăшлăр. Чунăр усала сисет тĕк нимĕн те ан тăвăр. Çемьери хутшăнусене çирĕплетĕр: мăшăрăра ăшă сăмахсемпе савăнтарăр, ачăрсемпе уçăлса çӳреме май тупăр, вĕсен ыйтăвĕсене хуравлăр.

Скорпион. Ĕçри хутшăнусене йĕркелемелли вăхăт. Тирпейлĕхĕр, тĕрĕслĕхшĕн хыпса çунни пĕр пӳлĕмре ларакансене те тĕлĕнтерĕ. Тăрăшулăхăра та асăрхĕç, çавăнпа пуçлăхăр умĕнче ят-сум çĕнсе илме май пулĕ. Скорпионсенчен чылайăшне эрнен малтанхи кунĕсенчех çĕнĕ ĕç е пысăкрах должноç сĕнĕç. Ăна йышăниччен çывăх çыннăрсемпе канашлăр.

Ухăçă. Хушма ĕç пурнăçласа çемье бюджетне пуянлатма май килĕ. Анчах пĕчĕк пĕр кăлтăк пур: канмалли кунсенче кил-тĕрĕшпе çыхăннă çивĕч ыйтăва уçăмлатмалла пулĕ. Хăвăр ума капашсăр пысăк тĕллевсем ан лартăр – хальлĕхе пурнăçлаймăр.

Ту качаки. Мăшăрăрпа калаçнă чухне сассăра ан хăпартăр, ăнланманлăх сиксе тухсан та лăпкăн калаçăр. Кăмăллă мар хыпар илтетĕр, шăпах вăл палăртнине пурнăça кĕртме чăрмантарĕ. Суту-илӳпе аппаланакансем çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвĕç.

Шыв тăкан. Ăшă сăмахсем илтме хатĕрленĕр. Сире такам вăрттăн савать. Çак кунсенче вăл, ахăртнех, кун пирки систерĕ, тĕл пулăва йыхравлĕ – ан хирĕçлĕр, вăхăта кăсăклă ирттерĕр. Паллашу кăмăлăра çĕклĕ, унсăр пуçне ĕçре те çитĕнӳсем тума май килĕ.

Пулăсем. Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисен пĕр пайĕ хăйĕн ăсталăхне туллин кăтартса ят-сум çĕнсе илĕ. Çавăнпа кирек мĕнле ĕçе те пуçăнма пултаратăр. Канмалли кунсенче юлташăрсемпе тĕл пулăр – вĕсем çак саманта тахçантанпах кĕтеççĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Сирĕнпе чуна уçса калаçасшăн.

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрацийленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем: 56-00-67 – директор-тĕп редактор; 56-33-64 – тĕп редактор çумĕ; 56-04-17 – тĕп редактор çумĕ; 62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь

пайсем: 28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ; 56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ; 56-08-62 – экономика пайĕ; 56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ; 56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ; 56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ; 28-85-87 – корректорсем; 56-45-94 – фотокорреспондент; бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийĕ, 28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ; 56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчĕсем: 8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай; 8-835-38□2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç; 28-85-71 – Чăваш Республикин

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 15.08.2014 алă пусмăн. Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пусмăн.

Тираж 8598. Заказ 3065.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.